Йуман, М.

4
№ 67
3532
108/86

# ИРĔКЛĔХ ÇУЛĔ.

(Пусмăрла халăхсем пусмăрлăхран йепле хăтăлаççĕ).

МОСКВА—1924.

Пӗтӗм тӗнҫери пролеттарисем, пӗрлешӗр!

Йуман М.

# ИРӖКЛӖХ ҪУЛӖ.

(Пусмӑрлӑ халӑхсем пусмӑрлӑхран йепле хӑтӑлаҫҫӗ).

2288

Центральное Издательство народов СССР.

Москва. — 1924.

Юман М.
Путь свободы.
1924

Главлит № 27454. Москва. Тираж 2000.

1-я тип. Центр. Изд-ва Народов Союза ССР. Никольская, 10

# I-МĔШ ТАТĂК.

## Уйрăм халăхсем йе натсисем йепле пулса кайни çинҫен.

Пирĕн саманара пĕтĕм тĕнҫери ĕç халăхĕ хăйне ирĕке кăларасшăн кĕрешет. Раççейре, револҫутси ырлăхĕпе, ĕç халăхĕ пĕтĕмпех ирĕке тухрĕ, хăй пурăнăçне хăй хуçа пулса тăҫĕ. Анҫах, мĕне пĕлтерет-ши çав пĕтĕм тĕнҫери ĕç халăхĕ тилмĕрекен ирĕклĕх? Анҫах ҫи малтан мĕн çинҫен аса илтерет пире çав Раççей ĕç халăхĕ ирĕке тухрĕ тенĕ сăмах?

Епир пĕлетпĕр: çав ирĕклĕх-пуринҫен ытла ĕç халăхĕ мул мăйкăçĕнҫен, капиталисăм пусмăрĕнҫен, пĕр çынна тепĕр çын пурлăх вăйĕпе ҫуралăхра тытас йĕркерен хăне хăтарнине пире витĕр кăтартса тăрать.

**1. Класслă пусмăр.** Епир пĕлетпĕр, нумай та пулмасть Раççейре ĕç халăхĕ çитмĕл те çиҫĕ пусмăр айĕнҫе тапаланса пурăнаҫҫĕ. Çав саманара пур Раççейри халăхсем те икĕ пайа питĕ паллă уйăрăлса тăраҫҫĕç: пĕр пайĕнҫе çĕр улпуҫĕсем, хапрăксемпе савăтсен хуçисем, панкăсен пуçлахĕсем, алăра хисепсĕр нумай укçа тытакансем, вĕсен ĕçне туса, вĕсен кăмăлне курса пурăнакан аслă ҫинавниксем хисепленеҫҫĕç; тепĕр пайĕнҫе тара кĕрĕшсе пурăнакан ĕç халăхĕ, çуклăхпа пăнҫăхнă хресҫен, выçăпа антăхнă ĕçлекенсем хисепленеҫҫĕç. Малта асăннă си—пурăнăç хуçи вырăнĕнҫе хисепленеҫҫĕ: ун аллинҫе пур халăх пурлăхĕ, патшалăх ирĕкĕ, пурăнăç илемĕ-сĕткенĕ хĕсĕнсе пытанса тăраҫҫĕ. Иккĕмĕш си—„хура халăх“, „хура йунлă“, „хура шăмăлă“ етемсен вырăнĕнҫе хисеп йышанса тăраҫҫĕ. Çак сире пĕтĕм ĕç халăхĕ, пĕтĕм йурлă хресҫенсем хисепленеҫҫĕç. Çак ĕмĕр пурлăх курман-тытман етемсем пурăнăçра мĕн çуралнăранпа вилиҫҫен тĕрĕсрен ҫуралă ҫунсен вырăнĕнҫе хисепленеҫҫĕç. Вĕсем пурăнăçа

мар, хӑйсене те хӑйсем хуҫа пулман: вӗсем пур ӳт-тир вӑйне, пур ђун хавалне хырӑма йепле те пулин выҫӑлӑ-тутӑла тытасшӑн мулҫӑсене ҫук хакпа сутса пурӑннӑ, патшалӑх ӗҫӗ ҫинђен, пурӑнӑҫ йӗрки ҫинђен, унӑн пылакӗ-илемӗ ҫинђен вӗсем шухӑшлама та пултарайман.

Ҫапла революци умӗн Раҫҫейре икӗ си питӗ витӗр палӑрса тӑрађђӗ: пӗри „ҫӳлти“, „таса йунлӑ“ си, тепри „айалти“, „хура йунлӑ“ си. Малта асӑннӑ си ҫӳхеђђӗ, йышлӑ марђӗ, ҫапах та вӑл хура халӑх ӗнси ҫине тӑрӑнса ларса, унӑн сӗткенне сӑпса пек ӗмсе ӑна пӗтӗмпех пусмӑрласа пурӑнађђӗ, ӑна пур йенђен те ђуралӑх сӑнђӑрӗпе ҫыхса тӑрађђӗ. Ҫав сисене йут ђӗлхепе классем теме йурать, пӗр сийе тепӗр си пусмӑрласа пурӑнас йӗркене касслӑ пусмӑр теме йурать.

Анђах хӑш та хӑш иккӗленекен вулуҫӑ ђӑвашсен хушшинђе тахҫантан улпутсем пулман, хапрӑксемпе савӑтсем пулман, ђӑнтан мулҫӑсем пулман, ҫавӑнпа ђӑвашсем ҫак касслӑ пусмӑр айӗнђе асапланса пурӑннӑ тени тӗрӗсех те мар теме пултарать. Ҫак иккӗленӗве хирӗҫ епир пӗр-ик сӑмах кӑна калӑпӑр, мӗншӗн тесен ун ҫинђен нумай калаҫса сӑмаха сайа йама та кирлӗ мар. Ђӑнахах та кӑшт кӑна аса илер: кам аллинђеђђӗ ирӗклӗ ҫӗрсем, лайӑх ҫарансем, тупӑш паракан вӑрмансем? Кам аллинђеђђӗ пирӗн хушшӑмӑрти тупӑш паракан армансем, савӑт таврашсем, мул выђатакан ҫуту-илӳ вырӑнӗсем? Кам аллинђеђђӗ патшалӑхри влаҫ, кам аллинђеђђӗ ҫемствӑ ӗҫӗ, вулӑсри ӗҫсем? Пурте улпутпа капиталҫӑ аллинђе. Аваларанпа йурлӑ ђӑвашсем, йалти пурлӑхран татӑлнӑ ҫынсем йут ҫӗрсем тӑрӑх: Атӑл тӑршӗпе, Ҫипир, Капкас, Туркестан таврашӗнђе, пур Раҫҫейри хуласенђе, савӑт-хапрӑксенђе, улпут имеђисенђе тара кӗрӗшсе ӗҫлесе ҫӳређђӗҫ. Ҫак етемсен ӗнси ҫинђен пӗтӗм ылхавлӑ пурӑнӑҫ тӑршӗпе мул мӑйкӑҫӗ хывӑнмасђӗ. Ҫав мул пусмӑрех йал пурӑнӑҫне те пӗтӗмпех пусса хупласа тӑрађђӗ. Пуйансем патӗнђе тарҫӑра тӑракансем, халӑх ҫинђе хурађҫӑра, кӗтӳҫӗре, ытти те ҫавӑн пек ӗҫре ҫӳрекенсем, йат пайне тивекен ана-ҫарана ҫитменлӗх каснипе нумай ҫула тара парса пурӑнакан хресђенсем, ҫав ҫитменлӗхе пула тахҫан малтан пуйансене тӗрлӗ ӗҫе: вырма, ҫапма, ака тума ҫук хакпа кӗрӗшекенсем—вӗсем пурте мул кантӑрипе пӑвӑнса пурӑннӑ. Вӑтам хресђенсем те, пӗр тӗрлӗ тирпейлӗ кил-ҫуртпа пурӑнакан хресђенсем те мул серетипе пур йенђенех те ҫыхӑнса тӑнӑ: вӗсем йаланах кирлӗшӗн усламҫӑсене парӑма

кĕрсе пуранна, вĕсене йаланах пур суту-илÿçĕсем те улталаса тăнă: асапланса тунă тырă таврашне вĕсен питĕ йÿне сутмалла пулнă, саваt йе хапрăк таварне пысăк хакпа илмелле пулнă. Хысна, улпутсен аллинђи çемствă, ђиркÿ—пурте хресђенрен куланӑй пухнă, хырçă хырнă. Пурте вĕсем халăх пурлăхне ђăмласа пурăннă. Йал çынни хăйне хăй те хуçа пулман: уратниксем, старшинасем, приставсем, çемски нађаљниксем, исправниксем—пĕтĕм пурăнăçăн хуçисем çаксем пулнă. Çак пусмăр никама та тиркемен: вырăс-и, ђăваш-и, тутар-и,—йурлă пулсан вăл пурне те хăй айне пăђăркаса ђикнĕ. Çак мул пусмăрĕ, улпутсемпе капиталçăсен, пур пуйансен пусмăрĕ, çак класслă тенĕ пусмăр пур халăхсен те çÿçне—шăртне пĕр турапа касса çаратса тăнă.

Çак пусмăра Раççейри хастарлă ĕç халăхĕ хăй çинђен сирсе ывăтрĕ, капиталисăмăн мăйне касса пăрахрĕ, мулăн ђĕрине ђиксе ывăтрĕ. Çак пусмăрах сиресшĕн ытти сĕрсенђе пĕтĕм тĕнђери пролетариат халĕ питĕ хĕрÿлĕ кĕрешет. Çак кĕрешÿре тĕнђери пин тĕслĕ халăхсен ĕçлекенĕсем пĕр пĕринпе алтивĕççĕн тăрса кĕрешеççĕ. Капитал пусмăрĕ пĕр халăха тепĕр халăхран уйăрмасăр пусмăрлама тăрăшаť. Çавăн пекех ирĕке тухасшăн кĕрешекен ĕç халăхĕ те халăха халăх, ђĕлхене ђĕлхе уйăрмасăр пĕрлешсе кĕрешет. Çапла халăхпа халăх пĕрлешсе кĕрешсен çеç пур тĕнђери ĕçлекенсем ирĕке тухма пултараççĕ. Çак класслă кĕрешĕве кĕнеке ђĕлхипе интернатсионаллă кĕрешÿ теççĕ—вăл пур тĕнђери халăхсен пролетариаđĕ те пĕр шухăшлă пулса, пĕр ђĕрепе пурăнса, пĕр йун таппипе сывласа тĕнђери пуршуаçийе хирĕç пĕрлешсе çапăçнине пĕлтерет.

**2. Натсилĕ пусмăр.** Çапла пĕр халăх тепĕр халăха пусмăрласа пурăннине каларĕ, çапла пуйанрах, паттăртарах, çутăланнăрах халăх имшеркерех халăхсене пусмăрласа пурăннине каларĕ. Халăха халăх пусмăрласси те пĕтĕмпех класслă пусмăрпа çыхăнса тăраť. Ĕç халăхĕ тĕнђере пин тĕслĕ уйрăм ђĕлхепе калаçсан та пĕр шухăшпа, пĕр кăмăлпа, пĕр интереспе пурăнма тăрăшаť, халăхсен „çÿлти“ сийĕсем çеç, улпутсемпе пуршуаçи çеç йут халăхсене йалан туласа пурăнма тăрăшаť.

Çак пусмăра кирек мĕнле ђăваш çынни те питĕ витĕр пĕлсе тăраť. Вăл пусмăрпа асапланса ђăваш хура халăхĕ 700 çула йахăн пурăннă. Ĕлĕк кирек мĕнле ђăваш та мĕн çуралнăранпа мĕн вилиђђен хăйĕн ђăвашлăхĕнђен хăйех сийен курса пурăннă. Çак

пусмăр ђăваш пурăнăҫне ерешмен карти пек йĕри-тавра карталаса илнĕ. Ђăнахах та аса кăна илер: ђăваш йалта пăнђăхса пурăниђђен ĕҫе кайĕђђĕ, вĕренме кайĕђђĕ, вырăна кĕрĕђђĕ-вырăсла ђăнтан пĕлменни касса тăрађђĕ, ђăваш кĕнеке, хаҫат, шурнал тавраш вулĕђђĕ—анђах вырăсла ҫырнă ҫырăва вăл тĕплĕ ăнланаймасђĕ; ђăваш ђĕлхи, тумĕ, йăлисем — пурте măшкăлђăк вырăнĕнђе хисепленеђђĕҫ. Ђăваш халăхĕ вырăс халăхĕпе йе тутар халăхĕпе те тан вырăнне хисепленмесђĕ, вăл Раҫҫейре хăйне уйрăм пусмăрлă сослови вырăнĕнђе хисепленеђђĕ. Ђăваш ĕҫлекенсемпе ђăваш хресђенĕсен ĕнси ҫинђе мул пусмăрĕнђен пуҫне тата тепĕр йывăр пуслăх вырташђĕ, ăна нăтсиле пусмăр теме йураĭ. Малалла ҫав пусмăра йепле сирсе пăрахасси ҫинђен вăй ҫитнĕ таран тĕплĕрех калăпăр.

**3. Халăх йе натси тени мĕне пĕлтерни ҫинђен.**

Халăх тени арап сăмахĕ, натси тени лађин сăмахĕ. Халăх тесе етемсен уйрăм ушкăнне калаҫҫĕ. Анђах ҫапла мĕнле ушкăна калаҫҫĕ-ши? Ҫапла ђи малтан пĕр ăруран шăтса пулнă йăха калама йураĭ пек туйăнаĭ, анђах ҫак тĕрĕсех мар: хаљхи халăхсем пурте тĕрлĕ ăрусен йăхĕсем пĕр пĕринпе хутшăннипе пулса кайнă: ҫапла вырăссем авалхи славенсем хвинсемпе хутшăннипе пулса кайнă, хаљхи хрантсуссем, анкăљђансем, нимĕҫсем авалхи тĕрлĕ йăхсем: каллсем, римљансем, кермантсăсем, приттсем ыт. те пĕр пĕринпе хутшăннипе пулса кайнă. Илер ђăвашсенех: вĕсен ӳттир тĕсне, шăмшак станĕпе виҫине, ӳтпӳ хавалне, ăспит вăйне, ђун туртăмĕсене, тĕрлĕ йăлисене аса илсен—ђăвашсем ђӳрк йăхĕпе хвин йăхĕ хутшăннипе пулса кайни паллă. Ђăвашсен хушшинђе сарă ҫӳҫлĕ, кăвак куҫлă, шултăра шăмшаклă ҫынсем пурри ђăваш ђĕринђе выљакан ђӳрк йунĕ хвин йунĕпе хутшăннине пĕлтерет теҫҫĕ. Ҫакна ђăваш историйĕ те питĕ витĕр кăтартса тăраĭ: тĕп авал ђăваш пурăннă ҫĕрсенђе нумаĭ тĕслĕ хвин йăхĕсем пурăннă: ҫармăссем, măкшăсем, ирҫесем, арсем (вуђексем), каратайсем, мошарсем, мишерсем (мешђера йăхĕ), ҫав йăхсем нумайĕшĕ ђăвашланса пĕтнĕ. Хăш ăслăлăхҫăсен шухăшĕпе—ђăваш халăхĕн вирйиал 'турађĕ ђӳрксем ытларах та нумай хвинсемпе хутшăннипе пулса кайнă. Унтан авалхи ђăваш ҫĕрĕнђи хуласенђе пурăнакан ђăвашсем: суту-илӳҫĕсем, ремеслаҫăсем, тĕрлĕ алăстисем, ђинавниксем, ђăваш улпуђĕсем пурте вырăсланса пĕтнĕ. Ҫапла монкол рассинђен пулнă ђăвашсем вырăссемпе хутшăнса пăђах урăх рассăна куҫса кайнă. Унтан йулашки ĕмĕрсенђе ђăваш-

сем йалĕ йалепĕ тутарланса кайни паллă, ђăвашсем măкша йе çармăса çавăрăнса кайни те паллă. Тата пирĕн саманара Тăнай шывĕ тăршĕпе пăлхарсем пурăнаççĕ, ăслăлăхçăсен шухăшĕпе вĕсем авалхи ђăвашсене. Атăл пăлхарĕсене тăван пулнă теççĕ, анђах нумай ĕмĕрсем тăршĕпе вĕсем славенсемпе йуна хутăштарса пынипе халĕ вĕсем пĕтĕмпех славенланса кайнă. Çапла ĕнтĕ халăх тени пур çав халăх сыннисем те пĕр ăруран, пĕр йăхран, пĕр рассăран пулнине пĕлтермест, вăл етемсем историре пĕрлешсе пурăнса çеç пĕр халăха ђăмăртаннине пĕлтерет.

Анђах пур етемсем те авалран пĕрлешсе пурăннипе пĕр халăх пулса тăрайман. Илер Раççейе: унта çĕр халăх ытла нумай ĕмĕрсем тăршĕпе йунашар çĕршыв çинђе, пĕр пурлăх йĕркипе, пĕр патшалăх йĕркипе çыхăнса пурăннă, çапах вĕсем пĕр халăха çавăрăнайман. Апла пулсан — мĕнле пĕрлешӳлĕ ушкăна епир халăх тесе калатпăр?

Çапла епир ђи малтан пĕр ђĕлхепе калаçакан ушкăна калатпăр. Пĕр ђĕлхелĕ ушкăн çеç халăх йатне йышăнма пултарать. Патшалăхра нумай ђĕлхе пулма пултарать, анђах пĕр халăх тĕрлĕ ђĕлхепе калаçма пултараймаст. Çавăнпа тăван ђĕлхе халăхăн ђи паллă, ђи аслă тымарĕ вырăнĕнђе хисепленет.

Анђах çапах та кађђех пĕр ђĕлхепе калаçакансен ушкăнĕ те йаланах пĕр халăх вырăнĕнђе кăна пулма пултараймаст. Анкли, Америккă, Ирланти сыннисем пĕр ђĕлхепе, Норвекипе Тани сыннисем пĕр ђĕлхепе, тутарсем, мишерсем, крешĕнсем пĕр ђĕлхепе калаçаççĕ, анђах вĕсем пурте хăне уйрăм тĕрлĕ халăхсен вырăнĕнђе хисепленеççĕ. Тепĕр йенђен хађхи Швейтсарире виçĕ тĕслĕ ђĕлхепе калаçакан ушкăнсем пурăнаççĕ: нимĕçсем, хрантсуссем, итађйансем, анђах вĕсем хăйсене пурте пĕр халăх, пĕр швейтсар халăхĕ теççĕ. Çавăнпа та халăх тесе пĕр ђĕлхепе çеç калаçакан ушкăна калама йурать тени те пĕтĕмпех тĕрĕс мар.

Историпе ђĕлхерен пуçне халăх тенĕ ушкăнăн тата тепĕр паллă пур: вăл çав ушкăн йышăнса тăракан çĕршыв, унăн территорийĕ пулать.

Çав территорисем питĕ айакра уйрăм тăлсенђе пулсан — халăх пĕр ђĕлхепе калаçсан та уйрăм халăхсене уйрăлса кайма пултарать, çапла пĕр пĕринђен океан урлă выртакан Анклипе Америккă анкăђђанĕсем хăйсене уйрăм халăхсен вырăнне хисеплеççĕ. Çавăнпа та

кашни уйрăм халăхăн тепĕр тĕп тымарĕ вăл йышăнса тăракан çершыв пулса тăраť.

Анђах кађђех тĕнђере пĕр тĕлте çĕршыв йышăнса пурăнман халăхсем те пур: çапла еврейсем пĕтĕм тĕнђере сапаланса пурăнаççĕ, ђикăнсем пурăнăçне пĕтĕм Европпă тăрăх куçса çўресе ирттереççĕ.

Çĕршывран пуçне кашни уйрăм халăхăн тепĕр пысăк паллă пур: çав паллă халăх тенĕ ушкăнăн пĕр пурлăх йĕрки, пĕр хуçалăх майĕ пуррине пĕлтерет, вăл çав ушкăн пур йенђен те пĕр економиккă çыххипе çыхăнса тăннине пĕлтерет. Епир пĕлетпĕр, тĕп авал вырăссем тĕрлĕ йăхсене уйрăлса пурăннă, пыра киле çеç çав йăхсем пĕр пĕринпе суту-илў туса, пĕрпĕринђен хуçалăх йĕрки йышăнса, пĕрле çĕнĕ çĕрсене куçса, вĕсене колонисатсилесе пĕр халăх пулса кайнă. Çав йăхсене пĕр халăха çавăрăнма пуринђен ытла пурлăх йĕрки, економиккă çыххи пулăшнă.

Анђах йулашкинђен кађђех тата тĕрлĕ йăхсенђен пĕр халăх пулма пĕр истори, пĕр ђĕлхе, пĕр çĕршыв, пĕр пурлăх йĕрки çеç çитмест, çапла анкăђђансемпе ирлантсăсем пĕр ђĕлхепе калаçаççĕ, йунашарах ĕмĕртен пĕрле пурăнаççĕ, пĕр пурлăхпа, пĕр економиккăпа çыхăнса пурăнаççĕ, çапах та ĕмĕрсен тăршĕпе пĕр пĕринпе кĕрешсе, йўçĕнкелесе пурăнаççĕ. Çапла вĕсем уйрăм халăхсен вырăнĕнђе хисепленни вĕсен ђунлăх сăнпиђĕ, халăх характĕрĕ, ђун сулăнăçĕ, ђĕре туртăмĕ, йăласем, ĕнненўсем уйрăмминђен килсе тăраť-

Кашни халăхăн ђун хавалĕ, кăмăл тавраш уйрăмрах, унăн йăлисем, пурăнăç сăнĕ ытти халăхсенђен уйрăмрах, унтан тĕрлĕ халăхсем куђтурăн тĕрлĕ пусми çинђе вырăн йышăнса тăраççĕ: хăшĕ тĕттĕмрех, хăшĕ вĕренў тĕлешĕнђен, ăслăлăха, техниккăпа куђтурă таврашне йышăнас тĕлешĕнђен çивђĕрех пулаççĕ. Çавăнпа та тĕрлĕ йăхсенђен пĕр халăх пултăр тесен тата вĕсем куђтурă йенђен пĕрлешўлĕ пурăнмалла.

Çапла ĕнтĕ халăх йе натси тесе авалран пĕрле, пĕр историпе пурăнса иртернĕ, пĕр ђĕлхепе калаçакан, пĕр çĕршыва йышăнса тăракан, пĕр пурлăх йĕркипе пурăнакан, пĕр ђунлăх куђтурĕпе пурăнакан етемсен ушкăнне калаççĕ.

Çак йенђен пур тĕлешĕпе те асăрхасан ђăваш халăхĕ çапла палăрса тăраť: ђăваш йађĕ кĕнекесенђе XV-мĕш ĕмĕртенпе палăрса тăраť, çапла ђăвашсен историлĕ самани, вĕсем пĕрле ђăмăртанса пурăнса иртернĕ витĕр паллă самана тăватă çĕр çула йахăн тă-

сăлса тăрат. Хађхи нумай историçĕсен шухăшĕпе ђăвашсем авал пăлхарсем йатлă пулнă, вĕсен Атăл тăршĕпе ђаплă патшалăх пулнă, çакă тĕрĕс пулсан — ђăвашсем историлĕ пурăнăç пусми çине христианлă ерăн IX-мĕш ĕмĕрĕнђех—вырăссемпе пĕр вăхăталлах пуснă пулат, апла пулсан—ђăвашсен историлĕ самани пин çул ытла авала тăсăлса тăрат. Ђăваш ђĕлхи урал-алтай ђĕлхисен ђўрк туратĕнђе хисепленет, ђăваш ђĕлхине сăмах тымарĕсемпе сăмах çаврăнăçĕ тĕлешĕнђен тутарпа тĕрĕк ђĕлхи питĕ çывăх. Ђăваш ђĕлхи йал халăхĕн, çĕр ĕçĕпĕ çеç пурăнакан халăхăн ђĕлхи, çапах та çав ђĕлхере 17 пин тымарлă сăмаха йахăн çеç хисепленет (тĕнђере ђи пуйан хрантсус ђĕлхинђе 35 пин сăмах). Ђăваш ђĕлхинђе тутарсенђен йышăнна сăмахсем, унтан вырăссенђен йышăннă сăмахсем питĕ нумай, унтан ђăвашсен авалранпа арапсенђен, еврейсенђен, перссенђен, ерменсенђен, хвин йăхĕсенђен йышăннă сăмахсем йышлă. Н. И. Ашмари кăтартнипе ђăваш ђĕлхинђе авалхи крексемпе лађинсенђен йышăннă сăмахсем те пур, çапла карас тенĕ сăмаха ђăвашсем авал литовтсăсенђен йышăннă пулат, литовтсăсем хăйсем çав сăмаха крексемпе латинсенђен йышăннă пулат. Ђăвашсем авалранпа хăйсем те ытти халăхсене хăйсен сăмахĕсене йышăнтартарнă: çапла вырăссем лошадь унтан лачуга тенĕ сăмахсене ђăвашсенђен йышаннă пулат, Н. И. Ашмарин кăтартнипех нимĕçсем авал ђăвашсенђен тăхăр тымарлă сăмах йышăнса туйаннă пулат, унтан ђăваш сăмахĕсем тутар, пушкăрт, кăркăс ђĕлхисенђе пайтах, ђăваш сăмахĕсем тата хвин йăхĕсен: çармăссен, мăкшăсен, ирçесен, вуђексен, пермексен, сыренсен ђĕлхинђе питĕ нумай (çармăс ђĕлхинђе çурри ытлашшипех ђăваш сăмахĕ), ђăваш сăмахĕ халĕ кўршĕлĕ пурăнман хвин йăхĕсен: мађйарсен, осђексен, самойетсен, карелсен, хвинђантсăсен, естсен ђĕлхисенђе те пур теççĕ (мађйар ђĕлхинђе ђăваш ђĕлхинђен куçнă тымарлă сăмахсем 230 ытла). Ђăваш ђĕлхи виçĕ уйрăм калаçăва уйрăлса пăлăрса тăрат: анатри калаçăвĕ, вирйал калаçăвĕ, анатйенђи калаçу. Анатри калаçупа ђăвашсенђен 40%, анатйенђи калаçăвĕпе 10%, вирйал калаçăвĕпе 50% калаçат. Вирйалсем Ђикме, Çĕрпў, Йетĕрне, Кăрмăш уйесĕсенђе пурăнаççĕ, унтан вĕсем Самар кĕпĕрнинђе, Пушкăрт çĕрĕнђе, Çипирте пайтах (вирйал тени авалхи сăмах, вирелле тенĕ сăмахпа тăван сăмах, вăл çўлте, ту çинђе пурăнакан теннине пĕлтерет), анатйенђи калаçăвĕпе Шупашкар уйесĕн ăшă йенђе пурăнакан ђăвашсене калаççĕ. Сăмахсем тĕлешĕнђен, сăмах çав-

рăнăçĕ тĕлешĕнҫен анатри калаçăвĕ ытти калаçусенҫен пуйантарах ҫăвашла кĕнекесем XVIII-мĕш ĕмĕртенпе çапăнма тытăннă, вĕсене вырăс алхвавиҫĕпе, вирйал ҫĕлхипе пиҫетленĕ. Ҫăваш литературлă ҫĕлхи иртнĕ ĕмĕрен 70-мĕш çулсенҫе тапранса кайнă, çав ĕçе Пăва ҫăвашĕ И. Я. Яковлев тапратса йанă, литературă ҫĕлхийĕн никĕсĕ вырăнне вăл Пăва ҫăвашĕсен ҫĕлхине хунă. Вирйалпа анатри калаçăвĕсен хушшинҫе уйрăм питĕ сахал: анатри ҫăвашпа вирйал çынни пĕр пĕрне питĕ лайăх ăнланаççĕ.

Территори тĕлĕшĕпе ҫăвашсем çĕр ҫăмăрĕн 50-па 60 сарлакăшĕсен хушшинҫи çĕршывсене йышăнса пурăнаççĕ. Çĕр çинҫе ҫăвашсем 35—40 пин тăваткăл çухрама йахăн вырăн йышанса тăраççĕ. Раççей варринҫи халăхсенҫен ҫăвашсем пуринҫен те ытларах пĕрле ҫăмăртанса пурăнаççĕ. Ҫăваш халăхĕн çурри пĕр тăтăш ҫăмăртанса Ҫăваш оплăçĕнҫе пурăнаҭ, унта ҫăваш 86%; ытти çурри ҫăвашсенҫен Ҫĕмпĕр, Самар, Сарăту, Ҫулхула, Аçтăрхан, Томск, Енисей, Новониколаевск, Топол, Куркан, Ҫеляпа, Омск, Ҫумен кĕпĕрнисенҫе, Уссури тавринҫе, Туркестанра, Каркăс респупликкинҫе тата та тĕрлĕ тĕлте сайра сапаланса пурăнаççĕ, ҫăмăртанарах ҫăвашсем Тутарпа Пушкăрт респупликкисенҫе, унтан Самар кĕпĕрнинҫе пурăнаççĕ. Ҫăваш халăхĕн йышлăлăхĕ пĕр мĕҫйун та виççĕр пин çын ытлараха çитсе пыраҭ. Ҫăваш халăхĕ вăтамлăхран кашни çул 1,1% йышлăланса пыраҭ (тутарсем 1,2% йышлăланса пыраççĕ, вырăссем ҫăваш ҫухлĕрехех йышлăланса пыраççĕ). Тĕнҫери пур етемйышĕпе танлаштарсан çĕр ҫăмăрĕ çинҫе пин çынран пĕри ҫăваш пулаҭ, Раççейри çĕр ытлашширех халăхран пĕри ҫăваш халăхĕ пулса тăраҭ, Раççейри çĕр етем ҫунĕнҫен пĕри ҫăваш пулса тăраҭ. Ҫăваш тĕп çĕрĕ Вăтам Атăл тавринҫе выртаҭ. Раççейри пур ҫўрк йăхĕсенҫен те ҫăваш халăхĕ ҫи хĕвеланăçнерех пурăнаҭ. Ҫăваш территорийĕ вырăс халăхĕн ĕмĕрхи колонисатсийĕн тĕп çулĕ çинҫе выртаҭ, çак авалран йышăннă вырăн ҫăваш историйĕнҫе питĕ паллă вырăн йышăнса тăраҭ, ун çинҫен тĕплĕрех малалла калăпăр.

Пурлăх тĕлешĕпе ҫăвашсем пĕр пĕринпе питĕ сахал çыхăнса тăраççĕ: вăл ҫăвашсен промăшлĕнăç наҫарринҫен, хуласем çуккинҫен, вĕсен çĕршыв тăвăрринҫен, вăл йурлинҫен, вĕсен таварсăр йе натураллă тенĕ хуçалăх йĕркинҫен (çапла йапала тавраш туса кăларакан хăне кирлĕшĕн çеç — сутлăхшăн мар туннине калаççĕ) килсе тăраҭ. Ҫăвашсен пĕр пĕрин хушшинҫи економиккă çыххи

вирйалсем анатри ђăвашсенђен тырă-пулă йе выђăх тавраш туйанкаланнинђен, анатри ђăвашсем вирйалсенђен вăрман йе алăсти йапалисем туйанкаланнинђен çеç палăрса тăраť.

Куђтурă тĕлешĕпе ђăвашсем пĕр пĕринпе тĕреклĕрех кăшăлсемпе çыхăнса ђăмăртанса пурăнаççĕ. Ђăваш хушшинђе вырăсла ђипĕр йнланса тĕрĕсрех калаçакан ђăваш 5%-ран ытла мар, хĕрарăмсем пĕтĕмпех вырăсла нимĕн те пĕлмеççĕ. Ђăвашсен кил-çурт çавăрас, çимĕç пĕçерес-хатĕрлес йĕркесем, тум тумланас йĕркесем ытти халăхсенђен пăђах уйрăм (ђăваш прохвессорĕ Н. В. Никођски хисепĕпе ђăваш хĕрарăмĕсенђен икĕ пруђăнĕ çеç сарахвансем тăхăнса майраланса çÿрет). Ђăваш вăйисем, йăлисем, ĕненĕвĕсем те ытти халăхсенђен нумай уйрăм. Ђăвашсенђен 25 пин ђуна йахăн (2%) авалхи ђăваш тĕнĕпе пурăнаť, ытти 98% вырăс тĕнне авалхи тĕн йĕркипе хутăштарса пурăнаť, тĕне кĕмен ђăвашсене „ђăнђăвашсем“ теççĕ, шыва кĕнĕ ђăвашсене вырăсланнă ђăвашсем теççĕ. Ђăвашсен ытти халăхсемпе танлаштарсан уйрăмрах пурăнăç, уйрăм тĕс-пит, уйрăм йун, уйрăмрах шăмшак, уйрăмрах хуçалăх йĕрки, çавăнпа вĕсен пуçĕнђе, ăш-ђикре, ђĕрере, йунра уйрăм сулăнăçсем, уйрăм тапăсем, уйрăмрах туртăмсем пур. Çавăнпа пур йенђен пăхсан та ђăваш халăхĕ тĕнђере хăне уйрăм халăх вырăнĕнђе хисепленме пултараť.

**4. Халăхсем мĕнле пулса кайни çинђен. Кĕтÿлĕ пурăнăç самани.**

Епир пĕлетпĕр, етемсем тĕп авал кайăкђакак пек пурăннă. Унђухне етемсен пĕрлешÿлĕ пурăнăçăн йĕрки пулман: етем вăрмансемпе çеçенхирсенђе, унтан шывсем тăрăх мĕн килнĕ йна пуçтарса тăранса пурăннă. Çак саманара етемсем хăш ђухне кĕтĕвĕкĕтĕвĕпĕ пухăнкаласа, унтан çавăнтах ђăлпар саланкаласа пурăннă. Çак саманана йĕркесĕр уртапа (кĕтÿленсе) пурăннă пурăнăç йĕрки теççĕ. Çак саманара етем хир кайăкĕнђен, выђăх-ђĕрлĕхрен нумайах та уйрăм пулман: вăл хурткăшшанкăпа, ÿсетăрансен тымарĕпе, вĕсен çимĕçĕпе, ђĕрĕ ашпа, пулăпа, ытти мĕн тĕл пулнă унпа тăранса пурăннă, вăхăђĕпе етеме етем те çинĕ. Çак саманара арларăмлă пурăнас йĕрке те ђăнтан пулман, етемсем урлăпирлĕ тăванпа тăвана асăрхамасăр мăшăрланса çеç пурăннă. Çак вĕçĕмсĕр вăрăм саманара етемйышĕ тĕрлĕ расасене уйрăлса кайнă. Раса тесе епир етемйышĕ ÿттир тĕсĕпе, ÿтпÿ станĕпе, ÿтпÿ виçипе тĕрлĕ пайсене уйрăлнине калатпăр, çапла шурă ÿтлĕ етемсене

капкас расси теҫҫӗ, тӗттӗмрех сӗмлӗ, сарлака питлӗ, ҙалăш куҫлă йăхсене монкол расси теҫҫӗ, унтан ҫӗр ҫинҙе хӗрлӗрех сӗмлӗ раса пур (Америккăри интейтсăсем), хапхура тӗслӗ расасем те пур (некрсем, малайтсăсем). Ҫав расасем сасартăк пулса кайман; вӗсем вӗҫӗмсӗр вăхăт тăршӗпе пулса пынă: йалан шăрăх ҫанталăклă ҫӗрсенҙе пурăнакан етемсем йеррипен тӗксӗмленнӗҫем тӗксӗмленсе пырса хура ӳтлӗ пулса кайнă, сивӗрех ҫанталăклă ҫӗрсенҙе пурăнанан етемсем ҫутăлнăҫем ҫутăлса пырса сарă ӳтлӗ пулса кайнă.

Ҙăвашсем монкол рассинҙе хисепленеҫҫӗ. Вӗсем йышлăланса кӗтӳлӗ пурăнăҫ йӗркипе пурăнма тытăнни христианлă ерăҙен нумай пин ҫул малтан пулнă. Авалхи ҙăваш мăнаслашшӗсем ҫак саманара Аҫире хаҙхи Монколи таврашӗнҙе, Алтай тăвӗ ҫывăхӗнҙе пурăннă теҫҫӗ.

**Ăрулă пурăнăҫ йӗрки.**

Ҙăнтан пӗрлешӳлӗ пурăнăҫ йӗркипе пурăнма етемсем тӗрлӗ оруҙисемпе кайăк-ҙакак йе пулă тытса, тырă аккаласа, унтан хир кайăкӗсене илештерсе вӗсене выҙăх-ҙӗрлӗх вырăнне усраса усă курма хăнăхсан ҫӗҫ тытăннă. Ҫак саманара етемсем урлăпирлӗ сапаланса пурăнма пăрахаҫҫӗ, вӗсем хăйсен вуҙахӗ таврашӗнҙе пӗр пӗринпе ҙăмăртанса пурăнма тапратаҫҫӗ. Ҫав тӗп авал пулнă пӗрлешӳлӗ ушкăнсем—уйрăм ăрусем, пӗр йунран пулнă, пӗр пӗрне тăван етемсен ушкăнӗсем пулнă. Ăру пуҫӗнҙе тӗп авал ҙи ватă ама тăнă теҫҫӗ, ҫав йӗркене ăслăлăх ҙӗлхипе матриархат теҫҫӗ. Ăру пуҫӗнҙе хӗрарăм тăни ҫав саманари пурăнăҫ йӗркинҙен килнӗ: етемсем ухутапа тăранса пурăннă ҙухне арҫынсем кунӗн-ҫӗрӗн хирте йе вăрманта кайăк таврашне йӗрлесе айкаса ҫӳренӗ, вуҙах таврашӗнҙе ҫиме хатӗрӗсене сыхлакан, аҙа-пăҙана сыхласа ӳстерекен хӗрарăм хăй ҫеҫ пулнă, ҫавăнпа та вăл ăру пуҫлăхӗ пулма пултарнă. Пыра киле, ытларах та етем выҙăх-ҙӗрлӗхе кӗтӗвӗ кӗтӗвӗпе усрама вӗренсен, пуҫлăхра арҫынсем тăра пуҫланă, мӗшӗн тесен кӗтӳсене кӗтес ӗҫ, тырă акас ӗҫ вӗсен ҫинҙе тăнă, ҫавăнпа пурăнăҫра та вӗсем паллăрах вырăн йышăнса тăнă. Ҫак саманара ăрун пуҫне урăх пӗрлешӳ тавраш пулман—унҙух халăх тавраш, патшалăх тавраш та пулман. Ăрусем хăшӗ пайтах йышлă пулнă, анҙах ҫапах та вӗсен пурлăх пӗрле пулнă, тӗнҙе тăрăх куҫса ҫӳрекен етемсен кашниййӗн уйрăм харпăрлăх пулма та пултарайман, ăна вăл ыттисемпе пӗрлешмесӗр тума та сыхă усрама та пултаман. Пӗр вырăнта тырă акса пурăнма хăнăхакан етемсем уйрăм

пӗрлешмесӗр нимӗн тума та пултарайман: вӗсен тырӑ ани тума ҫеремсем уҫмалла, вӑрмансене хӑртмалла, тымартан тасатмалла пулнӑ, акнӑ тырӑсене кайӑк-ҫакакран сыхламалла пулнӑ, хӑйсем тунӑ пурлӑха вӑрӑ-хурӑх таврашӗнҫен сыхламалла пулнӑ. Ҫавӑнпа та ҫак вӑхӑтра ҫарансем, уйсем, вӑрмансем, шывсем, пур унта ҫӳрекен выҫӑх-ҫӗрлӗх, пур аккаланӑ тырӑсем ӑрӑвӑн пӗрлехи харпӑрлӑх вырӑнӗнҫе хисӗпленнӗ. Кашни ӑрӑвӑн ҫапла уйрӑм ӑру харпӑрлӑхӗ пулнӑ, ҫав харпӑрлӑха уйӑрса пӗлсе тӑрас тесе вӑл хӑй йапалисем ҫине: выҫӑх-ҫӗрлӗхе, анасем ҫине, утӑ уҫланкисем, вӗллесем, кӳлсем ҫине уйрӑм ӑру паллисем тунӑ. Ӑрулӑ пурӑнӑҫ саманинҫе ҫемйелӗ пурӑнӑҫ йӗрки—мӑшӑрлӑ пурӑнӑҫ йӗрки—сывӑх тӑвансем пӗр пӗрипе мӑшӑрланмалла мар йӗрке пулса пынӑ. Ӑру ӗҫӗсене ӑрупуҫлӑхӗ «мӑнасатте» (патриарх) туса тӑнӑ: вӑл калани, вӑл хушни ӑрушӑн саккун пулнӑ. Тӗрлӗ ӑрусене тивекен ӗҫсене ӑрупуҫлӑхсем пӗрлешсе туса тӑнӑ. Ҫак саманара йалан куҫса ҫӳрекен ӑрусем выҫӑх ҫӳремелли лайӑх вырӑнсене йышӑнас тесе йаланах пӗр пӗрипе тавлашмалла, вӑрҫмалла пулнӑ, вӑрҫнӑ ҫух вӗсем ушкӑн-ушкӑн пуҫтарӑнса вӑрҫнӑ, ҫав ушкӑнсен пуҫӗнҫе вӑрҫӑсенҫе ҫарпуҫлӑхӗсем тӑнӑ; ҫак ҫарпуҫлӑхсем те питӗ хисеплӗ ҫынсем пулнӑ, ҫавӑнпа ӑрупуҫлӑхсем ӑру ӗҫне тунӑ ҫух канаша ҫав ҫарпуҫлӑхсене те ҫӗннӗ. Унтан тата ҫак саманара ӑрусен тӗнпуҫлӑхсем пулнӑ, вӗсем пӗр ӑрупа йе нумай ӑрупа пӗрлешсе уҫук пек парне кӳмелли—памалли кӗлӗсен йӗркине тытса тӑнӑ, вӗсем те ӑрупуҫлӑхсемпе ҫарпуҫлӑхсем пекех хисеплӗ ҫынсем пулнӑ. Ҫак вӑхӑтра кашни етем хӑй ӑруне ҫеҫ пӗлнӗ, ҫав ӑру уншӑн пӗртен пӗрех пӗрлешсе пурӑнмалли ушкӑн пулнӑ, ҫав ушкӑна урӑх йӑхран, урӑх йут йунран пулнӑ етем пырса кӗреймен, ун ҫумне ҫыпҫӑнайман. Ҫак вӑхӑтрах ҫурасем усраса усӑ курас йӗрке те тухса кайнӑ. Ҫуралӑха вӑрҫӑра тыткӑна лекнӗ йе сутӑн илӗннӗ ҫынсем ҫакланнӑ, вӗсем ӑрусем ҫине выҫӑх вырӑнӗнҫе ӗҫлесе пурӑнса тӑнӑ. Ҫак ӑрулӑ пурӑнӑҫ йӗркипе пур тӗнҫери халӑхсем те пурӑнса иртернӗ. Ҫак йӗркепех пирӗн ӗмӗрте те нумай етемсем пурӑнаҫҫӗ: ҫапла пире ҫӗлхепе те йунпа та тӑван кӑркӑссем, туркменсем халиҫҫенех пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫҫа ҫӳресе кӗтӳсем усраса тӑранса уйрӑм ӑрусемпе пурӑнса пурӑнӑҫа иртереҫҫӗ.

Ҫӑвашсем ҫӑнтан ӑрулӑ пурӑнӑҫ пусми ҫинҫе ҫӗҫ тӑни ӗнтӗ пин ҫул ытла иртрӗ. Вӑл хрисҫианлӑ ерӑн IV—VII-мӗш ӗмӗрӗсен-

ҫе пулнӑ пулмалла, ҫӑвашсем Аҫирен йеррипен Европпа куҫса килнӗ саманара пулнӑ пулмалла. Ҫак йӗрке пурӑнӑҫран сасартӑках ҫухалма пултарайман: пур тӗнҫери хресҫенсен хушшинҫе те, пиншер ҫул ытла урӑх йӗркепе пурӑнсан та, ҫав ӑрулӑ пурӑнӑҫӑн шӑрши халиҫҫенех тухса пӗтмен. Ҫӑвашсем пек кайа йулнӑ халӑхсен хушшинҫе ӑрулӑ пурӑнӑҫӑн йулашкийӗсем халиҫҫенех виттӗр палӑрса тӑраҫҫӗ: ватӑрах йе ҫул тӗлешӗнҫен аслӑрах ҫынсене сумасӑвасси, хӗрарӑмсене пусмӑрта тытасси, ӑрусем йалсенҫе уйрӑм ӑрусемпе ларасси, ӑрупа ваттисене асӑнасси, тӗрлӗ ҫӳксемҫӳклемесем тӑвасси, уйрӑм ӑрупа уйрӑм ӗҫкӗ-ҫикӗ тӑвасси—ҫаксем пурте ҫӑвашсем ӗлӗк ӑрулӑ пурӑнӑҫ йӗркипе пурӑннине кӑтартаҫҫӗ. Ҫуралӑхлӑ хуҫалӑх ҫӑвашсен хушшинҫе хӑватлах пулайман пулӗ, ҫапах ҫӑваш ҫӗлхинҫе ҫура тенӗ сӑмах пурри, ҫурасем ҫинҫен асӑнакан халлапсем—йумахсем, етемсене вӑрласа кайакан таркӑнсем ҫинҫен калакан калавсем, ҫӑвашсен хушшинҫи ҫура йатлӑ йал йаҫӗсем ҫӑвашсен те ҫурасем пулнине пӗлтереҫҫӗ пумалла.

**Етемсем племесемпе, территорилӗ—сословилӗ йӗркепе пурӑннӑ самана.**

Ӑру йӗркипе етемсем йаланах пурӑнма пултарайман. Етемсем ӗрҫесе йышлӑланса пынипе пыра-киле ирӗксӗрех пӗр ӑруран нумай ӑрусем пулмалла пулнӑ, ҫапла майпа пӗр ӑруран туратланнӑ нумай ӑрусенҫен пӗр йӑхлӑ етемсен ушкӑнӗ йе племи пулмалла пулнӑ. Ҫак ӑрусенҫен пулса кайнӑ племесем йышлӑланнӑҫем йышлӑланса пынӑ, ҫавӑнпа пӗр племери ҫынсем пӗр ӑрура пурӑннӑ пек ҫӑмӑрганса, авалран йулнӑ ӑру йӗркипе хытӑ хӗсӗнсе пусӑрӑнса пурӑнайман. Унтан пыра киле етемсем ҫурасене те хӑйсемпе пӗр племе тесе хисеплеме хӑнӑхнӑ. Ҫапла майпа пӗр племере йут йунран йӑхнӑ етемсем те шутлана пуҫланӑ. Унтан етем ӗрҫенӗҫем ҫӗршыв тӑвӑрланса пынӑ, ҫавӑнпа етемсем ирӗксӗрех ҫер ӗҫлесе пӗр тӗлте пурӑнма хӑнӑхмалла пулнӑ.

Ҫӗр ӗҫлеме, кил-ҫурт ҫавӑрма уйрӑм ҫемйепе ҫеҫ меллӗрех пулнӑ—ҫак ӗҫе йышлӑ ӑру пӗрлешсе ӗҫлеме пултарайман. Унтан ҫӗр ӗҫлесе пурӑнакансене йышлӑ ушкӑнпа пӗр тӗлте пурӑнма, йалпа пурӑнма лайӑхрах пулнӑ, ҫавӑнпа тӗрлӗ ӑрусем пӗрлешсе пӗр тӗлте пурӑнмалли йӑла тухса кайнӑ. Ҫапла ӑрусем хӑйсемпе хӑйсем ҫеҫ пӗрлешсе хупӑнса пурӑнас, ытти ӑрусенҫен йутшӑнса пурӑнас йӗрке ирӗксӗрех улӑшӑнса саланса пынӑ. Ҫапла пӗр тав-

рара пурӑнакан ӑрусем нумай ӗмӗрсен тӑршӗпе пӗрле пурӑннипе етемсен пысӑкрах ушкӑнсем—уйрӑм племесемпе уйрӑм йӑхсем пулса кайнӑ. Унтан ҫак саманарах тата ак ҫапла пурӑнӑҫ йӗрки тухса каймалла пулнӑ: ҫӗр ӗҫӗ питӗ йывӑр, йӗрӗнтерекен ӗҫ, ҫавӑнпа та ӑна малтан хӗрарӑмсем, ҕурасем, йурлӑ ҫынсем ҫеҫ ӗҫленӗ. Выҕӑх—ҕӗрлӗхпе йе ҕурасемпе пуйан ҫынсем, ҫарпуҫлӑхсем, тӗнпуҫлӑхсем, тытӑм йӗркине туса пурӑнакансем ҫӗр ӗҫӗнҕен пӑҕах йутшӑнса тӑнӑ, ӑна ҕура ӗҫӗ тенӗ. Хӑйсем вӗсем пурӑнӑҫра кирлӗ йапаласене ытти ҫӗрсене кайса туйанма йуратнӑ, унтан ҫӗр ӗҫлекенсенҕен хӑйсене ҫителӗклӗ тырӑ, аш-пӑш тавраш илсе тӑма хӑнӑхнӑ. Авалхи кермантсӑсем каланӑ: «йуппа туйанмалли йапалана тар йухтарса туйанни намӑс» тенӗ. Перссен халӗ те шахсевен йатлӑ йӑх пур: ҫав йӑх етеммисем халӗ те ҫӗр ӗҫне ҕӑнтан етемме тивӗҫлӗ ӗҫ вырӑнне хумаҫҫӗ, ҫӗр ӗҫлекенсене вӗсем «айван такасем» теҫҫӗ, хӑйсем вӗсем пӗр ҕарӑнми вӑрҫӑшса ытти ҫӗрсене ҫеҫ туласа пурӑнма йуратаҫҫӗ. Ҫапла етемсем куҫса ҫӳреме пӑрахса пӗр вырӑнта пурӑнма хӑнӑхнӑ саманара икӗ пайа уйӑрӑлса кайаҫҫӗ: пӗр пайӗ йалан вӑрҫма хатӗр, вӑрҫӑ ӗҫне хӑнӑхнӑ, ҫапӑҫусенҕе пиҫнӗ йӳрӗкҫӗсем пулаҫҫӗ, тепӗр пайӗ йалан пӗр вырӑнта ҫӗр ӗҫлесе пурӑнакансем пулаҫҫӗ. Ҫӗр ӗҫлекенсем хӑйсем вӑрҫа ҫӳреме йуратман, ӳсекен тырра та пӑрахса кайма пултарайман, тӑшман пусмӑрласа килсен кил-ҫурт тавраппе пӑрахса тарма та пултарайман. Ҫавӑнпа вӗсем ирӗксӗрех ҫар ӗҫне хӑнӑхнӑ, ҫӗр ӗҫлемен йӳрӗкҫӗсене пӑхӑнса вӗсенҕен хӳтлӗх шыранса пурӑнмалла пулнӑ. Унтан ҫӗр ҕаваласа уйрӑм ҫемйесемпе пурӑнакан племе пӗр пӗриппе ҫыханса тӑраймасӗ, пур йӑх пурӑнӑҫӗнҕе кирлӗ ӗҫсене хӑй пӗрлешсе туса тӑраймасӗ.

Ҫапла ирӗксӗрех племе ӗҫне, унӑн йӗркине, вӑл йышӑннӑ ҫӗршыва астуса сыхласа тӑракан сослови тухса кайаӗ. Вӑл «таса», ҫӳлти, шурӑ шӑмӑлӑ тенӗ си йе сослови пулса тӑраӗ. Ун айӗнҕе хура халӑх, ӗҫ халӑхӗ, хура шӑмӑлӑ тенӗ халӑх таптанса пурӑнма тапратаӗ. Ҫавӑнпа ку ҫапла пурӑнӑҫ йӗркипе сословилӗ йе силӗ йӗрке теҫҫӗ.

Унтан тата ҫак йӗркене силӗ сӑмах ҫумне территорилӗ сӑмах хушса калаҫҫӗ. Вӑл ак мӗне пӗлтерет: етемсем ӑрусемпе пурӑннӑ ҕух-пуйанрах, хӑватлӑрах, ҫийелерех улӑхнӑ ӑрусем тупӑша пуринҕен ытла ҕурасене ӗҫлеттерсе илсе пурлӑха йышлӑлатса пурӑннӑ. Ҫапла ку вӑхӑтра пурӑнӑҫӑн тӗп никӗс пуканӗ, ӑрулӑ хуҫалӑхӑн

никĕсĕ—ҫурасем пулнă. Хвеоталисăм (сословилĕ—территорилĕ йĕркене тата пĕр сăмахпа ҫапла калаҫҫĕ) саманинҫе пурăнăҫăн, пур пурлăхăн никĕсĕ ҫĕршыв йе территори пулса тăраӳ. Ҫак саманара етем пур кирлĕ ырлăха та ҫĕршывран туйанса пурăнат. Ҫавăнпа ҫак вăхăтра етемсем вăрҫăсенҫе пĕр пĕрне тыткăна илсе ҫурасем туйанас вырăнне пуринҫен ытла ҫĕршыв таврашне ҫавăрса илсе ăна хăйсен харпăрлăхĕ тума тăрăшаҫҫĕ. Ҫавăнпа паттăр, вăрҫăра ҫийеле тухнă, хĕҫ-пăшалпа кĕрмешсе пурăнма хăнăхнă сисем ҫак вăхăтра ҫĕрсене, ҫарансене, вăрмансене, шывшура, ҫĕр айĕнҫи пурлăхсене хăйсен аллине туртса илсе хура халăха хăйсем ҫине ĕҫлеттерсе пурăнма тытăнаҫҫĕ. Ҫапла улпутсен, ҫĕр хуҫисен классĕ пулса тăраӳ. Хура халăх, ҫĕр ĕҫлесе пурăнакан етемсем ҫав сийĕн пусмăрĕ айĕнҫе пурăнмалла пулаӳ. Ҫак вăхăтра хура халăх тĕрлĕ калаҫусене уйăрăлса тăраӳ, ҫав калаҫусем уйрăм племесем, тĕрлĕ ăрусен йăхĕсем пĕр таврара пурăнса пĕр пĕринпе хутшăннипе пулса тăраҫҫĕ. Ҫӳлти си ҫак саманара пĕр ҫĕлхепе калаҫма, литературă ҫĕлхи кăларма, куҫтурă тума тăрăшаӳ. Анҫах ҫав куҫтура тĕрлĕ племесене, тĕрлĕ калаҫусене уйăрăлса, пусмăрта асаплапса пурăнакан хура халăх йышăнма пултарайман.

Ҫак йĕркепе вăтам ĕмĕрсенҫе пур халăхсем те пурăннă. Ҫак йĕркепех пайтах вăхăт тăршĕпе ҫавашсем те пурăннă. Ҫак йĕркепе ҫăвашсем Пăлхари саманинҫе, тутар саманинҫе (Хусан патшалăхĕ вăхăҫĕ), унтăн Мускав патшалăхĕн малтанхи ĕмĕрсенҫе пурăннă. Малтах асăнсаттăмăр—ҫăвашсем Атăл ҫине хĕвелтухăҫенҫен куҫса килсе ларнă. Ҫав вăхăтра хăҫхи пирĕн ҫĕршыв тавращĕнҫе хвин йăхĕсем пурăннă, вĕсем ытларах ухутапа ҫеҫ пурăннă, вĕсенҫен ками йатлă йăх ҫеҫ тырă акма пĕлнĕ, анҫах ҫав йăх лаша усраса ăна ҫĕр ĕҫлеттерме пĕлмен, ҫав меле ку йăх ҫăвашсенҫен йышăннă теҫҫĕ. Ҫăвашсем Аҫире ҫухнех кĕтӳсем усрассинҫен пуҫне тырă тавраш: урпа, вир, тулă та аккаланă. Ыраш акас йăлана ҫăвашсем славен йăхĕсенҫен йышăннă. Малтан ҫăвашсен уйрăм-уйрăм ăрăвĕсем ҫеҫенхирти шывсем тăрăх унтан вăрман хушшинҫи ирĕклĕ уҫланкăсене кĕре-кĕре ларнă. Ҫапла ăрусем ларнă вырăнсенҫе йалсем пулса кайнă, вăрмана кăларса тасатса ларнă йалсене кассем тенĕ. Малтан ҫăвашсем Шурă, Ҫулман, Тĕп Атăлсем тăрăх, Ҫарăмсан шывĕ тавращĕнҫе пурăннă пулĕ теҫҫĕ. Ҫăвашсем йышăннă ҫĕршыв хура тăпралă, мăнтăр тăпралă пулнă, ҫавăнпа вĕсем питĕ нумай тырă тăва пуҫланă,

тырра вӗсем акупуҫсемпе акаласа акнӑ. Ђӑвашсем йышӑннӑ ҫӗр-шыв питӗ килӗшӳлӗ, пурлӑх тума питӗ усӑлӑ пулнӑ: епир пӗлетпӗр-авал куђтурӑ тавраш тинӗссемпе унтан тавар ҫӳретме лайӑх йухӑм шывсем тӑрӑх ҫеҫ пулма пултарнӑ. Ђӑвашсен ҫӗршывӗ Европпӑ таврипе Аҫипе ҫыхса тӑракан Атӑл тӑрӑх вырӑн йышӑнса тӑнӑ, ҫавӑнпа та пирӗн таврара авалран ђаплӑ куђтурӑ ҫуралса аталаннӑ, вӑл Пӑлхари куђтурӗ пулнӑ. Атӑл тӑрӑх етем ӑсӗ астуса илейми вӑхӑтранпа йалан каллӗ-маллӗ тавар ҫӳренӗ, Атӑл таврашӗнђе авалранпа мул выђанӑ, вайлӑ суту-илӳ пулнӑ, хуласем пулса тӑнӑ, хуласенђе тӗрлӗ алӑстисемпе ремеслаҫӑсем тухса кайнӑ, ҫӗр халӑхӗ тырӑ, вађӑх-ђӗрлӗх, пыл тавраш сутса усӑ курма тытӑннӑ. Ҫак пурлӑх йӗркине тытса, асӑрхаса, уйласа, майласа тӑма тӗреклӗ, йӗркелӗ патшалӑх кирлӗ пулнӑ, вӑл хвеоталисӑм йевӗрлӗ йӗрке пулаҭ. Етемсем ун ђухне икӗ сийе уйрӑлса тӑраҫҫӗ: ҫӳлти си улпут классӗ: мӑрсасем, турхансем, тӑрӑнсем, тӳресем пулса тӑраҫҫӗ, айалти си ҫӗр ӗҫлесе пурӑнакан хура халӑх пулаҭ. Ҫав улпутсем кашнийӗ ҫӗр хуҫи вырӑнӗнђе хисепленсе пӗр-пӗр таврана хӑйсен аллинђе тытса тӑраҫҫӗ. Улпутсем пурте пӗр тан пулмаҫҫӗ: вӗсен хушшинђе кӗҫӗнреххисем те асӑраххисем те пулнӑ, кӗҫӗнреххисем асӑраххисене пӑхӑнса тӑнӑ, ђи ӑслисем патшасене пӑхӑнса тӑнӑ (малтан Пӑлхарире пӗр вӑхӑтрӑ темиҫе патша та хисепленнӗ). Ҫӳлти си арапсенђен ҫырулӑх йышӑнаҭ, ӑслӑлӑхпа, ӑсталӑхпа, вӗсен тӗн йӗркипе паллашаҭ. Авалран йулнӑ ђул паметниксем ҫинђе, Пӑлхари саманинђен йулнӑ паметниксем ҫинђе ђӑваш сӑмахӗсем тӗлпулаҫҫӗ, ҫавӑнпа нумайӗшӗ ӑслӑлӑхҫӑсем Пӑлхари патшалӑхӗн ђӗлхи ђӑваш ђӗлхи пулнӑ пулӗ теҫҫӗ. Ҫӳлти си ђӑвашсенђен ҫеҫ пулман, вӑл тӗрлӗ халӑхсенђен пулнӑ пулӗ: Пӑлхари хулисенђе суту-илӳ ӗҫӗпе тӗрлӗрен халӑх пурӑннӑ: арапсем, ерменсем, перссем, еврейсем, славенсем, ҫавӑнпа вӑл калаҫма ђӑваш хура халӑхӗнђен нумай уйрӑмрах калаҫнӑ пулмалла, унтан унӑн куђтурӗн тӗп никӗсӗ арапсенђен йышӑннӑ куђтурӑ пулнӑ, ҫавӑнпа вӑл ђӑваш йӑхӗшен йут куђтурӑ пулнӑ.

Ҫапах та ҫав куђтура ҫӗр ӗҫлесе пусмӑрта пурӑнакан ђӑвашсен тӗп йӑхӗ те йышӑнкаласа йулнӑ, ӑна пирӗн ђӗлхе виттӗр кӑтартса тӑраҭ: тӗрлӗ виҫесене пӗлтерекен сӑмахсем: сехет, талӑк, тӗн йӗркине пӗлтерекен сӑмахсем: тамӑк, йӗрӗх, киремет, есрейлӗ, пирӗшти, кепе, ытти нумай ҫавӑн пек сӑмахсем те арап ђӗлхинђен йышӑннӑ сӑмахсем. Ҫак саманара ђӑвашран шӑтса пулнӑ



2288

çӳлти си хвин йăхĕсене: çармăссене, вуҫексене, мăкшăсене, ирçесене те пусмăрласа пурăнса вĕсене нумай ҫăваш сăмахĕсене йышăнтарса хăварнă. Пăлхарийĕн ҫаплă куҫтурне пăҫах тĕп ҫăваш куҫтурĕ пулнă теме йурамасӗ, çапах та çав куҫтурă ҫăваш хура халăхĕн ĕнси синҫе, нумай йенҫен унăн хăваҫĕ-хавалĕпе пулнă тесен нумай йунăш пулмасӗ. Çак вăхăтра тĕп ҫăваш йăхĕ сапаланса пурăннă, тĕрлĕ таврари улпутсемпе тӳресен аллинҫе пурăннă, ытти кӳршĕлĕ йăхсемпе хутшăнса пурăннă, çак саманасенҫе çапла уйрăм пурăннипе ҫăваш тĕрлĕ калаçăвĕсем тухса кайнă пулас. Çапах та çав ҫăващ йăхĕсем пĕр патшалăхра, пĕр хуçалăхпа, пĕр пурăнăç йĕркипе, пĕр теппе, пĕр ытларах та ҫăвашран пулнă си пусмăрĕнҫе пурăннипе вĕсем пĕр халăх иккенне сисе пуçланă, вĕсене натсилĕ тăнпуç шăрши кĕре пуçланă.

**Капиталисăм, натсисем, натсилĕ патшалăхсем.**

Малалла етемсен пурăнăçĕнҫе çĕнĕ йĕрке тапранса кайаӗ. Çав çĕнĕ йĕркене суту-илӳ мулĕн, сутилӳлĕ капиталисăм самани теме йураӗ. Сутилӳлĕ капиталисăм тени ҫи малтан етемсен хуçалăх йĕрки пĕтĕмпех урăхла улăшăнса çаврăнса ӳкнине пĕлтерет. Çак самана уммĕн етемсем, хресҫенсемпе ҫурасем, пурăнăçра пур кирлĕ йапаласене хăйсем çеç туса пурăннă, вĕсен улпуҫĕсем те вĕсем тунă йапаласене çеç хайсен кăмăлне кирлĕ таран туйанса пурăннипе сапăр пулнă. Çак вăхăтра етемсем ытти çĕрсене сутса тупăш тăвас тесе йапала тума тăрăшман, пурăнăçра кирлĕ йапаласене те ытти çĕрсенҫен сутăн илес тесе шухăшламан. Кашни йал, кашни çĕр, кашни уйрăм хуçалăх хăне кирлине хăйех туса тăмалли йĕркене натуралла хуçалăх йĕрки теççĕ. Çак йĕркене пула кашни етем, кашни ăру-йăх, кашни племе, кашни халăх кащни тĕлте хăй тĕллĕн, хăне уйрăм, тĕнҫене тухмасăр, тĕнҫепе паллашмасăр пурăннă. Çак йĕркене пула етемсен пурăнăçĕ питĕ тĕксĕм пулнă: пурлăх аларан алла куçса çаврăнса аслăланайман, тĕрлĕ йенҫен тупăшлу, промăшлĕнăç таврашĕ тапранма та пултарайман; хресҫенсем пĕр йышăннă çĕр çумне çыхăнса пурăннă: çĕр хуçисен аллинҫе хисепленнипе вĕсем çĕнĕ çĕрсене куçса йе çĕнĕ йĕрке йышанса пурлăха малалла йама пултарайман, хуласенҫи ремеслаçăсем те кашни пĕр ĕç, пĕр тсех сумне çыхăнса ĕмĕрне пĕр тĕслĕ йапаласем çеç туса тăмалла пулнă; политиккă йенĕпе влаç çак саманара улпутсен аллинҫе çеç пулнă, куҫтурă та çав улпутсемшĕн çеç пулнă, пусмăрта

пурăнакан хресђенсемпе ремеслаçăсене çав куђтурăн шăрши те тиме пултарайман; çак вăхăтра хура халăха пусмăрта нумайђенрех те тĕреклĕрех те тытас тесе çӳлти сословисем куђтурă таврашне йури халăхран уйрăм çулпа, халăх унтан ирĕксĕрех йутшăнса тăмалли çулпа йама тăрăшнă, çапла нимĕçсен те вырăссен те улпуђĕсем храитсус куђтурĕпе пурăнма тăрăшнă; çапла халăх тĕттĕмре анараса пурăнтăр тенĕ шухăшранах авал пур халăхсене те кĕлтума та йут ăнламан ђĕлхепе кĕлтутарас йăла тухса кайнă: çапла католиксем латин ђĕлхипе, православнисем авалхи славен ђĕлхипе, мăсăђмансем арап ђĕлхипе кĕлтăвас йĕрке тухса кайнă. Çак хвеоталлă йе территорилĕ—сословилĕ тенĕ йĕрке пăсăк пулнă, пурăнăçа пур йенђен те ђăрмантарса тăнă, ăна малалла утма памасăр тăлласа тăнă. Çак йĕркене капиталисăм йеррипен аталанса хăватлăланса пырса çĕмĕрсе салатса пăрахнă.

Капиталисăм ђи малтан пур ĕçлесе тăвăнакан йапалана сутлăхшăн тума тăрăшаť, çав йапалана вăл тавара çавăрасшăн тăрăшаť, çавăнпа çак хуçалăх йĕркине таварлă хуçалăх йĕрки теççĕ. Тавара алăран алла çӳретекен, ăна каллĕ-маллĕ çавăрса тăракан хăват—мул, укçа, çавăнпа тата çак йĕркене укçа хуçалăхĕн йĕрки теççĕ. Суту-илӳ, пĕр пĕринпе йапала улăштарас йăла тĕп авалах пуçланса кайнă, анђах етемсем ăрулă пурăнăç йĕркипе пурăннă ђух, ђуралă хуçалăх ђух, кайарахпа хвеоталлă йĕркепе пурăннă ђух та суту-илӳ ђăнтан аслăланайман. Суту-илӳ малтан тинĕссем йе пысăк кимĕсем çӳреме йурăхлă шывсем тăрăх выртакан çĕрсенђе пуçланса кайнă. Суту-илӳ тăвакан вырăнсенђе, суту-илӳ мулĕ выђакан вырăнсенђе хăвăртах хуласем пулса тăраççĕ. Çав хуласем тĕп авалранах та пулнă, анђах ђуралăх саманинђе те хвеоталисăм саманинђе те хуласем ђăнтан аслăланма пултарайман: хула таврăш промăшлĕнăç, ремесласем йышлăланса хăватлăлансан, йалсенђе çĕр ĕçлеме пăрахнă хресђенсем пыра-пыра тулсан çеç аслăланма пултараť. Ђуралăх саманинђе сутлăх тавара пуринђен ытла ђурасем çеç тунă, çавăнпа хуласенђе ремеслаçăсен сословиĕ йе пролетариат классĕ ђăмăртанма пултарайман, хвеоталисăм саманинђе хуласем те йалсем пекех сословисен пусмăрĕ айĕнђе пурăннă: хуласем кашни хăй таврине кирлĕ йапаласене çеç туса кăларма тăрăшнă, çавăнпа ремеслаçăсем те уйрăм сословипе пурăннă: çав сословире хисепленмен етем ремесла ĕçне ĕçлеме пултарайман, пĕр ремеслаçăна çырăннă етем ĕмĕрнех çав ĕçпе çеç пурăнмалла

пулнӑ, унӑн йӑхӗ ӗмӗрне ҫав ӗҫе ҫеҫ ӗҫлесе пурӑнмалла пулнӑ, кашни ремеслаҫӑ пӗр ӗҫ ҫеҫ ӗслеме пултарнӑ: пӑта тӑвакан пӑта тума, такан авакан такан авма т. ҫ. п. Ремеслаҫӑсем хуласенҫе уйрӑм ушкӑнпа пурӑннӑ: ҫав ушкӑн мӗн ҫухлӗ тавар туса кӑларассине, ӑна мӗн хакпа сутмаллине, ӑна ӑҫта сутмаллине малтапах хисеплесе кӑтартса тӑнӑ, йаланах ҫав ушкӑн тавар хакне ӳкӗрӗсмар тесе ӑна нумай туса кӑларма ҫарнӑ. Унтан ремеслаҫӑсен классӗ те пролетариат та ҫӗр ӗҫӗнҫен хӑпса кайнӑ хресҫенсенҫен пулаҫ, анҫах хресҫенсем улпутсен аллинҫе пурӑннипе ҫӗр ӗҫне пӑрахса хулана пурӑнма куҫма хӑйсен ирӗкӗпе пултарайман.

Ҫак йӗрке суту-илӳ мулӗшӗн пӗтӗмпех йурӑхсӑр йӗрке пулнӑ: ӑна ҫи малтан, пуринҫен ытла пысӑк тупӑш кирлӗ пулнӑ, ҫав тупӑша пысӑклатас пулсан промӑшлӗнӑҫа аслӑлатмалла пулнӑ, ҫакна малта кӑтартнӑ сословилӗ йӗрке пӑҫах ҫарса тӑнӑ. Суту-илӳ капиталне тавара сутма рынок кирлӗ пулнӑ, анҫах ҫуралӑхра пекех пурӑнакан халӑх тавар тавраш илме пултарайман. Хвеоталисӑм саманинҫе кашни улпут, кашни кнеҫ хӑй тавринҫе патша пекех пулнӑ, ҫавӑнпа унҫухне кашни тӗлте хӑне уйрӑм йӗрке пулнӑ; пӗр тӗлте суту-илӳ тума пӗртех паман, тепӗр тӗлте сутилӳҫӗсене пысӑк налуксем илсе аптӑратнӑ, кнеҫпе кнеҫ йаланах вӑрҫӑ кӑларса ҫапӑҫнӑ, тавар ҫӳретмелли ҫулсенҫе вӑрӑ-хурах ҫӳренӗ, сутилӳҫӗсене йаланах ҫаратнӑ. Суту-илӳ капиталне хӑй ӗҫне ҫӑнтан тума урӑх йӗрке кирлӗ пулнӑ: ӑна канлӗ пурӑнӑҫ, патшалӑхра пӗр йӗрке, ҫипӗр тирпейлӗ тытӑм кирлӗ пулнӑ, ремесла ӗҫне, тӗрлӗ тупӑшлӑва аслӑлатма, ӑна ирӗклӗрех пурӑнма пултаракан, пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫма пултаракан ӗҫ халӑхӗ кирлӗ пулнӑ, тавара нумайрах та тупӑшлӑрах та сутса тӑма ӑна пурлӑхпа тӗреклӗрех хресҫен кирлӗ пулнӑ, тавара сутма-илме ӑна патшалӑхра пӗр натсилӗ ҫӗлхе, хура халӑх та ӑнланакан ҫӗлхе кирлӗ пулнӑ, патшалӑхри пур тӗлте те пӗр пек тытӑма тытса тӑма, тавар ҫаврӑнӑҫне майласа тӑма ҫав натсилӗ ҫӗлхепе ҫырнӑ литературӑ кирлӗ пулнӑ. Ҫапла хуласенҫе ҫуралса аталанакан пуршуаҫи мӗн ӳсӗҫем, мӗн аслӑланнӑҫем улпутсене хирӗҫ, вӗсен сословилӗ пурӑнӑҫ йӗркине хирӗҫ пыра пуҫланӑ, ҫав йӗркепе кӗрешме тапратнӑ. Ҫав вӑхӑтрах хресҫенсем те йаланах улпутсен пусмӑрне ывӑтас тесе пӑлханнӑ, хуласенҫе хуҫасен аллинҫе пурӑнакан ремеслаҫӑсем те тсехлӑ пусмӑртан хӑтӑласшӑн пӑлханнӑ.

Суту-илӳ мулӗ аслӑланнӑҫем улпутсем, кнеҫсем, патшасем пуйна

сутилӳҫӗсене парӑма кӗрсе пӗте пуҫланӑ, хӑйсем те ҫуту-илӳ тума йеррипен вӗренсе хӑнӑхса пынӑ. Ҫапла пурӑнӑҫ хуҫи укҫа, мул пулса тӑраѓ, хуҫалӑхӑн тӗп тытки капитал пулса тӑраѓ. Патшалӑх хӑй те пӗтӗмпех ҫав капитала парӑнмалла пулаѓ: расхутсене саплама ӑна укҫа кирлӗ пулаѓ, вӑл мулҫӑсене, тӗрлӗ усламҫӑсене парӑма кӗрсе пӗтет. Ҫав вӑхӑтрӑх вӑрҫӑ хатӗрӗсене хатӗрлеме, пысӑк ҫар усрамалли йапаласене туса кӑларма ӑна хӑне те промӑшлӗнӑҫ кирлӗ пулаѓ. Ҫапла патшалӑхсен хвеоталлӑ йӗрки йеррипен капиталисӑм йӗркине ҫавӑрӑнаѓ. Ҫӗнӗ йӗрке хресӡенсене улпутсен пусмӑрӗнӡен кӑларсан ҫеҫ ӡӑнтан пулса тӑраѓ: вӑл Европӑра XVIII-па XIX-мӗш ӗмӗрсенӡе пулса тӑраѓ. Хресӡенсене пур тӗлте те пусмӑртан йе ҫӗрсӗр йе сахал ҫӗр парса кӑлараҫҫӗ, мӗшӗн тесен капиталисӑма пролетариат пулма пултаракан, йӳне те пулин ӗҫлесе пурӑнма пултаракан ҫӗрсӗр хресӡен халӑхӗ кирлӗ пулнӑ. Хресӡене сахал ҫӗрпе пусмӑртан кӑларни йалхуҫалӑхӗн авалхи натураллӑ йӗркине ҫӗмӗрсе пӑрахаѓ: улпутсемпе капиталҫӑсем, йалти пуйан хресӡенсем сутлӑхшӑн ҫеҫ тырӑ-пулӑ ӳстерме, выӡӑх-ӡӗрлӗх ӗрӡетме тӑрӑшма тытӑнаҫҫӗ. Ҫапла майпа сутилӳлӗ мулшӑн тавар ҫаврӑнӑҫӗ аслӑланса кайаѓ, патшалӑхра натсилӗ рынок пулса тӑраѓ. Ҫак вӑхӑтран пуҫлаҫа пур пурӑнӑҫра кирлӗ йапала та тавара ҫавӑрӑнаѓ, етем хӑй те, унӑн вӑйӗ-сывлӑхӗ те тавар вырӑнне сутӑнма тытӑнаѓ.

Ҫак саманана натсисем ӡӑмӑртанма тапратнӑ самана теҫҫӗ. Ӡӑнахах та ҫак вӑхӑтра тӗрлӗ хвеоталсен аллинӡе пурӑнакан тӗрлӗ племесем, ӗлӗк йутшӑнса пурӑннӑ·пӗр ӑруранах та пулнӑ йӑхсем йеррипен пӗрлешме тытӑнаҫҫӗ: пӗр патшалӑх йӗрки айне кӗрсе ӳкеҫҫӗ, пусмӑр сӑнӡӑрӗсенӡен нумайӗшӗнӡен хӑтӑлаҫҫӗ, тӗрлӗ тӗле ҫӳреме, тӗрлӗ ӗҫ ӗҫлеме ирӗк илеҫҫӗ, тӗрлӗ йӑхсене пӗрлештерекен натсилӗ ӡӗлхепе, натсилӗ куӡтурӑпа паллашма тытӑнаҫҫӗ. Анӡах ҫапах та сутилӳлӗ капиталисӑм саманинӡе ӡӑмӑртаннӑ халӑха ӡӑнтанах натси теме йурамасѓ, ӑна натси пулма хатӗрленнӗ халӑх теме йураѓ. Ку саманара сословисемте пӗтӗмпех ҫухалса кайма пултараймаҫҫӗ, мӗшӗн тесен вӗсем пӗтӗмпех пӗтменни суту-илӳ капиталҫисемпе усламҫасемшӗн усӑлӑ пулнӑ: пурӑнӑҫра нимӗн тумасӑр пурӑнакан улпутсем вӗсен аллинӡе ӗмӗр тухми парӑмра тӑрса вӗсене питӗ нумай услам парса тӑнӑ. Ҫак вӑхӑтра сутилӳлӗ капитал пуринӡен ытла ҫав творенсен пусмӑрлӑ йӗрки пӑтранса тӑннипе, саланнӑ-саланман тӑннипе ӳссе аталанса пынӑ. Сутилӳҫӗсен хуш-

шине улпутсем те нумайёшё кёрсе тулма пуçланă. Ку вăхăтрахапрăк-савăт сахал пулнă, машинăсемпе ĕçлес йала тин кăна аслăланма тытăннă, пролетарнат ђăнтан пуçтарăнса çитеймен, хресђен тёрлё классене уйрăлса, авалхи улпутсен пусмăрĕ сĕрĕмĕнђен урăлса çитсе çивђёленеймен-çавăнпа çийелтен пуршуаçи, айалтан хура халăх хвеоталисăм йёркине тёпё-тымарёпе кăларса ывăтас тесе çителёклё хытă тăрăшман. Унтан укçа йёрки тухсан патшалăх хресђене тёрлё куланайпа, хырçă тавраш̆ёпё калама сук хытă аптăратнă, çав вăхăтрах сутилӳçёсемпе усламçăсем халăха питё улталаса пурăннă. Çавăнпа хура халăх йаланах питё пăлханнă: патшалăх пусмăрне те, сутилӳлё мул пусмăрне те хăй çинђен сирсе пăрахасшăн йаланах хатёрленсе тăнă. Çакна кура пуршуаçи улпутсемпе пёрлешерех пурăнма сулăннă. Хура халăх ирёке тухнă халăх вырăнёнђе хисепленсен те çак саманара куланай сослови вырăнне çеç хисепленнё. Капитал, влаç, натсилё куђтурă çак вăхăтра улпутсен классёпе пуршуаçи аллинђе çеç пулнă, пётём халăх пурлăх йенёпе те политиккă йенёпе те куђтурă йенёпе те пёрле çыхăнса тăрайман, çавăнпа ăна натси теме те йурамасӳ.

Малалла çёнё самана тапранса кайаӳ, ăна промăшлёнăçлă капиталисăм самани теççё. Етем хăй ăсăпе, хăй ăсталăхёпе çутçанталăк хăвађёсене: пăс, електрăвăйне ытти хăватсене те хай аллине илет, вёсене хăйшён ĕçлеттерсе усă курма тытăнаӳ. Акăш-макăш пысăк машинасем тухсан ĕлёк пёртех те тёлленмен аслă хапрăксемпе савăтсем пулса тăраççё, шывсем тăрăх карапсемпе пăрахутсем ђупаççё, типё çёрсенђе ђукун çулсем хывăнаççё. Пётём тёнђе пурлăх йенёпе пётёмпех пёрлешсе çыхăнса кайаӳ. Пур пурăнăçра кирлё йапалана промăшлёнăç туса кăларма тăрăшаӳ. Тёнђере каллё-маллё тавар çеç выђаӳ. Укçа, мул, капитал пётём пурăнăçа тёпё йёрёпе çавăрса илет. Промăшлёнăç аслăланнипе хуласем калама çук хăвăртăн пысăкланса пыраççё. Капитал хуласенђе пёртен пёр хуçа пулаӳ: сословисене пăђах пётерет. Капитал йалтан тавар илсе, йала тавар парса тăрса йалсене пётёмпех хуласене, хапрăк-савăтлă районсене пăхăнтарăӳ. Капиталшăн улпутсем харам-хырăмсем, сословисем ăна ирёккён ĕçлеме кансёрлекен ђăрмавсем; вăл тёрлё çёрсене хăй пусмарё айне илсе вёсене пёрлештерме тăрăшаӳ, вёсене пёр пёринпе суту-илӳ ĕçёпе çыхаӳ, вăл пёр çёртен тепёр çёре халăха ĕçе çӳреме хăнăхтараӳ. Çапла майпа уйрăм пурăнакан племесем пёр пёринпе паллашаççё. Капитала уйрăм

племесем пурӑнакан территорисенҫе ҫеҫ ӗҫ тума тӑвӑррӑн туйӑнаҭ, вӑл пӗтем халӑха пӗрлештерсе, пӗтӗм халӑх пурӑнакан ҫӗр-шывран пӗр натсилӗ патшалӑх тума тӑрӑшаҭ. Ҫав патшалӑха тытса тӑма ӑна ҫар, тытӑм йӗрки, сут йӗрки, шкул кирлӗ. Промӑшлӗнӑҫра ӗҫлеттерме ун ваҫҫи ӑстасем, техниксем, иншенерсем кирлӗ. Ҫавӑнпа капиталисӑм ӑслӑлӑхпа ӑсталӑха малалла йама тӑрӑшаҭ. Промӑшлӗнӑҫ халӑх питӗ йурлӑ пулсан, тӗттӗм пулсан-малалла кайаймасҭ, мӗшӗн тесен йурлӑ халӑх, наҫар пурӑнма вӗреннӗ халӑх промӑшленӑҫ туса кӑларна йапаласене илмесӗр пурӑнма пултараҭ. Ҫавӑнпа ҫак саманара пуршуаҫи халӑха ҫырупа пал-лаштарасшӑн, ун хушшинҫе кӑшт та пулин куҫтурӑ сарасшӑн тӑрӑшаҭ. Унтан пуршуаҫийе ҫи малтан влаҫ кирлӗ, ҫав влаҫа вӑл пӗр ирӗксӗрлесе ҫеҫ хӑй аллине илме пултараймасҭ, мӗшӗн тесен ку саманара пролетариат ҫителӗклӗ вӑйлӑ, хресҫенсем те ӗмӗрхи ыйхӑран вӑранаҫҫӗ. Пуршуаҫи хура халӑха тӗрлӗ майпа йӑпатса хӑй йенне ҫавӑраҭ, ҫав ӗҫе вӑл парламент урлӑ, шкул урлӑ, натсилӗ куҫтурӑ урлӑ тӑваҭ. Ҫапла пӗр вӑхӑта халӑхӑн пур класслӑ сийӗсем те ҫителӗклӗ ҫывӑх пӗрлешсе ҫитеҫҫӗ. Ҫав нат-силӗ пӗрлешӗвӗн пуҫӗнҫе пуршуаҫи тӑраҭ, вӑл творенсен сословилӗ йӗркине хирӗҫ пӗтӗм халӑх йаҫӗпе кӗрешет, вӑл улпутсемпе, унтан хвеоталлӑ пӳрокраҫипе пӗтӗм халӑх ирӗкӗшӗн йе темократишӗн кӗрешетӗп тесе кӑтартаҭ, унӑн йалавӗ ҫинҫе „ирӗклӗх, танлӑх, тӑванлӑх“ тенӗ виҫӗ сӑмах халӑх куҫне илӗртсе йӑмӑхтарса тӑ-раҫҫӗ. Пӗр вӑхӑта натсилӗ патшалӑхпа натсилӗ капиталисӑм аталанса ҫитиҫҫен халӑх хушшинҫе класслӑ хирӗҫлӗхсем ытлах витӗр ҫалӑрмаҫҫӗ, ҫак саманара нумайӗшӗ ӗҫ халӑхӗ, хресҫенсем, вак пуршуаслӑ классем пурӑнӑҫра пуршуаҫи хыҫҫӑн ҫеҫ пыраҫҫӗ. Ҫак йӗркене натсилӗ-темократилӗ патшалӑх йӗрки теҫҫӗ. Ҫак йӗрке кашни халӑхӑн хӑне патшалӑх пултӑр, кашни патшалӑхра пӗрех халӑх пултӑр тесе кӗрешет. Ҫак йӗркене йышӑннӑ халӑхсене, ҫак йӗркешӗн кӗрешекен халӑхсене натсисем теҫҫӗ.

Ҫапла ӗнтӗ промӑшлӗнӑҫлӑ капиталисӑм пусми ҫине улӑхса ҫитнӗ, натсилӗ-темократилӗ патшалӑх йӗркине йышӑннӑ халӑхсем ҫеҫ натсисен йыӑнӗнҫе хисепленеҫҫӗ, ҫав халӑхсем ҫеҫ натси тенӗ йата ҫӑнтан йышӑнма пултараҫҫӗ.

Ҫӑваш халӑхӗн малалла ҫӑнтан натси пулас пулсан ҫав ка-питалисӑм хуранӗнҫе пиҫӗнсе тухмалла пулнӑ: унӑн промӑшлӗнӑҫ, хӑватлӑ мул, ҫӑнтан пуршуаслӑ пурӑнӑҫ йӗрки, хӑйӗн ҫӑваш пур-

шуаçийĕ пулмалла пулнă, вари тин унăн натсилĕ куђтурă та пулнă пулĕђђĕ. Анђах ђăвашсене çак çулпа аталанса пыма тӳрĕ килмен. Ђăвашсем сутилӳлĕ капиталисăм саманине кĕнĕ-кĕменех, капиталисăм пусми çине пуснă-пусманах хăйсен ирĕкне çухатнă, малтан тутарсен, унтан вырăссен улпутсемпе пуршуаслă сисен пусмăрне кĕрсе ӳкнĕ. Çав пусмăра пула ђăвашсем авалхи хуçалăх йĕркипе çеç пăнђăхса халиђђенех пурăннă, вĕсен хушшинђе ђăнтан капитал пухăнса ђăмăртанайман, промăшлĕнăç тапранайман; çав пусмăрах пула ђăвашсен авалхи куђтурлă сийĕсем вырăсланса-тутарланса пĕтнĕ, пуршуаçи те ђăвашсен хушшинђе çуралса ӳсеймен-вăл йалан вырăсланса пынă. Çапла ђăвашсем пек кайа йулнă, куђтурсăр халăхсене нумайĕшĕ халĕ вĕсем патсисем мар, натсилĕ ыйхăран вăранма пуçланă наротносђсем çеç теççĕ. Çак сăмах пĕр йенђен тĕрĕс те пек, тепĕр йенђен тĕрĕсех те мар-ун çинђен малалла уйрăм калăпăр.

# II-МӖШ ТАТӐК.

## Пӗр халӑха тепӗр халӑх пусмӑрлас йӗрке мӗнле тухса кайни ҫинҫен.

**1. Нумай халӑхсене тытса тӑракан патшалӑхсем.**

Анҫах малта каланӑ пек пур халӑхсем те аталанса ҫитме пултарайман. Капиталисӑмӑн тымарӗ ҫи малтан кӑмрӑкпа тимӗр, унтан ытти кирлӗ ҫӗрӗ хатӗрсем; унтан капиталисӑма аталанса аслӑланма етем вӑйӗ, ҫӗр ӗҫӗнҫен хӑпнӑ, хуласенҫе ӗҫсӗр пурӑнакан етемсен вӑйӗ йышлӑ кирлӗ пулнӑ, тата капиталисӑм йарӑнса уттӑр тесен ӑна тавар ҫӳретме лайӑх шыв ҫулӗсем, етем хӑй хастарлӑхӗпе туса хывнӑ ҫукун йе ҫул ҫулӗсем кирлӗ пулнӑ. Пӳр тӗлте те ҫак пурлӑхсем, ҫӗршывӑн ҫак ырлӑхӗсем пӗр тан пулман, ҫавӑнпа та капиталисӑм аталанӑвӗ йе ҫӳтӗленӗвӗ пур ҫӗрсенҫе те пӗр пек ҫивҫӗн, пӗр пек хӑватлӑн, пӗр пек хӑвӑрттӑн пулса ҫитме пултарайман. Капиталисӑмӑн малтанхи сӑпки—Хӗвеланӑҫ Европпи—унта ҫителӗклӗ ҫӗр пурлӑхӗ пулнӑ, унта халӑхсем те ӗмӗртен пӗрлешсе пурӑнса ҫителеклӗ ҫӳлӗ кулътурӑ пусми ҫинҫе пурӑннӑ. Европпӑн хӗвелтухнӑҫ йенҫе вӗҫӗмсӗр ҫеҫенхирсем, ирӗклӗ ҫӗршыв пулнӑ, анҫах унта уйрӑм тӑрӑшса ӗҫлемесӗр тупма май ҫук пурлӑхсем ҫеҫ пытанса выртнӑ ирӗклӗ ҫеҫенхирсенҫе пурӑнакан етемсем хӑйсем те ҫав пурлӑхсене шыранасшӑн тӑрӑшман. Христианлӑ ерӑн вуншилӗк ӗмӗр тӑршӗпе Аҫире, унтан Хӗвелтухӑҫ Европпинҫе пирӗн тӑван расан монкол йӑхӗсем хуҫа пулма тӑнӑ. Вӗсем кӗтӳсем усраса тӑранса пурӑннипе, пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫса ҫӳрес йӗркепе пурӑннипе—питӗ вӑрҫӑ кӑларма, унтан сапӑҫма хастар халӑхсем пулнӑ; ҫак тӗрӗс-и, тӗрӗс мар-и—пире Европпӑ историҫӗсем ҫапла калаҫҫӗ. Йепле пулсан та епир ак мӗне куратпӑр: Европпӑра

анкăљђансем, коллантсăсем, хрантсуссем, нимĕçсем, испансем, портукалсем техникка малалла йараççĕ, промăшлĕнăç ĕçне малалла уттартараççĕ, çав вăхăтрах Хĕвелтухăçри Европпă халăхĕсем: вырăссем, вĕсене кӳршĕлĕ Австри халăхĕсем нумай ĕмĕрсем тăршĕпе Аçирен каска-каска çил-тăвăл пек пусмăрласа килекен халăхсемпе çапăçса пурăннă, çавăнпа вĕсем çар йышлă тытса хĕç-пăшал çĕклеме, вăрçă вăрçма меллĕ патшалăх йĕрки йышăнмалла пулнă. Çавăн пек патшалăх йĕрки пур таврари çĕршывсене пĕр тытăм хăй аллинђе хăй тытса тăрсан, çав тытăм хайар та тĕреклĕ те пулсан çеç пурăнăçра килĕшӳлĕ пулма пултăрнă. Çапла нумай ĕмĕрсем тăршĕпе сапаланса пурăннă вырăссем йалан тутарсемпе кĕрешес асапа пула Мускав таврашĕнђе ђăмăртанса пĕр аслă вырăс патшалăхĕ туса хураççĕ. Çак патшалăх йаланах вăрçă кăларса, кунĕн-çĕрĕн вăрçма хатĕр пулса пурăнаҋ. Пур вăрçса илнĕ çĕршыва вăл хăне пăхăнтарат, çав çĕршывсенђе пурăнакан халăхсене хăй пусмăрĕ айне пăђăркаса хураҋ. Çапла йалан вăрçăпа кĕрмешнипе вырăссем те вĕсем пăхăнтарнă халăхсем те ĕмĕртен ĕмĕре йухăнса пурăнаççĕ, пурăнăçа малалла йарайманççĕ, промăшлĕнăç таврaш тапратаймаççĕ. Çапла майпа пĕр натсилĕ патшалăхсенђен пуçне Европпăра нумай халăхлă патшалăхсем пулса тăраççĕ, çак патшалăхсенђен ђи паллă вырăн Раççейпе Австри йышăнса тăнă. Çак патшалăхсем капиталисăм урапи çине ђăнтан ларса çитейменнипе пурăнăçăн пуршуаслă-темократилĕ йĕркине те йышăнса çитеймеççĕ: Раççейпе Австрире мĕн револђутсиђђенех тытăм ытларах та улпутсемпе пӳрокрађи (ђинавниксен) аллинђеђђĕ. Çак нумай халăхлă патшалăхсенђе пĕр халăх аслă халăх, патшалăх хуçи вырăнĕнђе хисепленеђђĕ, ытти халăхсем ђуралă, пусмăрлă, патшалăха ирĕксĕр пăхăнса пурăнмалли халăхсен вырăнĕнђе хисепленеђђĕç. Раççейре çавăн пек халăх вырăнĕнђе вырăссем (великороссем) хисепленеђђĕç, пусмăрлă халăхсен вырăнĕнђе тĕрлĕ ăруран—йăхран пулнă çĕр халăх ытлашшипех хисепленеђђĕ. Патшалăхра влаç вырăс улпуђĕсемпе вырăс пӳрокрађийĕн, унтан аталанса çитеймен вырăс пуршуаçи аллинђеђђĕ, вырăс хура халăхĕ, ытларах та урăх ăрулă-йăхлă халăхсен хура халăхĕсем калама çук йывăр пусмăрлăхра пурăнађђĕç. Çапла майпа нумай халăхлă патшалăхсем пулса тăнипе пĕр халăха тепĕр халăх пусмăрлас йĕрке тухса кайаҋ. Çак йĕрке ытла та виттĕр Раççейпе Австрире палăраҋ, çак патшалăхсенђе ђи тĕнђере пăсăк самотершавлă йĕркесем пулаççĕ, çак

патшалăхсем пур халăхсене туласа, пур тĕнђери револютсилĕ хусканусене пусарса пурăнаççĕ, çавăнпа вĕсем тĕнђе шантарĕсен йатне йышăнаççĕ.

**2. Нумай халăхлă патшалăхсенђи натсисемпе классем.**

Нумай халăхлă патшалăхсенђе те пур пурлăх, пур тытăм пĕр çўлти си аллинђе çеç пулнă, хуçа вырăнĕнђе хисепленекен халăхăн ĕç халăхĕ, пĕтĕм хура халăхĕте çав си пусмăрĕн айĕнђе тапаланса çĕç пурăннă. Çавăнпа тĕплĕрен шухăшласан пусмăрлă халăхсене вырăс халăхĕ таптаса пурăннă тени тĕрĕс мар; тĕрĕсрен каласан çакăн çинђен пусмăрлă халăхсене вырăс улпуђĕсемпе вырăс капиталçисем пусмăрласа пурăннă тес пулаТ. Çав пусмăр пусмăрлă халăхсене те пĕтĕмпех пĕр пек тивмен: пусмăрлă халăхсен çўлти сийĕсем ирĕклех пурăннă, патшалăх вĕсене хăйсен тăван халăхĕсене те туласа пурăнма ирĕк парса тăнă, çапла пусмăрта пурăнакан паљексен ĕç халăхне, круçинсен хура халăхне, кăркăссен йўрĕкçĕ халăхне, ытти пур халăхсене çак халăхсен тăван улпуђĕсем, ђинавникĕсем, тăван ђĕлхепе халаçакан пуршуаçийĕх туласа пурăннă. Çапла ĕнтĕ натсилĕ пусмăрăн тĕп тымарĕ класслă пусмăр çеç пулса тăраТ. Çав класслă пусмăр пусмăрлă халăхсен ĕç халăхĕшĕн тата уйрăм йывăр пулаТ, мĕшĕн тесен пусмăрлă хурă халăхсем патшалăхра хăне уйрăм пĕтĕмпех пăхăнса тăмалла, уйрăм пăрахçă сослови вырăнĕнђе хисепленсе пурăнмалла пулнă. Çак класслă пусмăрăн уйрăм йывăрлăхне çеç епир натсилĕ пусмăр тетпĕр. Унтан çав натсилĕ пусмăр пусмăрлă халахсен ĕç халăхĕпе хура халăхне таптаннинђен пуçне пусмăрлă племесен çўлти сийĕсене те: улпуђĕсепе, пуршуаçине, интелликентсине пĕр хĕррипе пусмăрланă: вĕсене патшалăх мулĕ, тĕп халăхăн натсилĕ капиталĕ хăй çеç хуçа пуласшăн хĕсĕрленĕ, вĕсене влаç сахалтарах панă, натсилĕ куљтурă тума ђаркаланă. Çапла натсилĕ пусмăр пур хура халăха, пĕтĕм халăха тенĕ пек те пĕр йенђен пусмăрласа тăнă, çапла Раççейре револютсиђђенех ирĕке тухас тесе кĕрешекен Хвинљанђийе, Польшана вырăс патшалăхĕ пусмăрласа хăй айĕнђе тытса тăнă, пур йут йунлă—ђĕлхелĕ халăхсене те вырăс патшалăхĕ тăван ђĕлхепе вĕренме ирĕк паман, хаçатсем, кĕнекесем кăларма хушман, йут йунлă—ђĕлхелĕ халăхсене иноротсăсем тесе вĕсене патшалăхра тивĕç (право) йенђен танлă етемсен ушкăнĕ вырăнне хисеплемен. Нумай халăхлă патшалăхсенђе классемпе натсисем

йепле пӗр пӗринпе пӑтранса пӗрне пӗри пусмӑрланине Австри историйӗ питӗ лайӑх кӑтартса тӑрать. Австрире тӗп хуҫа халӑх вырӑнӗнҫе икӗ халӑх хисепленнӗ: нимӗҫсемпе маҫйарсем; ҫак халӑхсен улпуҫӗсемпе пуршуаҫиӗ патшалӑхри тытӑм тыткине хӑйсем ҫеҫ тытса тӑма тӑрӑшнӑ; ҫак халӑхсенҫен кайарах тата икӗ халӑх пулнӑ, вӗсенҫен паҫехсем нимӗҫсен пусмӑрӗнҫе, хорватсем маҫйарсен пусмӑрӗнҫе пурӑннӑ; паҫексемпе хорватсен творенсен классӗсем вӑйлӑрах пулнӑ, ҫавӑнпа вӗсем ҫӗлхе тӗлешӗнҫен, тытӑм тӗлешӗнҫен те кӑшт ахтономлӑрах пураннӑ, ҫапла ҫак халӑхсем ҫурма правалӑ халӑхсен вырӑнӗнҫе шутланнӑ; унтан Австрире тата ултӑ халӑх пурӑннӑ, ҫак халӑхсен улпутсемпе пуршуаслӑ классем пулман, ҫак халӑхсем хресҫен халӑхӗсем пулнӑ, хресҫенрен пуҫне вӗсен хуласенҫе ремеслаҫӗсемпе тӗрлӗ тӗлте сапаланса пурӑнакан ӗҫлекенсем ҫеҫ пулнӑ; ҫак халӑхсем: ҫехсем, кӑнтӑр славенӗсем, руҫҫинсем, словаксем, румынсем, ҫак халӑхсене-кӳршӗлӗ пурӑнакан маҫйарсемпе нимӗҫсем, унтан паҫексемпе хорватсем пусмӑрласа пурӑннӑ; ҫавӑнтах тата маҫйарсен ҫӗршывӗнҫе нимӗҫ сахал пулнӑ, ҫак нимӗҫсене те маҫйарсем ытти тӗттӗмрах халӑхсене пусмӑрланӑ пекех пусмӑрласа пурӑннӑ. Ҫапла пӗр халӑха тепӗр халӑх пусмӑрлас йӗрке пуринҫен ытла нумай натсилӗ патшалӑхсенҫе палӑрса тӑрать, ҫав патшалӑхсенҫе натсилӗ пусмӑрӑн айӗпӗ халӑхсен ҫӳлти сийӗсене ҫеҫ тивни те тӗрӗсрен палӑрать.

**3. Капиталисӑм халӑхпа халӑха пӑтратса пыни.**

Унтан пӗр халӑха тепӗр халӑх пусмӑрласси пирӗн саманара пуринҫен ытла капиталисӑм йӗркине пула пулса пырать. Капиталисӑмӑн ҫӗри, унӑн йун таппи хуласемпе хапрӑклӑ-савӑтлӑ таврасенҫе ҫеҫ. Капиталисӑм пур туса кӑларакан тавар ваҫҫи кирлӗ ҫӗрӗ хатӗрсене, хутмалли хатӗрсене, ӗҫлеттермелли етем вӑйне йалсенҫен туртса тарать. Ҫав вӑхӑтрах хуласем, хапрӑксем, савӑтсем хӑйсен таврашне пур йенҫен те ӗҫлекенсене, тӗрлӗ вырӑнсенҫе тӑракан ҫынсене пухса пӗр вырӑнсенҫе ҫӑмартантараҫҫӗ. Капиталисӑм пӗтӗм тӗнҫене хӑй хуҫа пулма тӑрӑшать, пур тӗнҫери халӑхсене те хутӑштарса пӗтерме тӑрӑшать. Ҫав хутӑшӑнура ҫивҫӗрех, авалран ҫутӑланӑрах панӑ халӑхсем имшеркерех халӑхсене ирӗксӗрех пурӑнӑҫра айаларах хӑварса пыраҫҫӗ, ҫавӑнпа сапаланарах пурӑнакан имшерке халӑхсен ҫыннисем ирӗксӗрех хӑйсен халӑхлӑхне ҫухатса тав-

рари паттăр халăх çумне çыпçăнма тăрăшмалла пулат, ун куҫтурне пăхăнса ăна илешсе йышăнмалла пулат. Çак йенҫен тĕнҫере Америккă питĕ паллă вырăн йышăнса тăрат: Америккăра халĕ анкăҫҫан ҫĕлхипе калаçакан американсем 64% çеç, ытти 36% çĕр тĕслĕ йут халăхсем: вĕсем çуллен хисепсĕр нумайăн Америкка пурăнма куçса пыраççĕ, пырса илешнĕçемех американланса кайаççĕ, çавăнпа Америккă патшалăхне тĕрĕсрен „халăхсен арманĕ“ теççĕ, вăл сав патшалăх тĕрлĕ халăхсене арманра авăртса кăларса çăнăх тунă пек ҫасах пĕр американ натсийĕ тунине пĕлтерет. Çак ĕçе Америккă пĕрте ирĕксĕрлесе тумаст, ăна йут халăхсен еттемисем хăйсен ирĕкĕпех хăйсемех туса пыраççĕ. Çапла тума, пер халăх тепĕр халăха куҫтурă йенĕпе пăхăнма, паттăртарах халăхăн куҫтурне йышăнма капиталисăм йĕрки ирĕксĕрлесе хушса тăрат: суту-илӳ ĕçĕпе, хапрăк ĕçĕпе пурăнса иртерес тесен, тĕрлĕ вырăнта тăрса иртерес тесен таврари тĕп халăх ҫĕлхине, унăн пурăнăç йĕркине ирĕклĕ ирĕксĕрех тăрăшса йышăнас пулат, сăпкара туйаннă ҫĕлхене пăрахса йут ҫĕлхене йышăнас пулат. Çапла ĕнтĕ капиталисăм халăхсене пĕр пĕринпе пăтратса хутăштарса пырса вăйсăртарах халăхсене паттăртарах халăхсене пăхăнтарса тăрат, вĕсене çав паттăр халăхсен куҫтурне йышăнтарса тăрат. Çак натсилĕ пусмăр теме тивĕçлĕ йапала пĕр йенҫен питĕ усăлă, мĕшĕн тесен вăл тĕнҫери уйрăм халăхсене пĕрлештерсе пĕр халăх тума пулăшат, анҫах ун çинҫен малалла уйрăм калăпăр.

**4. Нумай халăхлă патшалăхсенҫе капиталисăм халăхпа халăх хушшинҫе хирĕçлĕхсем кăларни.**

Малтах асăнсаттăмăр: тĕнҫере пусмăрта пурăнакан халăхсем хресҫен халăхĕсем. Халăх пурлăх йĕркипе, куҫтурă тĕлешĕпе мен ҫухлĕ çӳлĕ пусма çинҫе тăрат, çавăн ҫухлĕ çав халăх хуласенҫе суту-илӳ ĕçĕпе, промăшлĕнăç ĕçĕпе, тĕрлĕ йенĕпе тупăш тупăшласа, патшалăхри тĕрлĕ вырăнсенҫе тăрса пурăнăçа иртерет. Йал халăхĕ капиталисăм саманинҫе питĕ наҫар пурăнат: ăна капитал пур йенҫен те тылласа çеç пурăнат. Çавăнпа капиталисăм вăхăтĕнҫе хресҫен хула таврашĕнҫен писсе, ăна кураймасăр пурăнат. Хуласенҫе йут ăрулă-йăхлă етемсем ытларах пурăнаççĕ пулсан тĕттĕм хресҫен çав етемсен пĕтĕм халăхне те курайми пулат. Çапла халăха халăх курайман йĕрке тухса кайат: çак йăла питĕ пăсăк йăла: вăл тĕнҫери пур ĕç халăхне те пĕрлештерес ĕçе ҫарса тăрат. Çак

пӗр халӑхран тепер халӑх писсе пурӑнни питӗ сийенлӗ: вӑл улпутсемпе пуршуаҫишӗн ҫеҫ усӑлӑ, вал ӗҫ халӑхӗн класслӑ тӑнпуҫне ататтарса ҫав улпутсемпе пуршуаҫийе хирӗҫ кӗрешес вырӑнне хура халӑха хура халӑхпах йуҫӗнтерсе пурӑнтарса вӗсен пӗрлешсе пӗр ирӗклӗхшӗн кӗрешес ӗҫне путарса тӑраҫ. Пур тӗнҫере те пуршуаҫи пӗр халӑха тепӗр халӑх ҫине тӑратасшӑн тӑрӑшаҫ. Ҫапла Раҫҫейре авалран кирек мӗнле пысӑк инкек-синкек пулсан та: пысӑк пушарсем, хаҫир, ытти ҫавӑн пек инкек пулсан та, вӑрҫӑ таврап тапрансан, выҫлӑх таврап пулсан та, тавар таврашӗн хакӗ ӳссен, пурӑнӑҫ урӑх йенҫен йепле те пулин наҫарлансан та, йалан пусмӑрлӑ халӑхсене: еврейсене, паҫексене, ыттисене те айӑплаҫҫӗҫ. Унтан халӑхпа халӑх хушшинҫи хирӗҫлӗхе ытла та интелликентси, вӗреннӗ, вырӑнта тӑрса пурӑнӑҫа иртерекен си ытларах та хӗтӗртсе вӗрилентерсе тӑраҫҫӗ. Пуршуаҫи хурӑ халӑха йепле сӑлтавпа пулсан та пусмӑрласшӑн тӑрӑшни пире виттӗр паллӑ: ӑна мула ӳстерме, тупӑш тума рынок кирлӗ, ҫавӑнпа кашни халӑх пуршуаҫийӗ хӑй нусмӑрласа пурӑнакан тӑван хура халӑх ҫывӑхне йут пуршуаҫийе йарасшӑн мар тӑрӑшат. Анҫах интелликентсийе мӗн кирлӗ-ши? Интелликентси те хӑйӗн тӑван халӑх хушшинҫе капитала ӳстересшӗн, промӑшлӗнӑҫа аталантарасшӑн тӑрӑшаҫ, мӗшӗн тесен капиталисӑм вӑйлӑланнӑҫем интелликентсийӗн пурӑнӑҫӗ лайӑхланса пыраҫ, уншӑн нумай ӗҫлесе тӑранса пурӑнмалли вырӑн тупӑнаҫ. Ҫав вырӑншӑнах интелликентси пуринҫен ытла кӗрешет те: вӑл хӑй тӑван халӑх хушшинҫе тӑван ҫӗлхене пӗлекен вӗрентекенсем, ҫинавниксем пулҫҫӑр тесе кӗрешет. Ҫапла халӑхсен хушшинҫи натсилӗ хирӗҫлӗхсене ҫи малтан пуршуаҫипе интелликентси хӗрӳлентерсе вӑйлӑлатса тӑраҫҫӗ. Пусмӑрлӑ халӑхсен интелликентсийӗ тӑван ҫӗлхешӗн, тӑван шкулшӑн, патшалӑхри вырансемшӗн, натсилӗ куҫтӳрӑшӑн паттӑр, пусмӑрласа пурӑнакан халӑхсен интелликентсипе кӗрешни пӗр йенҫен усӑлӑ та: ҫав кӗрешӳ капиталисӑмӑн пусмӑрлӑ йеркине пӗтерме кӑшт та пулин пулӑшаҫ, ун ҫинҫен лерелле калӑпӑр.

**5. Нумай халӑхлӑ, улпутлӑ-пуршуаслӑ патшалӑхсенҫе натсилӗ хирӗҫлӗхсем пӗтейменни.**

Пурӑнӑҫра улпутсемпе пуршуаҫи хуҫа пулса тӑрсан халӑхпа халӑх йӳҫӗнкелесе пурӑнасси пӗтме пултарайманни тӳрех паллӑ. Епир пӗлетпӗр-капиталисӑм саманинҫе кашни етеме тепӗр етем кашкӑр вырӑнӗнҫе тӑшман

пулса тăраĭ, çак саманара пурăнăçра пур йенђен те пур тĕлте те вĕçĕмсĕр тавлашу, кĕрешӳ çеç курăнаĭ. Çак вăхăтра кашни ђун харпăрлăх ђури вырăнĕнђе пурăнаĭ, кашни ђун хăй ĕмĕрĕнђе çав харпăрлăха йепле тĕ пулин ӳстересшĕн, ăна йут çыннăнне ирĕксĕр йе улталаса та пулин туртса илсе те ӳстересшĕн çеç тăрăшаĭ. Çак саманара йепле уйрăм етемсем ăмăртмалла тавлашса пурăнаççĕ—çавăн пекех пĕр ђарăнми сипе си, класспа класс йалан кĕрешсе пурăнаççĕ. Çак кĕрешӳ капиталисăм вилсе çĕр айне кĕмесĕр пĕтме пултараймасĭ, çавăнпа халăхпа халăх хирĕçленсе пурăнасси те пĕтме пултараймасĭ, мĕшĕн тесен хура халăха туласа унăн йунне ĕмсе пурăнакан сисем йут халăхсен ĕç халăхне туламасăр пурăнма пултараймаççĕ. Унтан халăхпа халăх тавлашса çапăçса пурăнни капиталçăсемшĕн питĕ усăлă—çав тавлашу—çапăçу ĕç халăхĕн класслă тăнне аташтарса тăраĭ. Нумай халăхлă патшалăхсенђе вак халăхсем ирĕке тухасшăн кĕрешеççĕ, ахтономилĕ пурăнассишĕн кĕрешеççĕ. Анђах пур халăхсене çителĕклĕ ирĕкре пурăнма паракан патшалăхра та капиталисăм саманинђе натсилĕ пусмăра ђăнтан пĕтерме пултаракан ирĕклĕх пулма пултараймасĭ, мĕшĕн тесен çав ирĕклĕх капиталисăм йĕркине пĕтĕмпех хирĕç пыраĭ, урлă тăраĭ. Унтан тата çав ĕлĕкхи пусмăрлă халăхсем ирĕке тухсанах вĕсен çӳлти сийĕсем вĕсен хушшинђе сайра пурăнакан ытти халăхсен сийĕсене тулама тытанăççĕ, çапла пирĕн куç умĕнђех пађексем вырăс патшалăх пусмăрĕ айĕнђе асапланса пурăнађђĕç, халĕ хăйсем патшалăх турĕç те хăйсем патĕнђи вак халăхсене: еврейсене, украинсене, пелоруссене тӳсме çук хытă хĕстерсе пурăнаççĕ. Çапла капиталисăм йĕркипе пурăнсан пусмăрлă халăхсем хăйсем те ытти халăхсене пусмăрлама хăват илесшĕн тăрăшаççĕ. Натсилĕ хирĕçлĕхсем классем пĕтсен çеç пĕтме пултăраççĕ, натсилĕ пусмăр мĕн пур тымарĕ мĕнĕпе капиталисăм пусмăрĕ сирĕлсе пĕтсен çеç пĕтме пултараĭ.

**6. Империалисăм натсилĕ пусмăрăн тĕп аслă, ђи хăрушă сийенлĕ тымăрĕ.**

Малта епир натсисем ђăнтан промăшлĕнăçлă капиталисăм саманинђе çеç аталанса çитеççĕ терĕмĕр. Çак вăхăтра кашни ӳссе çитĕнсе çитнĕ халăх çеç хăне натсилĕ патшалăх тума тăрăшаĭ терĕмĕр.

Анђах пыра киле тĕнђери етемйышĕн пурăнăçĕнђе çĕнĕ самана тапранса кайаĭ—ăна хвинанслă капиталисăм самани теççĕ. Вăл ак мĕне пĕлтерет: тĕнђере техникă малалла

кайнăçем акăш-макăш пысăк савăтсемпе хапрăксем пулса тăраççĕ, промăшлĕнăç калама çук хăватлăланса кайат̆, çакна пула мул та ытла хăватлăланса кайат̆, капитал аслăланса ʒăмăртанса çитет. Унтан калама çук пысăк хапрăксемпе савăтсене ĕçлеттерсе тăма, вĕсене çителĕклĕ таран ʒĕрĕ хатĕрсем туйантарса тăма, аслă машинăсем туйантарма, вĕсенʒе тара кĕрĕшсе ĕçлекен хисепсĕр нумай ĕçхалăхне выçулă-тутăлă та пулин тăрантарса тăма, хапрăксенʒе туса кăларакан йапаласемпе пĕтĕм тĕнʒепе суту-илӳ тума ытла нумай, пысăк, вайлă мул кирлĕ пулнă. Çакна кура капиталçăсем пĕр пĕринпе пĕрлешсе ĕçлеме тапратаççĕ, çапла вĕсем тĕрлĕ аксионерлă тенĕ ушкăнсем тăваççĕ, çапла промăшлĕнăçа тытса çавăрса таракан трестсемпе çинʒикатсем пулса тăраççĕ. Çак трестсемпе çинʒикатсем, унтан пуйан панкăсем пĕрлешсе пур пурăнăçăн та хуçисем пулса тăраççĕ. Çапла промăшлĕнăç капиталĕпе панкăсен капиталĕ пĕрлешнине хвинанс (укçа, мул) капиталĕ теççĕ, çавăнпа пурăнăçра çав капитал пуç пулса тăнă саманана та хвинанслă капиталисăм самани теççĕ. Çак вăхăтра мул пурăнăçрă пĕртен пĕр хуçа пуласшăн тăрăшат̆. Хвинанслă капитал аталанса ʒăмăртанса çитиʒʒен капиталçăсем рынокра тавар сутнăилнĕ ʒух пĕр пĕринпе тавлашса тавар хакне сутассине ӳкерсе, илессине йӳнелтерсе хăйсене хăйсемех те сийен тăваʒʒĕç, хăйсем илес тупăша хăйсемех те ʒакараʒʒĕç. Хвинанс капиталĕ çак йĕркепе пĕтĕмпех пĕтерсе хурасшăн тăрăшат̆, вăл рынокра тавар сутнăилнĕ ĕçре пĕртен пĕр хуçа пулса хăй кăмăлне кирлĕ таран тупăш илме тăрăшат̆. Анʒах капиталисăм саманинʒе рынок пуриншĕн те пĕр пекех ирĕклĕ, унта кирек кам та кирек мĕнпе те суту-илӳ тума пултарат̆. Апла пулсан-хвинанс капиталĕ мĕнле майпа пĕтĕм тĕнʒери рынока, пур тĕнʒери пуйанлăха, пур тĕнʒери пурлăхăн тыткине пĕтĕмпех хăй аллине çеç çавăрса илме пултарат̆? Çак ĕçе вăл ак йепле тăват̆: епир пĕлетпĕр-тĕнʒе хуçалăхĕн ʒĕрĕ йунĕ, тĕнʒе пурлăхĕн тĕп шăнăрĕ, промăшлĕнăçăн тĕреклĕ туни нумай йапаласенʒен те пулса тăмаст̆: çав йапаласем çĕр кăмрăкĕ, тимĕр, нехтĕ, хлопок, йĕс-пăхăр, ылтăн, кауʒук; çак йапаласене пула çеç промăшлĕнăç ĕçлеме пултарат̆, çак йапаласем промăшлĕнăçшăн ʒи кирлĕ йапаласем пулса тăраççĕ, çак ʒĕрĕ хатĕрсенʒен пуçне промăшлĕнăç виçĕ сехет тăршĕпе те сывлама пултараймаст̆. Кам çак ʒĕрĕ хатĕрсене çавăрса хăй аллине илет, çав тĕнʒере хăй хуçа пулса тăрат̆. Çакна кура хвинанс капиталĕ хăйĕн мĕн çитнĕ хава-

лёпе ҫав ђӗрӗ хатӗрсене хӑне ̓пӑхӑнтарма, хӑй аллине илме тӑрӑшаҭ. Ӗлӗк промӑшлӗнӑҫлӑ капиталисӑмшӑн хӑй патшалӑхӗнђи хӑй халӑхӗн натсилӗ рынокӗ те ҫителӗклӗ пек туйӑнса тӑнӑ. Анђах хвинанс капиталӗшӗн вӑл пурӑнакан патшалӑх тӑвӑр, вӑл пӗтӗм тӗнђене хуҫа пуласшӑн, ҫавӑнпа вӑл ӗлӗк промашлӗнӑҫлӑ капитал йышӑннӑ патшалӑх ђикисене ҫӗмӗрме тытӑнаҭ. Ҫапла алӑ-урине пӗтӗм тӗнђе ҫине тӑсма хвинанс капиталне тата ҫав малта асӑннӑ ђӗрлӗхсем айакри, етем нумайранпа пусман йе йут халӑхсем пуснӑ ҫӗрсенђе: Аҫире, Ахрикра, Америккӑра—ытларах ҫав ҫӗрсенђе пытанса выртни хушаҭ. Ҫапла хвинанс капиталӗ пӗтӗм тӗнђере хӑй ҫеҫ пӗртен пӗр хуҫа пулма тӑрӑшаҭ. Унӑн хӑй ӗмӗтленнӗ ӗмӗтне ҫийеле кӑларма хӑват хисепсӗр нумай: ӑна патшалӑхсенђи тытӑмсем пӗтӗмпех пӑхӑнса тӑраҫҫӗ, ун аллинђе патшалӑхсен хӗҫ-пӑшал хӑваҭӗ, ун аллинђе акӑш-макӑш аслӑ техникӑ хӑваҭӗ: вӑл пӗтӗм тӗнђене ђукун ҫулсемпе кӑшӑлласа пӗтерет, унӑн пӗтӗм тинӗссемпе океансем тӑрӑх хуласем пек пысӑк карапсем ђупаҫҫӗ, унӑн тупписем ҫӗршер ҫухрӑмран айакран переҫҫӗ. Ҫавӑнпа тӗнђе хуҫи хвинанс капиталӗ пулса тӑраҭ: ӑна пур патшалӑхсем, пӗтӗм тӗнђе пӑхӑнса тӑраҭ, хӑйсен ӗмӗртен вӗҫӗмсӗр хӑватлӑ вӑййепе мухтанакан патшасем те ҫак капиталӑн тарҫисем ҫеҫ пулса тӑраҫҫӗ, ун аллинђе пукане таврашпек ҫеҫ выђанса пурӑнаҫҫӗ. Хвинанс капиталӗ пӗтӗм тӗнђене хӑй кӑмӑлӗ хушнипе хӑне кирлӗ таран вакласа, пайласа, ђикелесе хӑне уйрӑм-уйрӑм пӑхӑнтараҭ. Ҫапла хвинанс капиталӗн пур тӗнђене те пӑхӑнтарас йӑлине империалисӑм, империалисӑмлӑ политиккӑ теҫҫӗ. Ҫак политиккӑ питӗ усал, ирсӗр, ун таптавӗнђе пӗтӗм тӗнђери халӑхсен шӑмми-шакки шӑтӑртанса ҫӗмӗрӗлсе саланса пӗтет. Ҫак йӗрке авалхи хвеаталисӑм самани йеверлӗресех пулса тӑђӗ, анђах вӑл ҫав йӗркерен те темиҫе хут хӑрушӑ ирсӗр. Авалхи хвеоталисӑм саманине ак йепле вӑл йеверлӗ: йепле авал пӗтӗм ҫӗршыва хвеоталсем татӑкӑн хӑйсен аллинђе тытса тӑнӑ, ҫавӑн пекех хвинанс капиталӗпе паттӑр патшалӑхсем пирӗн саманара пӗтӗм тӗнђене татӑкӑн уйӑрса пӗтерсе унта хуҫа пулса пурӑнаҫҫӗ, ҫапла вӑрҫӑ уммӗн пӗтӗм тӗнђене таткаласа уйӑрса хуҫа анкӑђђан, нимӗҫ, унтан американ хвинанс капиталӗ пулса тӑрађђӗ; унтан йепле авал улпутсемпе ҫӗр хуҫисен хушшинђе аслӑраххисем те кӗҫӗнреххисем те пӗрне пӗри пӑхӑнса пурӑнађђӗҫ, ҫавӑн пек хвинанс капиталӗн пусмине ҫитнӗ патшалӑхсен хушшинђе аслисем, кӗҫӗнтерехҳисем, ђи кӗҫӗннисем пурђђӗ: кӗҫӗнрех

патшалӑхсем аслӑраххисене, аслӑраххисем ҫп аслисене пӑхӑнса пурӑнаҫҫӗҫ. Анҫах ҫак йӗрке авалхи хвеоталисӑм йӗркинҫен те ирсӗр те хӑрушӑ та: авал та ҫӳлти сисем ӗҫ халӑх ӗнси ҫинҫе пурӑннӑ, анҫах капиталисӑм саманинҫе ҫав пусмӑр тата усала тухса кайнӑ: ҫав пусмӑр мӗҫйуншар етемлӗ халӑхсене пӗтӗмӗшпех ҫуралӑха хӑварнӑ, меҫйуншар ӗҫлекен етемсен массисене туланӑ, ҫатта-ҫарамаса хӑварнӑ, нумай мӗҫйуншар етемсене вӑрҫа хӑваласа унта вӗсене етем ҫӗлхи калама пултарайман асаппа асаплантарса пӗтернӗ: вӗсене амантнӑ, вӗлернӗ, йурӑхсӑра кӑларнӑ. Ҫакна тӗрӗслес тесен иртнӗ вӑрҫа ҫеҫ асӑнас пулаҭ, ӑна епир империалисӑм вӑрҫи тетпӗр: ҫав вӑрҫа анкӑҫҫанпа нимӗҫ хвинанс капиталӗсем кӑларнӑ, вӗсем ӑна тӗнҫере иккӗшӗнҫен пӗри ҫи аслӑ хуҫа пуласшӑн кӑларна, ытти пур вӑрҫакан патшалӑхсем: вырӑссем, тӗрӗксем, итаҫиансем ыттисем те ҫав капиталсен йуррине йурласа ҫеҫ тӗнҫене шӑнӑҫми йун тӑкнӑ.

**7. Тӗнҫене пусмӑрлӑ колоҫисене уйӑрни.**

Хвинанс капиталӗн, паттӑр патшалӑхсен пусмӑрлӑхӗнҫе пурӑнакан ҫӗршывсене колоҫисем теҫҫӗ, ҫав ҫӗрсенҫе пурӑнакан халӑхсене колоҫиаллӑ халӑхсем теҫҫӗ, ҫапла уйӑрм ҫӗршывсене пусмӑрласа пурӑнас йӗркене колоҫиаллӑ политиккӑ теҫҫӗ. Капиталпа паттӑр халӑхсем йепле тӗнҫене ҫавӑрса илнине пӗлес тесен малалли таплитса асӑрха ҫав 35-мӗш стр. таплитсӑ вӑрҫӑ пӗтсен 1920-мӗш ҫулта пулса тӑнӑ йӗркене кӑтартаҭ.

Ҫав таплитса ҫӑнтан ӑнланас тесен тӗп ҫӗршыв пысӑкӗшӗсене колоҫи пысӑкӗшӗсемпе танлаштарса пӑхас пулаҭ, унтан тӗп ҫӗршывра ытти халӑхсене пусмӑрласа пурӑнакан етемсен йышлӑлӑхне колоҫисенҫе пурӑнакан етемсен ҫун хисепӗпе танлаштарса пӑхас пулаҭ. Ҫапла танлаштарсан епир куратпӑр: кашни уйӑрм пӗр акӑҫҫана тӑхӑр колоҫиаллӑ ҫура тивет, кашни акӑҫҫан пӗҫҫен пуҫӗпе тӑхӑр йут етемме пӑхӑнтарса пурӑнаҭ, акӑҫҫансем пурӑнакан ҫӗршыв вӗсем ирӗксӗр пусмӑрласа пурӑнакан колоҫисенҫен ҫӗр вӑтӑр хут кӗҫӗн, Хрантсийӗн тӗп ҫӗршывӗ унӑн колоҫисенҫен ҫирӗм тӑватӑ хут кӗҫӗн. Халӗ епир пурӑннӑ вӑхӑтра тӗнҫен виҫҫӗрен икӗ пайне капиталпа паттӑр халӑхсем пусмӑрласа туласа пурӑнаҫҫӗ, 1914-мӗш ҫулҫен пӗтӗм тӗнҫере пурӑнакан етемйышӗн ҫурри ытла паттӑр халӑхсен колоҫиаллӑ пусмӑрлӑхӗнҫе асапланса пурӑннӑ, вӑрҫӑ иртсен ҫав пусмӑра етемйышӗн пилӗк пайӗнҫен тӑ-

| | Колођисем. | | Тĕп ҫĕршыв. | |
|---|---|---|---|---|
| | Тăваткăл километр (ҫухрăма йахăн). | Етем ђунĕ хисепĕ. | Тăваткăл километр (ҫухрăма йахăн). | Етем ђунĕ хисепĕ. |
| Анкли . . . . . . . | 39,9 мĕђйун. | 429,6 мĕђйун. | 0,3 | 46,6 |
| Хрантси . . . . . . | 12,5 „ | 54,8 „ | 3,9 | 38,8 |
| Йаппун . . . . . . | 0,3 „ | 22,0 „ | 0,4 | 55,9 |
| Штатлă Америккă | 0,3 „ | 11,8 „ | 9,4 | 106,1 |
| Итали . . . . . . . | 1,6 „ | 1,6 „ | 0,3 | 37,5 |
| Пеђки . . . . . . . | 2,4 „ | 17,5 „ | 0,03 | 7,7 |
| Колланђи . . . . . | 2,1 „ | 49,5 „ | 0,034 | 7,0 |
| Испани . . . . . . . | 0,3 „ | 0,7 „ | 0,5 | 20,9 |
| Портукали . . . . . | 2,1 „ | 8,8 „ | 0,092 | 6,5 |
| Тани . . . . . . . . | 0,9 „ | 0,14 „ | 0,5 | 3,3 |

ваттăшĕ ытлашшипех кĕрсе ўкнĕ, ҫапла тĕнђере пилĕк сыпран тăваттăшĕ колођиаллă ђурасем пулса тăраҫҫĕ. Ак мĕшĕн епир малта империалисăм натсилĕ пусмăрăп ђи усал тĕсĕ, ђи хăрушă ирсĕр хурми терĕмĕр.

**8. Капиталисăм кайа йулнă ҫĕрсене хăй хыҫҫăн мĕнле мелпе сĕтĕрсе пыни.**

Тĕнђере промăшлĕнăҫ, техниккă, кулђтурă тĕлешĕнђен кайа йулнă ҫĕрсене ҫав йенђенех малта пыракан ҫĕрсемпе таплаштарсан епир ђи малтан ак мĕн сăнатпăр: Европпăра нумай тĕлте пĕр тăваткăл сухрăм ҫинђе 200 ҫынна йахăн пурăнат, кайа йулнă ҫĕрсенђе, калăпăр Ахриккă Конкинђе, Перҫире, пирĕн Ҫипирте, тăваткăл ҫухрăма пĕр, пилĕк, нумай вунă ҫын тивет.

Çапла ăçта промăшлĕнăç—унта халăх питĕш, тăварланса пурăнаŷ. Çапла та пĕр йенђен тĕрĕсрен етем йышлăланни, вăл хунаса пыни кулђтура, пурлăха, пĕтĕм пурăнăçа лайăхлатма пулăшакан йапала теççĕ. Çапла колођиаллă çĕрсенђе халăх питĕ сайра пурăннине тата епир ак мĕнтен куратпăр: Европпăра халĕ нумай хуласенђе пĕр хулара мĕђйун çын ытла пурăнаŷ, çавăн пек хуласем пайтах, вĕсенђен кĕçĕнтерех хуласен хисепĕ те çук, çав вăхăтрах колођиаллă çĕрсенђе аслă хуласем çукпа пĕрех, пулсан та вĕсем питĕ сахал. Çапла колођиаллă çĕрсенђе хуласем кĕçĕнни, унтан вĕсем сахалли пире нумай йапала çинђен систерет: ђи малтан вăл унти халăхсем промăшлĕнăçлă пурăнăçăн йĕркипе ђăнтан кĕрсе çитейменнине пĕлтерет. Илер тата ђукун çулсене: промăшлĕнăçпа паттăр çĕрсенђе йалпа йал хушшинђе те ђукун çул пур, çав пăспа çивђĕ çӳрекен йапалана пула унта пурăнăç вĕресе тăраŷ, колођиаллă çĕрсенђе ђукун çул тавраш питех те сахал, çавăнпа унта пурăнăç пăђах пăнђăхса тăраŷ. Йулашкинђен илер тата империалисăмпа хăватлăланнă çĕрсемпе колођиаллă çĕрсен таварçаврăнăçне: мĕнле тавар ăçтан сутăнса—илĕнсе тăннине асăрхаса илсен, епир куратпăр: капиталисăмăн çӳлĕрех пусми çинђе тăракан çĕрсем çулран çул темиçе хут ытларах колођиаллă çĕрсемпе суту-илӳ туса тупăш тăваççĕ, çакă хвинанс капиталĕ пирĕн саманара ђи малтан колођисен йенне туртăнса тăннине кăтартаŷ, вăл тупăш нумайрах илес кăмăлпа пуринђен ытла çав колођисем çине хăй алă-урине хума тăрăшнине кăтартаŷ, тепĕр йенђен вăл колођисем те çулран çул ытларах пурăнăç йĕркипе, пурлăх йĕркипе капиталисăмпа çыхăнса тăма тытăннине кăтартаŷ. Тĕнђере суту-илӳ, патшалăхпа патшалăх хушшинђе пулакан суту-илӳ çĕр çул авал çĕрте вунă хут сахал пулнă; çакă пирĕн йулашки ĕмĕрте тĕнђе хуçалăхĕ пĕтĕм тĕнђене, пур пĕтĕмпех кайа йулнă çĕрсене те хăй çулĕ çине тăратма тăрăшнине кăтартаŷ. Çапла хвинанс капиталĕ саманинђе çав капитăл пĕтĕм тĕнђене хăйĕн серетипе серетелесе илет. Мĕшĕн çав капитал колођиаллă çĕрсенђе ĕçлесшĕн çес пуринђен ытла тăрăшаŷ-ши? Нумай каламасăр та паллă: ăна вăл нумайрах тупăш илесшĕн çеç тума тăрăшаŷ: кайа йулнă çĕрсенђе çĕр пурлăхĕсем сайа кайса выртаççĕ, нимĕн хак та тăмаççĕ, етем те унта тĕттĕм, йурлă, вăл пĕтĕмпех çук хакпа сутăнса капиталшăн ĕçлесе пурăнма пултараŷ, ак мĕшĕн капитал çав çĕрсене туртăнса тăраŷ. Çапла империалисăм хăйĕн уссишĕн, хăне нумайрах тупăш илесшĕн колођиаллă

çĕрсемпе хытăран хытăрах çыхăнса тăма тăрăшаť, çав çĕрсене ирĕксĕрех хăй хыççăн сĕтĕрсе пыраť, унти халăхсене ытларах та усал йенĕпе пулсан та капиталисăмлă пурăнăç йĕркине кӳртсе пыраť. Унтан пурăнăçра хуçа мул пулса тăрсан, çав мул ăçта сулăнаť, ăçта ђикĕнет, çавăнтах ĕçлекенсемпе хура халăхăн пуçне ђикмелле пулаť. Ăçта промăшлĕнăç хăвăртăн аслăланса пыраť, унтă ĕç нумай та хаклăрах та пулаť, ăçта промăшлĕнăç тапранайман йе тапрансан тă пĕр пекех пăнђăхса тăраť-унта халăх ĕççĕр аптăраť, пушă çын нумайипе ĕç нимĕн хака тăмасť; çавăн пек çĕрсенђе халăх ĕрђенĕçем унăн пурăнăçĕ йурăхсăрланса пыраť, çапла йĕркепе йулашкинђен халăхăн выçă çĕç вилсе пĕтме йулаť. Çавăнпа кайа йулнă çĕрсенђен халăх тарма тăрăшат, урăх çĕнĕ çĕре, ăçта ĕç пур çĕре куçма тытăнаť. Анђах капиталисăм çĕнĕрен йышăннă çĕрсене кайа йулнă халăхсем çителĕклĕ нумайăн куçма пултараймаççĕ: капитала хура ĕç ĕçлекенсем кирлĕ мар, вĕсене вăл колоњисенђе ахаљ те тупаť, ăна ăстасем: мастерсем, иншенерсем, хапрăк ĕçлеме ĕмĕртен пиçсе хăнăхнă етемсем кирлĕ, çавăнпа капитал хăй хыççăн ђи малтан тĕп çĕршыври ĕçлекенсенех сĕтĕрсе куçартараť. Çавăнпа та Америккă, Ахриккă, Австраљи ирĕк çĕрĕсене йулашки ĕмĕрсенђе капиталисăмăн çӳлĕ пусми синђе тăракан халăхсемех: акăљђансем, нимĕçсем, хрантсуссем, ытти европейтсăсем те куçса тулаççĕ, ђăтлăхра пурăнакан китайсем, интуссем, ытти те çавăн пек халăхсем çав çĕрсене куçма пултараймаççĕ: вĕсем тĕттĕм, пусмăрта пурăнаççĕ, вĕсем çĕнĕ çĕрсене куçни капиталшăн та усăлă йапала мар: мĕн ђухлĕ вĕсем тăвăрланса йурлă пурăнаççĕ, çавăн ђухлĕ вĕсем капиталшăн йӳнерех ĕçлесе пурăнаççĕ. Унтан çав колоњиаллă халăхсем капитал усă куракан çĕрсене куçни капиталшăн хăрушăрах та: çав халăхсем хăçан та хăçан ĕмĕрхи ыйхăран вăранса ђуралăхран ирĕке тухасшăн кĕрешме тытăнма пултараççĕ. Çапла империалисăм хăй пĕтĕм тĕнђене сарăлаť, ăна серетелет, карталаť, çавăрса илет, хăне авалран пăхăннă, унан йĕркине йышăннă халăхсен етемисене куçарса пĕтĕм тĕнђене хăй аллине илет; тĕттĕм, кайа йулнă, колоњиаллă халăхсене тĕнђене тухмалла мар хӳмепе ирĕксĕр хупласа тăрса вĕсене пăнђăхса пурăнмалли пурăнăçа хăвараť. Çав çĕрсенђи тĕттĕм те йурлă та халăхсене вăл çук хакпа ĕçлеттерсе пур вĕсĕм тунă йапалана хăне кирлĕ çĕре хăваласа тăраť, хăй çав çĕрсене кирлĕ-кирлĕмар йапалана хăй кăмăлĕ кирлĕ таран

пысăк хакпа сутса вăл хисепсĕр нумай тупăш курса тараŤ. Çа тупăша вăл кайа йулнă çĕрсене туласа, çаратса, вĕсен пĕтĕм сĕткенне ĕмсе-ђăмласа унта пурăнакан халăхсене выђăх пурăнăçне хăварса тăраŤ.

Çапла капитăлисăм пĕр йенђен колоңиаллă халăхсене хăй йĕркипе паллаштараŤ, вĕсене тĕнђе хуçалăхĕн çаврăнăçĕ çумне çыпăçтараŤ, тепĕр йенђен вĕсене калама çук асаплă ылхавлă пурăнăça хăвараŤ. Çак тĕлешĕнђен пирĕн вĕрентекен Хритрих Енкеђс вырăссен капиталçисем синђен çапла çырса хăварнă: «вырăс пусмăрĕ йепле ирсĕр, славенсен йалипе йепле таса мар пулсан та çапах вăл Хура тинĕспе Каçпи тинĕсĕшĕн, Вăтам Аçишĕн, тутарсемпе пушкăртсемшĕн вĕсене çутăлантаракан (сивилисатсилекен, малалла уттаракан) йапала» тенĕ. Çакна Енкеђс капиталисăм кайа йулнă çĕрсемпе унти халăхсене хăйен çĕнĕ йĕркипе йышăнтарнине асăнса каланă. Капиталисăм тĕттĕм халăхсене хăй хыççăн сĕтĕрсе çĕнĕ пурăнăç йĕркине çывăхартни тĕрĕс. Анђах тепĕр йенђен пусмăрлă халăхсем çав ырлăхшăн пĕрте хисеплесе пĕтерме çук пысăк хак тӳлени те тĕрĕс. Çав хака тӳлесшĕн пусмăрлă халăхсем пĕтĕм пуçне хураççĕ, пĕтĕм ђунне—ђĕрине параççĕ, хайсен етемлĕхне манса мул ђурисем пулса пурăнăça иртереççĕ.

**9. Колоңисенђи пурлăхпа тытăм йĕрки.**

Империалисăмăн колоңисен вырăнĕнђе хисепленекен çĕрсенђе пур тĕлте те хуçалăх йĕрки йурăхсăр авалхи йĕрке. Çавăн пек çĕрсенђе нумай тĕлте пирĕн саманара халăхсем кĕтӳсем кĕтсе, нĕр тĕлтен тепĕр тĕле куçса çӳресе, ăрулă йĕркепе нурăнса пурăнăça иртереççĕ (арапсем, кăркăссем, туркменсем); ытти тĕлсенђе халăхсем хресђен пурăнăçĕпе, авалхи ăрулă опшинă йĕркипе пурăнаççĕ (Китай, Инђи); унтан тата хăш тĕлте çав халăхсем сословилĕ йĕркепе, уйрăм пĕр пĕринђен йе аслă йе кĕçĕн сисене уйăрălса пурăнаççĕ. Çапла колоңиалла халăхсем Европпă халăхĕсем сакăр çĕр çул авал пурăннă пурăнăçпах пурăнаççĕ. Çав халăхсенђен нумайĕшĕ пĕр вырăнта пурăнма та хăнăхса çитеймен, çавăнпа вĕсем хвеоталисăм йеркине те ђăнтан йышăнса çитеймен. Хăш тĕлте çав çĕрсенђе пурăнăçра пур йенђен те хуçа пулса тĕн пуçлăхĕсем, йумçă—асамçă таврашсем çеç пурăнаççĕ (Ђипет, Монкођи), хăш тĕлте пур халăха та çар сыннисем пăхăнтарса пусмăрласа пурăнаççĕ (Перçи), хăш тĕлте халăх çĕр ĕçне хăнăхса çитĕннĕ пулсан та ун ĕнси çинђе ытла йышлă

улпутсен классĕ лараĭ. Пирĕн вăхăтрах хађхи перссен хушшинђе 22% ытлашшипех пĕр тĕлтен тепĕр тĕле куçса çӳрекен йӳрĕкçĕсем. Çак йенђен ытла та тĕлĕнмелле Монкођи патшалăхĕ: 1918-мĕш çулта унта пур халăха та çырса тухнă, çав перепĕç кăтартнă тă-рăх Монкођире халăх çаплă сисене уйрăлса тăраĭ: творенсем 5,6%, ирĕклĕ етемсем 26,2%, ђуралăхра, тĕрĕсрехпе каласан кре-пăслă пусмăрта пурăнакансем 16,6%, монахсем 44,6%, нийепле сословийе те çыпçăнман етемсем 7%; çапла Монкођире пайанхи кун та вунсакăр ђунран пĕри улпут, творен, ултă çынтан пĕри пĕ-тĕмпех ђăнтан ĕтем шутĕнђе те хисепленмесĕр пусмăрта пурă-наĭ, икĕ çынран пĕри пекех ĕç халăхне улталаса пурăнакан та-ра-хырăм монах; çак йенђен пирĕнпе кӳршĕлĕ пекех пурăнакан калмăксен халăх хушшинђе çуррине йахăн еђӳн йатлă кĕлĕ ăсти-сем: вĕсем ĕçлемесĕр ыттисем ĕçленнине çисе-тăранса лайăх пу-рăнаççĕ. Хавелтухăçри халăхсен хушшинђе нумай тĕлте çĕршыв та хура хресђен халăхăн аллинђе мар, вăл ăна утланса пурăна-кан експлоататтăрлă сисен харпăрлăхĕ вырăнĕнђе хисепленет; ун-тан тата ислам тĕнне йышăннă халăхсен хушшинђе пурăнăçра пур йенђен те тĕн тытăмĕ çеç хуçа пулса ĭăраĭ. Çапла ĕнтĕ ко-лођиаллă çĕрсенђе пурлăх йеркипе тытăм йĕрки пăђах авалхи, йурăхсăр, ђуралăхлă йĕркесем. Çав халăхсен хушшинђе пурăнăç та пĕтĕмпех урăх сăнлă: вĕсем ытла та пусăрăнса тĕксĕм пурă-нăçпа пурăнаççĕ.

Çак тĕнђерен пытанса, хăйсемпе хăйсем хупăнса—питĕрĕнсе пурăнакан халăхсене империалисăм ерешменкартипе тĕрлĕ йен-ђен карталанă пек карталаса—сăнђăрласа çавăрса илет. Йепле майпа тăваĭ ăна вăл? Ђи малтан вăл влаçа хăй аллине илме йе пĕтĕмпех хăне пăхăнтарма тăраĭ. Çакна вăл тĕрлĕ майпа тăваĭ: йе тӳрĕх пĕр иккĕленмесĕр çарпа йут çĕре пырса кĕрсе унăн хĕç-пăшала ăста тытма пĕлмен халăхне хăй йенђен пĕр тумлам йун тăкмасăр пăхăнтараĭ та çав çĕршыва хăйĕн харпăрлăхĕ, çапăçса туйаннă сопствĕнăç теме пуçлаĭ, çапла империалисăм колођисене ђасах хăйех хайласа кăларнă сăлтавпа, хăйех йăк пыраса тупнă сăлтавпа вăрçă кăларса, хĕç-пăшала ĕçе кӳртсе пăхăнтарса ça-вăрса илет, çапла майпа капиталисăм колођисене ђасах мĕскĕн айăп-сăр халăхсен йунне тăкса йун пусмăрĕпе—сăнђăрĕпе пусмăрласа илет; хăш ђухне империалисăм йут çĕрсене туртса илнĕ ђух хĕç-пăшал çĕклесе аппаланма кирлĕ те пулмасĭ: малтан вăл темиçе

çул тăршĕпе хăй сăнанă çĕре пур йенђен те лăскаť, хыраť, çаратаť, унти халăха вăйсăрлатаť, унтан етемсем çак йĕркене хăнăхкаласан сасартăк çав çĕре хăйĕн çĕр шывĕ теме пуçлаť те унти халăха хăй çĕршывĕн патшалăх йĕркипе пурăнтарма тытăнтараť, çак йĕркепе йут çĕре йышăнассинне аңекçи йĕрки теççĕ. Çак икĕ йеркепе: вăрçă сăлтавĕпе йе мул серетипе, хĕç-пăшал вăйĕпе йе укçа йенђĕкĕн хăвађĕпе çеç империалисăм хăйĕн хађхи колоңисене туйанса йулнă. Хăш ђухне тата империалисăм хăне пăхăнтармалли çĕре тулаш йенђен пăхсан ирĕкре хăварнă пекех хăвараť: унăн патшалăх йĕркине тимест, улăштармаст, йатне çухатмасť, çапах çав çĕрте пĕтĕмпех хăй хуçа пулса тăраť: çакна вăл кађђех мула пула çеç тăваť. Капитал хăй сăнанă çĕре пур йенђен те ђикĕнет, кĕрет, сарăлаť, тымар йараť, патшасене, патшалăх тытăмне, хыснана ĕмĕр татăлми парăма кўртсе пĕтерет те вара хăй хуçа пулса тăраť, çапла майпа револютси уммĕн пирĕн куç умĕнђех вырăс капиталĕ Перçи патшалăхĕн хуçи пулса тăђĕ, çапла майпах револютсиђђенех Раççейе Хвивапа Пухара пăхăнса пурăнађђĕç. Империалисăм колоңийе хăне пăхăнтарас тесен нимĕнле усал, ирсĕр йапалана та тиркемест: акăђђансем хисепсĕр нумай йышлă интуссене хăйсене пăхăнтарсан, Инђи çĕрĕн калама çук нумай пуйанлăхĕсене çавăрса илсен 1857-мĕш çулта халăх хытă пăлхана пуçланă; çак пăлхава пĕтерес тесе, ăна ўлмĕрен те ĕмĕрне çĕкленмелле мар тăвас тесе акăђђансем пĕтĕм çĕршыв, пĕр муклашка, пĕр курăк пĕрђи, пĕр тумлам шыв таранђен Притаңи империйĕн харпăрлăхĕ теме пуçлаççĕ. Çапла пур çĕр ĕçлесе пурăнакан интуссем те акăђђансен тарçисем, ђурисем, Притаңирен çĕршыва тара илсе çеç ĕçлесе тăранса пурăнма пултаракансем пулса тăраççĕ. Малта епир Европăра авалхи хвеоталисăм таварлă—укçалă хуçалăх саманинђен малтан хăватлăланиçем хăватлăланнине кăтартсаттăмăр (çав хăватлăлану пуршуаçи аталанса çитсе хвеоталисăм йĕркипе кĕрешме тапратиђђен пулнă). Йепле хвеоталисăм вăйлăланнăçем хресђен пурăнăçĕ нађарланса пынă, çавăн пекех империалисăм çĕнĕ колоңисенђе тĕреклĕленнĕçем хресђен пурăнăçĕ, хура халăх пурăнăçĕ йурăхсăра тухса пыраť (пролетариат çинђен асăнмастăпăр, мĕшĕн тесен империалисăм колоңийе илешме çес тытăннă саманара çав çĕрте пролетариат ђăнтан йышлă пулма пултарайман). Мĕшĕн çапла-ши ку? Вăл ак мĕшĕн: капиталисăма промăшлĕнăçа хăватлăлатма тĕрлĕ ђĕрĕ хатĕрсем кирлĕ, кăлăпăр

ӑна пӗрҫӗ тырӑ хаклӑ йышшӗ ҫӑнӑхсем тума кирлӗ, ҫӑм—сукна тавраш тума кирлӗ; унтан капиталисӑмӑн тӗнҫене йӗритавра ҫиппленӗ ҫукун ҫулсем пур, унӑн тинӗссем урлӑ нумай тавар сӗтӗрекен пӑрахутсем, карапсем, паршасем пур. Вӑл кирек мӗнле тавара та сисмен вӑхӑтрах тӗнҫен пӗр хӗрринҫен тепӗр хӗррине леҫме пултарать. Ҫавӑнпа вӑл пӗр ҫӗнӗ ҫӗршыва йышӑнсан унтан суту-илӳре витекен кирек мӗнле те тавара ытти ҫӗрсене леҫсе сутса тупӑш тума тытӑнать. Кайа йулнӑ колоҫисенҫе халӑх йалта ҫӗр ӗҫӗпе пурӑнать, ҫавӑнпа капитал ҫав ҫӗрсенҫен ҫи малтан ҫӗр ӗҫӗпе, сат-пахҫа ӗҫӗпе, выҫӑх-ҫӗрлӗх усрас ӗҫпе тунӑ ҫӗрӗ хатӗрсене ытти ҫӗрсене хӑвалама тытӑнать.

Ҫавӑнпа капиталисӑм урине пуссанах колоҫисенҫе тырӑ—пулӑ хаклӑланать, йӳнеҫекен тавар пулса тӑрать. Тырӑ—пулӑ хаклӑланнӑҫем ҫӗр ӗҫӗ тупӑшлӑ ӗҫе ҫавӑрӑнат, анҫах ӑҫта тупӑш шӑрши сисӗнет—унта мул ҫикӗнетех. Епир пӗлетпӗр, мулҫӑсем, капиталҫӑсем хӑйсем вӗсем нимӗн те ӗҫлемеҫҫӗ, вӗсем ӗҫ халӑхне, хура халӑха хӑйсен ҫине ӗҫлеттерсе пурӑнма тапратаҫҫӗ. Анҫах ҫав ӗҫе вӗсем ҫӗре хӑйсен аллине пуҫтарса илсен ҫеҫ тума пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа империалисӑм пырса илешсенех колоҫисенҫе ҫӗршыва йӳн хакпа ӗмӗрлӗхе капиталҫӑсем илсе пӗтереҫҫӗ те пӗтӗм хура халӑха хӑйсене тара кӗрӗшсе ҫеҫ ӗҫлесе тӑранса пурӑнма хӑвараҫҫӗ. Капиталҫӑсем анасене, ҫарансене, вӑрмансене, шывсене, хӑш ҫухне пӗтӗм йалсене те темиҫе йаллӑ таврасене те малтан илӗртсе ӗмӗр пӗтми парӑма кӳртсе кайран тавар илнӗ пек ӗмӗре хӑйсене ваҫҫи илнӗ туса хураҫҫӗ. Ҫавӑнпа ӑҫта империалисӑм урипе пусать-унта ҫи малтан хресҫен пурӑнӑҫӗ йурӑхсӑр йывӑра йулать. Колоҫисенҫе пур тӗлте те хресҫенсем йӗ патраксем йе тара илсе ҫӗр ӗҫлесе пурӑнакансем, хӑй ҫӗрӗ—шывӗпе ирӗкӗн ӗҫлесе пурӑнакан хресҫен тавраш колоҫисенҫе пӗртех те йулмасть. Империалисӑм колоҫиаллӑ халӑхсене тулама тапратсанах ҫи малтан ҫав халӑхсен ӗнсисем ҫинҫе ларакан сисем пуҫне ҫӗклеҫҫӗ: вӗсем йутран килекен хӑватлӑ мула парӑнса ҫав мулшӑн ӗҫлесе пурӑнма тытӑнаҫҫӗ—ҫав ӗҫ вӗсен хура халӑха, йунпа тӑван ӗҫ халӑхне тулани пулать. Европейтсӑсем колоҫисенҫе ҫуралӑхра пурӑнакан халӑхсен хушшинҫе хайсем питех курӑнмаҫҫӗ те: вӗсем пысӑк парҫисемпе ҫеҫ тавар тавраш кӳрсе-леҫсе сутилӳлеҫҫӗ, ҫав тавара халӑх хушшинҫе улталаса ваккӑн пухакансем йе сутакансем колоҫиаллӑ халӑх сутилӳҫисемех пулаҫҫӗ. Ҫак сутилӳҫӗсем, вак усламҫӑсем им-

периалисăм пуснă çĕрсенҫе халăха ытла та ирсĕр туласа пурăнаççĕ—мĕшĕн тесен вĕсем нимĕнрен хăрами пуласçĕ: хура халăх вĕсене хирĕç хумханма тытăнас пулсан—ăна ҫасах империалистсен колоҥисенҫе пурăнакан çарĕ пĕр хĕрхенмесĕр пĕтĕм çĕршыва йуна пĕвесе çав хумхану таврашне пусарать. Çапла колоҥиаллă халăхсене пĕр вăхăтрах икĕ усал аптăратса тăрать, вĕсен ҫĕрĕ йунне икĕ ирсĕр сĕлек ĕмсе пурăнат: пĕри йутран килнé империалистсен мулĕ, тепри çав капиталăн çунаҫĕ айĕнҫе аталанакан вырăнти мул, вырăсла каласан туçемлă капитал, вырăнти сутилӳçĕсемпе усламçăсен капиталĕ. Çав империалисăм тарçисен вырăнĕнҫе хисепленекен сутилӳçĕсемпе капиталçăсем колоҥисенҫе капиталисăмлă патшалăхринҫен те йышлă: çапла Инҫире 1911-мĕш ç. пулнă перепĕç кăтартнипе вак сутилӳçĕсемпе усламçăсем кашни çĕр çын пуçне 4—5 пулнă. Çав вак сутилӳçĕсемпе усламçăсем интуссемех пулнă, вĕсем акăҫҫан капиталçисене интус халăхне çаратма пулăшакан интуссемех пулнă. Унтан колоҥисенҫе хура халăх пурăнăçĕ питĕ йурăхсăр наҫарри тата ак хăш йенҫен курăнат: колоҥисенҫе ĕç халăхĕпе хура халăх хушшинҫе çурри нимĕн ĕçсĕр те, нимĕн пурлăхсăр та пурăнат: çапла 1907-мĕш çулта пулнă перепĕç кăтартнипе Екипетра вуннĕр çынтан пиллĕкĕшĕ ĕçсĕр аптăраса пурăнаççĕ, унтан вунă çынтан виççĕшĕ йут çын патĕнҫе тарçăра пурăнаççĕ. Çапла çурри ытла халăх пурлăхсăр та ĕçсĕр те пурăнни ăна империалистсем туланинҫен, çаратнинҫен килет; халăхăн виççĕмĕш пайĕ тарçăра кĕрĕшсе пурăнни те çав усал империалисăма пула çеç пулнă. Çапла колоҥиаллă халăхсем пурлăх телешĕнҫен пĕтĕмпех йухăнса пăнҫăхса пурăнаççĕ, çавăнпа вĕсем хаҫĕ наҫар ĕрҫеççĕ, выçлăх мĕн пулсан, йе кĕтмен çĕртен урăх мĕнле те пулин инкек-синкек пырса перĕнсен вĕсем хисепсĕр нумайăн пĕтеççĕ, çавăнпа колоҥиаллă халăхсем нумайĕшĕ çулран çул ҫакса пыраççĕ. Çапла колоҥисенҫе халăх питĕ те наҫар пурăнни тата капиталисăм унăн авалхи пурлăх йĕркине сасартăках çĕмĕрнинҫен, ăна салатнинҫен, урăх йенне çавăрса пăрахнинҫен килет: çапла Инҫире питĕ тăвăрланса пурăнакан халăх ĕлĕк инҫико йатлă тырă нумай акса унпа тăранса пурăннă, анҫах акăҫҫансене çав инҫико кирлĕ пулман, вĕсене манухвактурă таварĕ туса кăларма пуринҫен ытла хлопок нумай кирлĕ пулнă, халĕ те вăл промăшлĕнăçшăн питĕ кирлĕ йапала. Акăҫҫансем интуссене инҫико акма пăрахса хлопок ӳстерме вĕрентеççĕ, хлопок-

шăн хаклă тӳлесе çав ĕçе интуссене хăнăхтараççĕ, çапла Инђире инђико сахаллăн акăнма тытăнаť: вăл халăха çиме те çитмест, вăл нађартарах пулнă çулсенђе халăх йаланах выçăхса асапланаť, вăл пулман çулсенђе халăх мĕђйуншарăн вилсе пĕтет. Хаклă, таварлă хлопок акнипе те интус пуйаймасť: ђейе акăђђан капиталçисем вăл хлопокпа йе ытти таварпа тунă укçана куланайсем, хырçăсем урлă кайалла хырса илеççĕ. Çапла ĕнтĕ империалисăм хай колоњине лăскат, хырат, çаратаť. Çавăнпа та империалистсене вăрăх хурахсемпе танлаштарни, вĕсене распойниксенђен те усал тени пĕртех ытлашши сăмах мар.

**10. Колоњисенђи пусмăрлă халăхсем ĕмĕрхи ыйхăран йеррипен вăранса пыни.**

Çапах та çав колоњисене туласа çаратса пурăнакан капиталисăмăн ырлăхĕ те пур: вăл колоњисенђи халăхсене силлет, тыллаť, сутилĕве, промăшлĕнăç ĕçне кăшт та пуђин илештерет, çавăнпа та вăл çав халăхсене вĕсен ĕмĕрхи ыйхинђен йеррипен вăратса пыраť. Пусмăрлă халăхсенĕ ыйхăран вăраннăçем натсилĕ тăн кĕрсе пыраť, вĕсем натсилĕ ирĕклĕхшĕн империалисăмпа кĕрешме тапратаççĕ.

Капиталисăм колоњийе ђи малтан пырса пуснă саманара империалистсене хирĕç пĕтĕм килоњиаллă халăх тăраť: ăна хирĕç халăхĕ те тата та ытларах унăн çӳлти сийĕсем тăраççĕ. Колоњисенђи улпутсем, унти племесен пуçлăхĕсем, унти тытăм йĕркине, çар ĕçне, тĕн йĕркине тытса тăракан классем мĕшĕн капиталçăсене хирĕç тăни тӳрех паллă: Европпăри йе Америккăри капитал пырињђен хăйсен çĕршывĕ çинђе вĕсем хăйсемех хуçа пулнă, хăйсен хура халăхсене ђуралăхра тытса хăйсен кăмăлĕ тăранињђен туласа пурăннă. Капиталисăм пурăнăçра хăй çеç пĕртен пĕр хуçа пулма тăрăшаť, колоњисенђи авалхи йĕркене вăл тĕпĕ-йĕрĕпе çĕмĕрет, колоњисенђи çӳлти сисене пурăнăçран пĕр хĕррине пăрса хăварма тытăнаť. Çавăнпа малтан çак сисем илешсе шăнăçса çитеймен империалистсемпе хĕрӳлĕ кĕрешеççĕ: çапла Инђире катарах пурăнакан йăхсем хађињђенех акăђђансене пăхăнмасăр кĕрешсе пурăнаççĕ, çаплах пирĕн Капкас халăхĕсем те вырăс империалисђĕсене пăхăнасшăн мар пулса утмăл çул ытла çапăçнă; пирĕн куç умĕнђе те çак сăлтавпа тапраннă кĕрешӳ нумай çĕрсенђе пулђĕ: 1900-мĕш çулта Китайра поксерсем йе пысăк ђăмăрсем тенĕ ушкăнсен пăлханăвĕ пулђĕ, çав пăлхану империалистсене

Китай ҫӗрӗнҫен хӑвалас тенӗ сӑлтавпа тапраннӑ, 1910-мӗш ҫулта пирӗнпе кӳршӗлӗ пурӑнакан патшалӑха Корейӑ ҫӗрне Йапунҫи пусмӑрласа ҫавӑрса илсе хӑй ҫӗршывӗ ҫумне сыпӑҫтарҫӗ—йапунсемпе вӗсем ҫак ирсӗр ӗҫе татса туса хуриҫҫен нумай ҫулсем тӑршӗпе Корейӑн ҫӳлти сийӗсем: творенсемпе мулҫӑсем ҫителӗклӗ хӗрӳлӗ кӗрешрӗҫ. Халӗ те ҫакӑн пек кӗрешӳ пӗтӗм империалисӑм айне пулнӑ тӗнҫере пырат: ҫапла пирӗн вӑхӑтра Аҫипе Ахрикӑри арапсен йӑхӗсем, Монкоҫипе Ахканистан халӑхӗсем империалистсене парӑнмасӑр кӗрешеҫҫӗ. Ҫак кӗрешӗвӗн пуҫӗнҫе ҫӳлти сисем тӑраҫҫӗ; вӗсем авалхи ӑрулӑ—хвеоталлӑ йӗркене пӑсас мар тесе кӗрешеҫҫӗ, мӗшӗн тесен ҫав йӗрке вӗсене усӑлӑ, вӑл вӗсене влаҫ та пуйанлӑх та туйантарса тӑрат. Анҫах хура халӑх пулӑшмасан вӗсем хӑйсемех кӗрешме пултараймаҫҫӗ: ҫавӑнна вӗсем хура халӑха тӗрлӗ сӑлтав хайласа тупса ҫав кӗрешӗве сыхлантарса йараҫҫӗ: ҫапла ислам тӗнне йышӑннӑ ҫӗршывсенҫи халӑхсем европейтсӑсене хирӗҫ вӗсем тӗне ан пусмӑрлаҫҫӑр тенӗ сӑлтавпа ҫасҫасах пӑлхану тапратаҫҫӗ, Китайра тӗттӗм хура халӑх европейтсӑсене «шурӑ шуйтансем» тесе ҫӗнет, ҫавӑнпа та ҫав усал шуйтан шутӗнҫе тӑракан етемсемпе вӑрҫма—ҫапӑҫма вӑл йалан хатӗр.

Анҫах колоҥисенҫи ҫӳлти сисем ҫапла кӗрешни нумайҫҫен пымасӗ, капиталисӑм илешсе ҫитнӗҫем, вырӑнаҫса тӗреклӗленнӗҫем колоҥисенҫи ҫӳлти сисем ӑна пӑхӑнаҫҫӗ, пыра киле пӗтӗмпех капитал тарҫи вырӑнне кӗрсе ӳкеҫҫӗ. Ҫейе капитал мул туйантарса, парнесемпе-куҫенеҫсемпе илӗртсе, хура халӑха кӑмӑл ҫитнӗ таран тулама хӗҫ-пӑшалпа пулӑшса вӗсене пӗтӗмпех хӑй аллине ҫавӑрса илет. Ҫапла колоҥисенҫе пӗр вӑхӑта айакран куҫса килнӗ капиталисӑмпа авалхи вырӑнти хвеоталисӑм йӗрки килӗшӳлӗрех пурӑнаҫҫӗ: ҫапла пирӗн саманара Европӑ империалисҫӗсем Тӗрӗк патшалӑхӗнҫе йурӑхсӑр авалхи султанат йӗркине хӑйсен аллинҫе тытса ӑна тӗрӗк хура халӑхӗ сирпӗтесрен сыхласа тӑраҫҫӗҫ, Китайра пӗтӗм тӗнҫерен ҫӑхансем виле ҫине пухӑннӑ пек пуҫтарӑннӑ империалистсем Мантшури ҫинасҫийӗ тенӗ патшасен йӑхне сыхласа пулӑшса тӑраҫҫӗҫ (ҫав йӑха 1911-мӗш ҫулта револҫутси ҫапса ӳкерҫӗ), ҫаплах вырӑс патшалӑхӗ револҫутсиҫҫенех Перҫи, Пухара, Хива патшисемпе вӗсен тарҫисене пулӑшу парса тӑраҫҫӗ, ҫаплах халӗ те акӑлҫансем Инҫире ратшӑсен ҫӳлти сийӗсене, Перҫире муштехитсем тенӗ ҫӳлти сисене пулӑшу парса тӑраҫҫӗ, Ки-

тайра тĕнҫе империалисҫĕсем уйрăм таврари кĕпĕрнатăрсемпе ҫарпуҫлăхĕсене пулăшу парса тăрса вĕсене вунă—вунпилĕк ҫултанпа пĕр пĕринпе ҫапăҫтараҫҫĕ, ҫапла майпа вĕсем Китай хура халăхĕ пĕрлешсе ăна пусмăрланă империалисăмпа кĕрешес ĕҫе ҫăрмантарса тăраҫҫĕ. Ҫапла колоҫисенҫе капиталисăм унти пурăнăҫăн авалхи йурăхсăр йĕркине сыхласа упраса тăма та тăрăшаҫ.

Анҫах капиталисăмăн ҫапла тăрăшни сайа кайса ҫеҫ пыраҫ: вăл ирĕклĕ-ирĕксĕрех, хăй сиснĕ—сисменех пусмăрлă халăхсене ĕмĕрхи ыйхăран вăратаҫ. Ҫак ĕҫ йепле пулса пыраҫ? Колоҫисенҫи ҫӳлти сисем Европпă куҫтурĕпе паллашнăҫем паллашса пыраҫҫĕ, пурăнăҫ сăнне куҫтурлă пурăнăҫ йевĕрлĕ ҫавăрма тăрăшаҫҫĕ, аҫисене Европпă шкулĕсенҫе вĕрентме тытăнаҫҫĕ. Колоҫире вăйлăран вăйлă выҫаса—вĕресе тăракан мула ун ĕҫне туса тăма, тавар ҫаврăнăҫне майласа тăма выръанти халăх ҫĕлхине вĕреннĕ ҫынсем кирлĕ. Ҫапла колоҫисенҫе малтан ҫӳхе те пуҫин вĕреннĕ ҫынсен сийĕ, туҫемлă интелликентси сийĕ шăтса ӳсе сарăлма тапратаҫ. Колоҫисенҫе капиталисăм ҫулран ҫула хресҫенсен авалхи натураллă хуҫалăх йĕркине ишсе пыраҫ, хресҫен хуҫалăхне тĕнҫери тавар ҫаврăнăҫĕпе йертсе пыма тăрăшаҫ, ҫапла хресҫене тĕнҫепе паллаштарнăҫем вăл ыйхăран вăратса пыраҫ.

Колоҫисенҫе йеррипен промăшлĕнăҫ та тапранаҫ: туҫемлă капитал ҫăмăртанма тапранаҫ, хапрăк-савăтсем сайра та пуҫин тăвăнаҫҫĕ, панкă таврашсем уҫăлаҫҫĕ. Ҫапла колоҫисенҫе ҫĕнĕ туҫемлă пурщуаҫи ҫуралса аталанаҫ. Пуршуаҫипе пĕрле пĕр вăхăтрах ĕҫ халăхĕ, ҫăнтан пролетариат та пуҫтарăнса тĕвĕленме тытăнаҫ. Унтан колоҫиаллă халăхсен хушшинҫе капитал халăхсене тыллăнăҫем ҫĕрсĕр хресҫенсем, тĕрлĕ патраксем, хура ĕҫ еҫлекенсем, ĕҫсĕр аптăранă етемсем, пурлăхран татăлнă етемсем, пур йенҫен те ҫаралнă ҫуксем, кĕскен каласан ҫумпен—пролетариат хисепсĕр нумайланса пыраҫ. Ҫакна пурне те пула колоҫисенҫе револютсилĕ сулăнăҫсем, йухăмсем, хусканусем тапранаҫҫĕ. Пирĕн саманара ҫав колоҫисенҫи револютсилĕ йухăмсен пуҫĕнҫе туҫемлă пуршуаҫипе интелликентси тăраҫ, ҫавăнпа унта револютси халĕ пуршуаслă—темократилĕ йĕркепе пыраҫ.

Колоҫисенҫи револютсилĕ хусканусен йалавĕ ҫинҫи тĕп лосункĕ колоҫисене ҫи малтан империалистсен пусмăрĕнҫен хăтарассине пĕлтерет. Ҫак ĕҫре ĕҫхалăхĕ те хура хресҫен халăхĕ те йун тăкса сителĕклĕ хĕрӳлĕ кĕрешет, ҫавăнпа пирĕн саманара колоҫисенҫе

револютсилĕ кĕрешĕве пĕтĕм халăх хăй хулпуççи çинҫе çĕклесе тăрать, кĕскен каласан çав кĕрешў натсилĕ сăнпа пырать теме йурать. Пысăк колоҥисенҫе пирĕн вăхăтра пусмăрлă халăхсем ирĕке тухасшăн питĕ тарăхса тармакланса кĕрешеççĕ. «Хăвалăр çитĕйутран килнĕ вăрă-хурахсене, пĕтерĕр халăх йунне ĕмекен ĕмĕтсĕр çăткăн сĕлексене, хăтăлăр шурă ўтлĕ пăвансен мăйкăçĕнҫен, çĕршывра тĕсĕ ан йултăр халăха пусмăрласа мăшкăлласа пурăнакан империалистсен—иностраантсăсен»—çакăн пек ҫун хавалĕпе каланакан ҫĕнўсем халĕ пĕтĕм тĕнҫене ҫĕтретсе тăраççĕ, капиталисăм ури айĕнҫи çĕре хумхатаççĕ, ун айĕнҫен никĕс пуканĕсене сирпĕтсе ывăтма хатĕрленсе тăраççĕ. Çак колоҥисенҫи хăватлă револютсилĕ кĕрешĕве капиталисăм çăмăллăн пусарма та тен пултарĕҫҫĕ, анҫах пирĕн телейе май капиталисăмлă патшалăхсем пĕр пĕринпе те тулашса çеç пурăнаççĕ, вăхăҫĕпе вĕсем пĕр нĕрне сийен тăвас тесе хăш колоҥисенҫи револютсилĕ йухăмсене те пулăшу паркалаççĕ. Çапла пирĕн саманара Тĕрĕк çĕрĕнҫе Аптул-Хамит йатлă усал султана нимĕç империалисҫĕсем пулăшса тăраҫҫĕç, çав вăхăтрах хрантсуссем «çамрăк тĕрĕксем» тенĕ револютсионерсен ушкăнне пулăшу парса тăраҫҫĕç, 1908-мĕш çулта султана вырăнтан кăларса ывăтса тĕрĕк патшалăхĕнҫе влаçа сав çамрăк тĕрĕксен парҫийĕ хăй аллине илҫĕ, малтан çак парҫийе авалхи йăлапа хрантсус империалисҫĕсем пулăшу парса тăҫĕç, анҫах виç-тăват çул та иртмерĕ—1912-мĕш çулта Палкан вăрçи тапранҫĕ, çак вăрçăра вырăс империалисăмĕн кăмăлне курса хрантсуссем Палкан вак халăхсене пулăшу пара пуçларĕç, вара çамрăк тĕрĕксене нимĕçсем пулăша пуçларĕç, çавăнпа 1914-мĕш çулхи вăрçăра çамрăк тĕрĕксем нимĕçсемпе пĕрлешсе Антанта хирĕç çапăçрĕç. Çапла нимĕçсемпе хрантсуссен империалисҫĕсем халĕ те Тĕрĕк çĕрĕнҫе влаçа тĕреклĕ тытса тăракан тĕрĕк натсионалисҫĕсене малтан пĕрисем, унтан теприсем пулăшса тăҫĕç. Перçире 1907-мĕш çулта револютси çĕнтериҫҫен перссен патшине шаха вырăс патши хусахĕсем пулăшса тăраҫҫĕç, перссен револютсионерсене акăлҫан империалисҫĕсем пулăшса тăраҫҫĕç, вырăссемпе акăлҫансем Перçи патшалăхне пусмăрласа пурăнма çурмашар уйăрса килĕшсен-перссен револютсионерсемпе темокраҫĕсене нимĕçсем пулăша пуçларĕç, çавăнпа та вĕсем 1914-мĕш çулта вăрçăра нимĕçсен майлă çапăçрĕç. Пирĕн саманара Китайра Йапунипе Америккă империалисҫĕсем хытă тавлашаççĕ: пĕрне пĕри сийен тăвасшăн вĕ-

сем ҫасах Китайри революцилӗ йухӑмсене те пулӑшаҫҫе. Ҫапла империалистсен колоциаллӑ политиккине асӑрхасан капиталисӑм хӑне ваҫҫи хӑйех вилӗм шӑтӑкӗ алтат тени пӑҫах тӗрӗс.

Колоцисенҫе революцилӗ хускану-тапранусем сарӑлса, тарӑнланса, тӗреклӗленсе пырасси пуринҫен ытла туҫемлӑ капиталисӑм аталаннинҫен килет. Пысӑк колоцисенҫе ҫав вырӑнти капиталисӑм халӗ пайтах вӑйлӑ, вӑл ытла та хӑвӑртӑн иртнӗ вӑрҫӑра хӑватлӑланҫӗ: тӗнҫе империалисҫӗсем пӗр пӗринпе ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра колоцисем ирӗклӗрех пурӑнҫӗҫ, империалистсем пулӑшнипех вӑрҫӑ хатӗрне хатӗрлекен промӑшлӗнӑҫ тапратрӗҫ, вӑрҫа пула колоцисем кӑларакан ҫӗрӗ таварсем: тырӑ-пулӑ, аш-пӑш тавраш, ытти йапаласем те хакра пулҫӗҫ, йӳнеҫӗлӗ пулҫӗҫ, ҫавӑнпа колоцисенҫе пӑртак капитал пуҫтарӑнҫӗ, ҫав вӑхӑтрах метропалисем тенӗ империалистсен тӗп ҫӗршывӗсем вӑрҫӑра ытла та йухӑнҫӗҫ, унти капитал та нумай вӑйсӑрланҫӗ, ҫапла статистиккӑ кӑтартнипе Инҫире вӑрҫӑ вӑхӗтӗнҫе промӑшлӗнӑҫ 4—5 хут ытлашшипех аслӑланнӑ, интуссен панкӑсенҫе выртакан мул та ҫавӑн ҫухлех нумайланнӑ. Халӑх капиталисӑм урапи ҫине шаларах кӗрсе ларнӑҫем ун хушшинҫе ӗҫхалӑхӗ ҫӑмӑртанаӗ, интелликентси йышлӑланаӗ, хресҫен халӑхӗ те ҫутӑланса пыраӗ (халӗ Инҫире хресҫенсен хушшинҫе ҫыру пӗлекен арҫынсем 12%, хӗрарӑмсем 5,6). Ҫавӑнпа та ҫакӑн ҫухлӗ ӳсее ҫитӗннӗ халӑх йут халӑх пусмӑрӗнҫен хӑтӑласшӑн, хӑне ирӗклӗ патшалӑх тӑвасшӑн кӗрешмемесӗр пултараймасӗ. Малтан Инҫире акӑлҫансен пусмӑрӗнҫен кӑтӑласшӑн кӗрешмелли ушкӑна ҫамрӑксем тапратса йанӑ, ӑна Инҫире Ҫамрӑксен Ушкӑнӗ тенӗ, унтан ҫав акӑлҫансен пусмӑрӗнҫен хӑтӑлас сӑлтавпах Натсилӗ Конкресс тенӗ пӗрлешӳ пулса тӑраӗ, ҫак пӗрлешӳ интуссем натсилӗ ирӗклӗхшӗн кӗрешнӗ ӗҫӗн пуҫӗнҫе тӑраӗ. 1906-мӗш ҫулта интуссем Инҫире хӑй ирӗкӗпе пурӑнакан патшалӑх йӗрки пултӑр тесе йышӑнаҫҫӗ, ҫак ӗҫе ҫийеле кӑларас тесе вӗсем акӑлҫансемпе суту-илӳ тумалла мар тесе, акӑлҫан таварӗсене пойкотламалла тесе йышӑнаҫҫӗ, ҫав ӗҫе вӗсем пуринҫен ытла вырӑнти вак промӑшлӗнӑҫа, тӗрлӗ ремесласене хута йарас тесе тума йышӑнаҫҫӗ. Ҫак самана интуссен хушшинҫе ҫӳрекен пӗр прокламатсире акӑлҫансем ҫинҫен ҫапла ҫырнӑ: «ҫак вӑрӑсем, ҫак пирӗн промӑшлӗнӑҫа пӑнҫӑхтаракансем, пирӗн ҫӗршыври сутилӗве пӗтерекенсем, хӑйсен ҫӗрӗнҫен килекен тавара пула пирӗн тӗртӳҫӗсене, тимӗрҫӗсене, пӑхӑрҫӑсене пӗтерекенсем,

пирӗн ҫӗрте пур тӗлте те лавкасем уҫса пирӗн пур пуйанлӑха ҫаратса тӑрса пирӗн тӑван халӑха ҫийекенсем—пирӗн ҫӗрте тытӑм йӗркине тытса тӑма тивӗҫлӗ ҫынсем-и вара вӗсем? Кам пире есрейлӗ—выҫлӑх хырӑмне пӗтӗрсе ҭикрӗ, кам пире ҭир—ҭӗрпе асапланса пурӑнма хӑварҭӗ—вӗсем пирӗн хуҫасен вырӑнӗнҭе хисепленме пултарайаҫҫӗ-и вара?» Вӑрҫӑ уммӗн акӑљҭансем Инҭийе ирӗклӗх паманнине кура унта тӗрлӗ вӑртӑн ушкӑнсем хӗҫ-пӑшал ҫӗклесе кӗрешме тапратаҫҫӗ: пӑлхавсем тапратаҫҫӗ, хысна вырӑнӗсене ҫаратаҫҫӗ, ҭинавниксене вӗлере-вӗлере пӑрахаҫҫӗ. Вӑрҫӑра акӑљҭан империалисҭӗсен ырлӑхӗпе интуссем—салтаксем мӗљйун ҫын ытла асап курса таврӑнаҫҫӗ, ҫав салтаксем пурте револҭутси йенне ҫавӑрӑнаҫҫӗ. Пирӗн вӑхӑтра Инҭире револҭутси йухӑмӗ тинӗс пек хумханса тӑраӗ, ҫав йухӑм акӑљҭансен империалисӑмлӑ пусмӑрне ыран—пайан путарас пек хумханаӗ.

Тӗрӗк ҫӗрӗнҭе вӑрҫӑ пӗтсен ҫамрӑк тӗрӗксен вырӑнне влаҫа Халӑх Хӑваҭӗ йатлӑ парҭи илет, ҫав парҭи тӗрӗк халӑхне пӗтӗмпех империалисӑм пусмӑрӗнҭен ирӗке кӑларас тесе тӑрӑшаӗ, темиҫе йулашки ҫулсем тӑршӗпе вӑрҫӑ вӑрҫаӗ, хрантсуссемпе, акӑљҭансемпе тавлашаӗ—ҫапӑҫаӗ, йулашкинҭен хӑй ӗҫне ҫиейле кӑлараӗ: халӗ Тӗрӗк патшалӑхӗ никама та пӑхӑнмасӑр пурӑнакан патшалӑх, унта халӑх тытӑмӗ йе урӑхла каласан респупликкӑ йӗрки, вӑл канашлӑ Раҫҫейпе килӗштерсе пурӑнаӗ.

Ытти пысӑк колоҥисенҭе Китайпа Перҫире халӑхсем пӗр ҭарӑнми ирӗке тухасшӑн кӗрешеҫҫӗ, анҭах унта империалисӑмлӑ пусмӑр питӗ тӗреклипе, халӑх питӗ ґӗттӗммипе, вак ӗҫпе сапаланса пурӑннипе, унтан Перҫире хвеоталисӑмлӑ йӗрке питӗ тӗреклипе ҫав кӗрешӳ питӗ йывӑррӑн ҫийеле тухса пыраӗ. Ҫапах сывӑх ҫулсенҭех епир Китай, Перҫи, ытти тӗнҭери хисепсӗр нуҫмай колоҥисем хӑйсен мӑйӗнҭен пусмӑр сӑнҭӑрне татса ывӑтнине курӑпӑр.

Ҫапла ӗнтӗ халӑха халӑх пусмӑрласа пурӑнас йӗрке, халӑха халӑх туласа пурӑнас йӑла мула пула ҫеҫ тухса кайнӑ, пирӗн саманара вӑл капиталисӑма пула ҫеҫ пурӑнаҫра вырӑн йышӑнса тӑраӗ. Пирӗн ӗмӗрте халӑха халӑх пӑҭӑркаса пурӑнасси пӗтӗмпех империалисӑм тенӗ капиталҫӑсен политиккинҭен ҫеҫ тухса тӑраӗ. Ҫавӑнпа натсилӗ пусмӑртан хӑтӑлас тийекен халӑхсем ҭи малтан капиталисӑм йӗркине пӗтерес тесе кӗрешмелле. Ҫак ӗҫе тума капиталисӑм хӑйех пулӑш парса тӑраӗ: вӑл колоҥиаллӑ халӑхсене

тĕнҫепе паллаштарса вĕсене ҫивҫĕлентерет, вĕсене ҫаратса ĕмĕрхи ыйхăран уҫаĭ, хура халăхпа ĕҫхалăхне ҫăмăртанса классăн тăнпуҫ туйанма пулăшаĭ. Анҫах йепле пулсан та колоҫиаллă пусмăрлă халăхсем хăйсен вăйĕпе ҫеҫ ирĕклĕк курма пултараймĕҫ: ҫав ирĕклĕхе вĕсем тĕнҫере капиталисăмах ҫуратса ўстернĕ калама ҫук пысăк, ҫивҫĕ, вăйлă хăват пулăшнипе ҫеҫ курĕҫ-ҫав хăват тĕнҫере пĕрлешсе кĕрешекен пролетариат пулса тăраĭ. Ҫав революҫутсилĕ пролетариат натсилĕ пусмăра йепле майпа пĕтерме тăрăшни ҫинҫен сăмах малалла пулĕ.

2288

# III-МĔШ ТАТĂК.

## Пусмăрлă халăхсене пусмăртан ђăнтан ирĕке пролетариат çеç кăларма пултарни çинђен.

**1. „Пĕтĕм тĕнђери пролетарисем, пĕрлешĕр!“**

Çак аваlран револютсисен йалавĕсем çинђе йăлтăртатса тăракан сăмахсем нумай йапалана пĕлтереççĕ. Вĕсем пире каласçĕ: ĕçлесе, тар йухтарса, йун тумлатса хăне хăйех тăрантарса пурăнакан етемсем: хура ўтлĕ-и вĕсем йе шурă ўтлĕ-и, тинĕспе океанăн ку йенђе пурăнаççĕ-и йе леш йенђе пурăнаççĕ-и, хрисђиан, ислам, путисăм тĕнĕпе йе киремет таврашне çеç пуççапса пурăнаççĕ-и йе пĕр тĕнсĕрех те лайăх пурăнса иртереççĕ-и вĕсем, пĕри пĕр патшалăхра, тепри тепĕр патшалăхра пурăнаççĕ-и вĕсем — çапах вĕсем пĕр тăванран та çывăх тăвансем, вĕсем ĕмĕрне пĕр çулпа пыракан ĕмĕр уйăрăлми йулташсем. Тăвана тăван та пĕри муллă, тепри çук пулсан хĕсĕрлемесĕр пултараймасŤ, харпăрлăхпа мул аçа-ывăла пĕр пĕрне тăшмана кăларса уйăрса йараççĕ. Анђах пролетарийĕн харпăрлăх çук, унăн пĕртен пĕр мулĕ—унăн сывлăхĕпе вăй хавалĕ, çавăнпа пролетарипе пролетарийĕн пĕр пĕринпе нимĕн уйăрмалли те çук. Пролетарийĕн тăван патшалăх çук, ăна етемйышĕ тĕрлĕ патшалăхсене уйăрăлса тăни кирлĕ мар, мĕшĕн тесен çапла етемйышĕ уйрăлса пурăннипе çеç пуршуаçи хура халăха пĕтĕм тĕнђере туласа пурăнаŤ. Пуршуаслă йĕркепе пурăнакан „тăван“ патшалăхра пролетари тара кĕрĕпсе ĕçлесе, хăй сывлăхне хăйĕн „тăван“ пуршуаçине çук хакпа сутса асапланса çеç пурăнаŤ. Мĕн сăлтавпа вăл „тăван“ патшалăха тĕреклĕлентерессĕн тăрăп-

тăр? Тăван патшалăх улпутсемпе пуршуаçийе çеç кирлĕ — вĕсем ĕç халăхне, хура халăха уйрăм патшалăх ҫикипе ҫикĕлесе, халăха натсилĕ хупăпа хупласа, ăна тĕрлĕ ултавлă питĕркĕçпе питĕрсе тытса çеç ĕмĕр ҫăранми ҫăскаса, вĕсен йунне-сĕткенне сăхса пурăнаççĕ. Пролетариат калаĭ: пирĕн пурсăмăрăн та пĕр тăшман — çав тăшман пуршуаçи, унăн капиталисăмлă пурăнăç йĕрки, çак тĕнҫери тăшмана пĕтерсен çеç, унăн măйне касса сирпĕтсен çеç пур тĕнҫе ĕç халăхĕ, пур хура халăх ҫăнтан ирĕклĕхе тухĕ тет. Пролетариат калаĭ: пĕр етеме тепĕр етем пусмăрлас йĕрке çĕр тĕпне анса кайтăр, етемсем ҫăнтан ирĕклĕхре, ҫăнтан пĕр пĕринпе тан пурăнас пулсан капитала пурăнăçра пăҫах пăрахçа кăларсан çес пурăнма пултараççĕ, тет. Унтан пролетариат калаĭ: халăха халăх пусмăрласси пĕр етеме тепĕр етем капитал пăйавĕпе пăвас йĕркерен çеç тухса пыраĭ, çавăнпа пĕтĕм тĕнҫере çўлти сисем сирпĕнсен, тĕнҫери халăхсемпе йăхсем пĕрлешсе пĕр йышпа пурăнма тытăнсан çĕç, патшалăхсем пĕтсен, натсилĕ хупăсем хавшанса лăштăртса ўксен, капиталисăм самани вырăнне коммунисăм самани пулса тăрсан çеç халăха халăх кышласа-ҫăмласа пурăнасси пĕтĕмпех çухалĕ тет. Çавăнпа пролетариат пĕтĕм тĕнҫери ĕçхалăхне пĕрлешме, алтивĕççĕн ĕçлесе-кĕрешсе пурăнма ҫĕнет, çапла вăл халăхсене пĕрлештерекен çулпа, йут сăмахпа каласан интернатсионаллă çулпа çеç пыма тăрăшаĭ. Йулашкинҫен пролетариат калаĭ: йут халăхсене пусмăрласа пурăнакан халăх хăй те ирĕклĕхре пурăнма пултараймаст, унăн йут халăхсен йунне ĕмсе патăрланнă çўлти сиййĕсем хăйсен „тăван“ ĕçхалăхне тата та ытларах хĕстерме пултараççĕ, çавăнпа тепĕр халăха пусмарласа пурăнакан халăх хăне ваҙҙи хăйех ҫуралăх сăнҫарĕ шăратса хываĭ, тет. Çакăнтан пролетариат пур тĕлте те натсилĕ пусмăра хирĕç йун тăкса, çанна тавăрса кĕрешни тухса пыраĭ. Çавăнпахта пролетариат пур тĕлте те кирек хăçан та патшалăхпа патшалăх хушшинҫе тухакан вăрçăсене хирĕç, патшалăхсенҫе халăха халăх туласа пурăннине хирĕç, империалисăмлă патшалăхсем имперкерех патшалăхсене, ытларах та тата колоҫисене туласа пурăннине хирĕç питĕ хĕрўленсе кĕрешет. Пролетариат пур ҫуралăхра асапланакан йăхсене, пур пусмăрлă халăхсене империалисăма хирĕç хусканма, капиталисăм пусмăрне ывăтса, çапăçса ирĕке тухма ҫĕнеĭ. Çак ĕçе çийеле кăларма ăна капиталисăм хăйех пулăшаĭ, ун çинҫен епир малта та каларăмăр, малалла та уйрăм кĕскен калăпăр.

### 2. Истори хӑйех халӑхсене пӗрлештерсе пыни.

Пирӗн саманара пӗтӗм тӗнђе, пӗтӗм ҫӗр ђӑмӑрӗн хуҫалӑхӗ ҫулран ҫула пӗр кил-ҫурт, пӗр кил-йыш хуҫалӑхӗ пек пулса пыраӑ. Промӑшлӗнӑҫа пула, вӑйлӑ транспорта пула пӗтӗм тӗнђе пурлӑхӗ пӗрле ҫыхӑнса тӑраӑ, ҫапла ђӑваш утӑ ҫулакан ҫава Европпӑран килет, ђӑваш выракан машинӑ, ҫӗлекен машинӑ Америккӑран килсе тӑраӑ, ҫав вӑхӑтрах ђӑваш акса ӳстернӗ пӗрђӗ тӗнђене кайса, ђӑваш арӑмӗ ӳстернӗ ђӑхӑ ҫӑмарти, ђӑваш каскалаканӗ каскаласа тупӑ кђепки пӗтӗм тӗнђене кайса тӑраӑ. Капиталисӑм саманинђе пур халӑхсен те пурлӑхӗсем пӗр пӗринпе йавӑнса пӑтранса ҫыхӑнаҫҫӗ, пӗр йӑвари пурлӑх-хуҫалӑх йевӗрлӗ пулса тӑраҫҫӗ. Ҫапла капиталисӑм пур тӗнђери мула, пурлӑха, пуйанлӑха пӗр ҫулпа илсе пыма тӑрӑшаӑ, вӑл халӑхсен хушшинђе пӗр интернатсионаллӑ капитал тума тӑрӑшаӑ. Капиталисӑмах тӗнђере пӗр майлӑ техниккӑ, ӑсталӑх, пӗр тӗслӗ хуҫалӑх йӗрки, пӗр сӑнлӑ пурӑнӑҫ йӗрки тума тӑрӑшаӑ; тӗнђери капиталисӑмӑн пӗр йышшӗ политиккӑ, пӗр пек ӑслӑлӑх, илемӗш. Пирӗн саманара капиталисӑмӑн тӑрринђи пусмисем ҫинђе тӑракан халӑхсем пӗр пӗринђен пӗртех те уйрӑм мар: хрантсуссем, нимӗҫсем, акӑђђансем, итађйансем пурте пӗр пек пурӑнӑҫпах пурӑнаҫҫӗ, пӗр пӗринђен вӗсем ђӗлхепе ҫеҫ кӑшт уйӑрӑлса тӑраҫҫӗ. Тӗнђери халӑхсен хула ҫыннисем, вӗсен ӗҫхалӑхӗпе интелликентсийӗ пур тӗлте те пӗр пекрехех пурӑнаӑ: хула ҫынни—вырӑс-и вал, акӑђђан-и, йапун-и, интус-и, некӑр-и йе йулашкинђен ђӑваш-и—вӑл пӗр тӗслӗ тум тумланаӑ, пӗр йевӗрлӗ ӗҫкӗ—ҫикӗ ҫийет, пӗр мађирлӗ ӗҫ ӗҫлет, пӗр пек хватирсенђе пурӑнаӑ, пӗр класслӑ интереспе пурӑнаӑ, пӗр тӗслӗ искусствӑпа ђунне йӑпатаӑ, тӗнђере пӗр интернатсионаллӑ ӑслӑлӑхпа ӑс-питне ҫивђӗлетет. Ҫапла халӑхсене капиталисӑм пур йенђен пӗр пӗринпе ҫыхаӑ, пӗр пӗрне илештерет. Пирӗн саманара ытла та уйрӑм натсилӗ сӑн-питпе авалхи ӑрулӑ-хвеоталлӑ йӗркепе, хресђен пурӑнӑҫӗн йӗркипе пурӑнакан халӑхсем ҫеҫ пӗри тӗпринђен ытла касса уйӑрӑлса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑппа та ӗнтӗ капиталисӑм хӑйех те тӗнђери етемйышне пӗрлештерсе пыма тӑрӑшаӑ. Вӑл тӗнђене тавар ҫаврӑнӑҫӗпе пур йенђен те серетелесе ђӑмӑртаӑ, ҫӗр ђӑмӑрне ђукун ҫулсемпе, карапсемпе, пӑрахутсем ҫӳрекен шыв ҫулӗсемпе, вӗҫекен машинӑсем ҫӳрекен ҫулсемпе йӗритавра кӑшӑлласа пӗрлештерет. Вӑл пӗр тӗлтен тепӗр тӗле мул пӑрахса, ӗҫ халӑхне мӗђйуншар

ушкӑнсемпе пӗр ҫӗршывран тепӗр ҫӗршыва куҫартарса, вӗсене хутӑштарса пӗтерсе етемйышӗ пӗр ҫемйе пулас ӗҫе ҫывӑхартарать. Нумай калама та кирлӗ мар — капиталисӑм ҫак тӗлешӗнђен етем историнђе усӑлӑ ӗҫ туса хунӑ, вӑл пур халӑхсем те пӗрлешес саманана ҫывӑхартарнӑ. Каљђех калама та кирлӗ мар—тӗнђе хуҫалӑхне хӑй аллине пролетариат илсен, тӗнђере вӑл хуҫа пулса тӑрсан—халӑхсем тата темиҫе хут хӑвӑртрах пӗрлешсе пырӗҫ, хӑвӑртах пӗтӗм етемйышӗ пӗр йӑхлӑ-ӑрула халӑх пек, пӗр йышлӑ ушкӑн пулса тӑрӗ. Ҫапла ӗнтӗ халӑхсем малашне пӗрлешсе ҫитессе, вӗсен пӗр интернатсионаллӑ хуҫалӑх, пӗр пурӑнӑҫ йӗрки — сӑнӗ, пӗр куљтурӑ пуласси пуҫра ахаљ хайласа кӑларнӑ йапала мар, вӑл етем историйен тӗп сакунӗ, унӑн пӗртен пӗр тӗрӗс ҫулӗ.

**3. Халӑхпа халӑха йе пӗрлештерекен йе тата та ытларах пӗр пӗринђен йутшӑнтаракан йӗрке.**

Ҫапла ӗнтӗ истори хӑйех, пурӑнӑҫ, пурлӑх йӗрки хӑйех халӑхсене пӗрлештерсе пырать. Ҫак ӗҫ халӑхсен кӑмӑлне курса мар, вӗсем ҫапла пултӑр тенӗ шухӑшне - туртӑмне пула мар — ҫук, ҫав ӗҫ ђасах халӑхсен кӑмӑлне хирӗҫ пырса та пуђин ҫапах пулӑнса пырать. Анђах ҫакна пӗлнипе „апла пулсан халӑхсене пӗрлештерес ӗҫпе, халӑхсен хушшинђи хирӗҫлӗхсене пӗтерес ӗҫпе кӗрмешме кирлӗ мар, натсилӗ ыйтусемпе ђӑрманма та кирлӗ мар“ теме йурамасть. Халӗ тӗнђе историне пролетариат ҫавӑтса пырать, малашнехи пулас лайӑх самана нумай йенӗпе ҫав пролетариатран килсе тӑрать: вӑл тӗрӗс ҫулпа пырсан ҫав самана хӑвӑртрах та ҫитӗ лайӑхрах та пулӗ, вӑл йунӑшсан малалла курас лайӑх саманасем вӑраха та кайӗҫ лайӑхах та пулмӗҫ. Ҫавӑнпа та пролетариат мӗн аталанса истори тилкепине хӑй аллине тытнӑранпа халӑха халӑх пусмӑрлас йӗрке ҫине тишкерсе пӑхса ӑна тӗрлӗ йенӗпе майласа пӗтерме тӑрӑшать. Ҫак ӗҫе пролетариат ҫыхланмасӑр та пултараймаст; халӑхпа халӑх хушшинђе тухакан хирӗҫлӗхсем йаланах ӑна хӑне пырса перӗнеҫҫӗ, вӑхӑђӗпе ун ҫулне пӳлеҫҫӗ. Унтан халӑхсен ҫав пӗрне пӗри пусмӑрлас йӗркеренех йалан хӑрушӑ вӑрҫӑсем тухса пыраҫҫӗ, йалан ҫавӑн пиркийех тӗнђере пӗр ђарӑнми айӑпсӑр хура халӑх йунӗ йухать. Ҫапла ђасах халӑхпа халӑх хушшинђе пулакан кӗрешӳсен пӗр хӗрринђе ҫеҫ тӑма пролетариат пултараймаст—йаланах унӑн ҫав кӗрешӳсен ӑшӗнђех тӑмалла пулать.

Пролетариат нихӑҫан та халӑхпа халӑх йӳҫӗнкелесе пурӑнтӑр

темест. Вӑл калаҭ: ӗҫхалӑхӗпе хресҭенӗн, пур халӑхсенӗн те пӗртен пӗр тӑшман — ҫав тӑшман тӗнҭере тӗрлӗ ҭӗлхепе калаҫаҭ, тӗрлӗ тир ҫакса ҫӳрет, ҫапах та вал тӗнҭере пӗр—ҫав тӑшман улпутсемпе капиталҫӑсем, ҫак тӑшман пурлӑхпа пӗрле ҫыхӑннӑ, вӑл пӗр ӑш-ҭиклӗ, пӗр шухӑшлӑ, пӗр йӑлалӑ. Пур тӗнҭери, пур хӑлахсен хушшинҭи мул хӑйӗн ирӗкне-влаҫне пӗрлешсе ӗҫлесе ҫеҫ ҫийелле кӑларса пыраҭ, ҫавӑнпа пролетариат та унпа кӗрешнӗ ҭух ӑна пӗрлешӳлӗ вӑйпа ҫеҫ ҫӗр ҫумне ҫӗклесе ҫапма пултарӗ. Пролетариат калаҭ: хирӗҫлӗх, кӗрешӳ, вӑрҫӑ, халӑхпа халӑх хушшинҭе мар, пӗр сипе тепӗр си хушшинҭе, пӗр класспа тепӗр класс хушшинҭе ҫеҫ пулмалла тет. Вӑл калаҭ: „пӗрте пӗр ҭӗлхепе калаҫакан йӑхӑн ҫӳлти сийӗсемпе хура халӑх килӗштерсе, канлӗ пурӑнмалла, мӗшӗн тесен вӗсем пӗр «тӑван халӑх»“ тени пӗтӗмпех суйа сӑмах тет. Ҭӑнахах та улпутпа хресҭен хушшинҭе, капиталҫӑпа ӗҫлекен хушшинҭе, усламҫӑпа ҫук хушшинҭе вӗсем пӗр ӑруран пулса пӗр ҭӗлхепе калаҫсан та мӗнле тӑванлӑх пулма пултараҭ? Вӗсем пурте пӗр халӑх шутӗнҭе хисепленни кашкӑрпа путеке пӗр картана ҫеҫ хупса тытнине кӑтартмаст-и вӑра? Ҫавӑнпа пролетариат халӑхпа халӑх хушшинҭе килӗшӳлӗх пултӑр, кашни халӑхӑн хӑйӗн ӑшӗнҭе ӗҫхалӑхӗ ӑна пусса тӑракан сисемпе кӗрештӗр, ҫавӑнпа вӑрҫӑпа ҫапӑҫу пулас пулсан вӑл тӗрлӗ халӑхсен хушшинҭе мар, халӑхсен хӑйсен ӑшӗнҭе класспа класс хушшинҭе пултӑр тет. Ҫав халӑхсен ӑшӗнҭе пыракан класслӑ кӗрешӳсенҭе кашни натсийӗн ӗҫхалӑхӗ хӑй вӑйӗ—хавалӗпе ҫеҫ кӗрешсен нихӑҫан та ҫӗнтерес ҫук, вӑл нехекрен ҫӗнтерсен те ӑна ытти ҫӗрсенҭи капиталҫӑсем те пуҭин пырса каҭҭех пӑҭӑркаса ӳкереҫҫӗ. Ҫавӑнпа пролетариат тӗнҭере хӑй хуҫа пулас тесен, хӑйӗн кӑмӑлне килекен йӗрке тӑвас тесен, капиталисӑм вырӑнне коммунисӑм тӑвас тесен—вӑл ҭи малтан хӑй пӗтӗм тӗнҭере пӗртен пӗр вӑй, пӗр хӑват, пӗр тӑнлӑ, пӗр шухӑшлӑ— сулӑнӑҫлӑ йыш пулмалла. Ҫавӑнпа пролетариатӑн ӗҫре, пурӑнӑҫра, шухӑшра пур йапаларан та малта пӗтӗм тӗнҭери ӗҫхалӑхне пӗрлештересси тӑраҭ. Халӑхпа халӑх хушшинҭе хирӗҫлӗх тухсан та, пӗр халӑха тепӗр халӑх пусмӑрлас йӗркепе кӗрешӳ тапрансан та пролетариат ҫав ӗҫре ӗҫхалӑхне пӗрлештерес те ӑна хӑватлӑлантарас, улпутсемпе пуршуаҫийе вӑйран ӳкерес тесе ҫеҫ ҭикӗнет. Ҫакӑ тӗнҭере пролетарлӑ политиккӑн никӗсӗ пулаҭ. Унтан пӗрте пӗр халӑх йут халӑх пусмӑрӗ айне кӗрсе ӳксен ҫав пусмӑр сийенӗ пуринҭен ытла ӗҫ халӑхӗпе хресҭене тивет, унтан тата паттӑр

халăхсен йут имперке халăхсене туласа пурăннипе капиталçăсен классĕ çеç вăй илет, тĕреклĕленет, тĕреклĕленнĕçем вăл хăй ĕç халăхĕпе хăй хресţенне тата та хытăрах пусмăрласа хĕсме тытăнаĭ. Çавăнпа натсилĕ кĕрешӳсенţе пролетариат кирек ăçта та, кирек хăçан та пусмăрпа асапланса пурăнакан халăхсем майлă, йут халăхсене пусмăрласа ирĕксĕрлесе пурăнакан халăхсене, тĕрĕсрен каласан вĕсен çӳлти сийĕсене хирĕç кĕрешет. Пролетариат пурăнăçра пĕр етеме тепĕр етем пусмăрлас йăла та çухалтăр тет, савăнпа вăл пĕр йышлă халăха тепĕр йышлă халăх пусмăрланнине хирĕç мĕн вăй çитнĕ таран вĕриленсе кĕрешет. Малтах епир асăнсаттăмăр: натсилĕ пусмăр класслă пусмăртан çеç тухса пыраĭ, пирĕн саманара халăха халăх хĕсĕрлесси капиталисăм йĕркинţен çĕç тухса пыраĭ. Капиталисăма пĕтерсе тăпрапа таптаса вилĕм шăтăкне ţикекен вăй пролетариат çеç, çавăнпа малашне натсилĕ пусмăрсене сирсе пĕтĕмпех çухатакан вăй та пролетариат çеç пулаĭ. Пусмăрлă халăхсен пусмăртан ирĕке тухас шанţăк пролетариат çинţе çеç, вĕсен малашнехи пур ĕмĕтленнĕ ĕмĕţĕсем пролетариат çĕнтерсе çийеле тухассипе çеç çыхăнса тăмалла. Пусмăрлă халăхсем ţăнтан ирĕклĕхе курас тесен пролетариат çулĕпе çеç, пролетариат хыçĕнţен çеç пымалла. Çак çул çеç тĕрĕс çул, çак çул çеç халăхсен хушшинţи пусмăрлăхсемпе хирĕçлĕхсене пĕтерет, çак çул çеç халăхсене пĕрлештерсе пырса вĕсене пĕр тăван йыша çавăрма пултараĭ.

Ытти çулсем пурте сийенлĕ йунăш çулсем, çав çулсемпе улпутсемпе пуршуçи пыраĭ. Халăхсене çав йунăш çулпа илсе пыракансем муллă сисем пулаççĕ. Çав сисем хăйсен влаçне тĕреклĕлентерес сăлтавпа йалан халăхпа халăха хирĕçтерсе пурăнма тăрăшаççĕ. Вĕсем пĕр халăха тепĕр халăха хирĕç хĕтĕртеççĕ, вăрçă кăлараççĕ, çапăçтараççĕ. Тĕнţере мĕн етем астунăрампа пĕр ţарăнми йун йухаĭ—çав йуна пĕрле пухсан вăл тĕнţене те шăнăçмĕţţĕ. Çав йун мулшăн тăкăннă, çав йун халăхсем йунăш çулпа, мулçăсен ултавлă çулĕпе пыннипе çĕç тăкăннă. Капитал кирек мĕнле йапаларан та ţейе: вăл пĕлет—тĕнţери ĕç халăхĕ, пур хура халăхсем те пĕрлешсе пурăнма тапратсан унăн пурăнас кунĕ пĕтсех лараĭ. Авалах тĕнţери халăхсен пĕр усал пусмăрçи çапла кананă: „сӳтсе уйăр—вара тытса тăрăн“. тенĕ, çапла вăл халăхсене пĕр пĕрinne çапăçтарса вăйсăрлантарнипе çеç хăне пăхăнтарнине каланă. Пуршуаçи те çак сăмаха питĕ лайăх пĕлсе тăраĭ. Çавăнпа

вăл кашни уйрăм халăха уйрăм картара, уйрăм хупă айĕнҫе пурăнтарма тăрăшаĭ. Ҫакна пуршуаҫи тĕрлĕ майпа туса пыраĭ. Ҫи малтан пуршуаҫи кашни халăх картинҫе, ун ăшĕнҫе канлĕх пулмалла, унăн тĕрлĕ сийĕсем пĕрле килĕшӳлĕ пурăнмалла тет. Вăл калаĭ: пуйан-и, ҫук-и, улпут-и, ахаҫ ҫын-и — пĕр йунран пулнă пулсан, пĕр ҫĕлхепе калаҫсан вĕсем тăван етемсем тет; ҫавăнтах тата вăл калаĭ: тĕнҫере кашни етемĕн ҫăн тăшманĕсем йут ăрулăйăхлă халăхсен етемисем, тет. Ҫапла майпа пуршуаҫи ĕҫ халăхĕпе хура халăхăн кăмăлне пăтратса йунăш ҫулпа йама, хăне хирĕҫ тулса пынă ҫилле йут халăхсен ҫине ӳкерме тăрăшаĭ Ҫак улпутсенпе пуршуаҫи ĕҫне ҫийеле кăларас тесе тăрăшса ĕҫлекенсем пин тĕслĕ мел тупса тĕттĕм халăх пуҫне ҫавăраҫҫĕ, кăмăлне тĕксĕмлентереҫҫĕ, ăна тăнран йараҫҫĕ.Пуршуаҫи халăха пĕрте пĕр халăх ҫине ҫĕклентерес тесен хаҫатсемпе шурналсенҫе кунĕн-ҫĕрĕн суйса ҫав халăха хурлаҫҫĕ, ăна хирĕҫ хĕтĕртеҫҫĕ, ҫавăн ҫинҫенех кĕнекесем синҫе ҫыраҫҫĕ, театăрсенҫе вăйăра ҫав халăха мăшкăллаҫҫă, ҫиркӳсенҫе-миҫĕтсенҫе пупсем—мулласем ҫав халăх ҫинҫенех сӳйеҫтерсе пĕтереҫҫĕ. Ҫапла ĕҫлесе пĕтерсен йулашкинҫен вăрҫă тухса кайаĭ та ҫав вăрҫăра тĕттĕм халăх ҫăнтанах тăшманпа кĕрешетĕп тесе йун тăкаĭ. Ҫак сăмах пĕрте ытлашши маррине пĕлес тесен йапунпа нимĕҫ вăрҫине кăна аса илер: ҫав вăрҫă вăхăтĕнҫе патша, улпутсем, капиталҫăсен тарҫисем хресҫен хушшинҫе мĕнле кăна суйа сăмах сармарĕҫ, нумайĕшне ҫав сăмаха тĕттĕм халăх шанҫĕ, пĕр вăхăта ҫăнахах та йапунсемпе нимĕҫсенҫен писсе тăҫĕ. Пуршуаҫи хăне кирлĕ пулсан йут патшалăхсен халăхĕсене ҫеҫ хирĕҫ мар, хăйĕн патшалăхĕнҫе пурăнакан уйрăм халăхсене хирĕҫ те хăйĕн тĕп халăхне хĕтĕртсе—вĕскĕртсе ҫав халăха тулатараĭ: ҫапла Раҫҫейре револҫутси хумĕсем тапрана пуҫласан вырăс пуршуаҫи тĕттĕм халăха еврейсене хирĕҫ, паҫĕксене, хвинҫантсăсене хирĕҫ хĕтĕртсе тăрса халăх кăмăлне пăтратса тăраҫҫĕ, ҫаплах пуршуаҫи Тĕрĕк ҫĕрĕнҫе ерменсемпе крексене, йапун патшалăхĕнҫе корейтсăсене, Америккăра некăрсене хăйĕн тĕп халăхне вĕскĕртсе тулаттарса пурăнаĭ. Ҫакна та пуршуаҫи ĕҫ халăхĕн класслă тăнпуҫне пăтратасшăн тăваĭ. Ҫак ĕҫе тума малтан питĕ нумай тĕн тавраш пулăшаĭ. Епир пĕлетпĕр: кашни тĕн хăне ҫеҫ тĕрĕс тет, хăне хай мухтаĭ, ыттисене хурлаĭ, пĕр тĕне паранна ҫынсем ытти тĕнлĕ ҫынсене пĕр пек, пĕр тан етемсен вырăнне хумаҫҫĕ, ҫапла ислама парăннă мăсăҫман христҫиана ҫăнтан ҫын

вырӑнне хумаст, ун ҫине сиввӗн ҫеҫ пӑхаҭ, ҫапла хрисђианлӑ тенпе пурӑнакансем те ыттисем ҫине ҫӳлтен кӑна пӑхкалаҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ халӑха халӑх пусмӑрлассине ђи малтан тӗн сӗрӗмӗ пулӑшса тӑраҭ Унтан ҫак ӗҫех тӗрӗслесшӗн пуршуаслӑ ӑслӑлӑх мӗнле кӑна суйа вӗрентӳсем кӑлармарӗ! Ђи малтан капитала парӑннӑ ӑслӑлӑхҫӑсем пур тӗнђери халӑхсене икӗ пайа уйӑрӑђђӗҫ: пӗр тӗслӗ халӑхсене вӗсем историсӗр, куђтурсӑр халӑхсем теђђӗҫ, теприсене историлӗ те куђтурлӑ та халӑхсем теђђӗҫ. Унтан вӗсем вӗрентеђђӗҫ: кашни халӑхӑн сӑнпит, унӑн характӗрӗ, унӑн ӳтпе ђун хавалӗ ӗмӗртен ӗмӗре улӑшӑнми йапала теђђӗҫ. Ҫапла каласа вӗсем халӗ историсӗр те куђтурсӑр тенӗ халӑхсем малашне те ӗмӗр ӗмӗрне тӗнђен ђаплӑ историлӗ ҫулӗ ҫине нихӑҫан та тухаймӗҫ теђђӗҫ. Мӗшӗн вӗсем ҫапла вӗрентни паллӑ: апла пулсан ҫав халӑхсем ытти аслӑ историлӗ халӑхсен пусмӑрӗнђе пурӑнма тивӗҫлӗ пулаҭ. Ҫапла пирен ӗмӗрте нимӗҫ ӑслӑлӑхҫисем вырӑссен, ытти славен йӑхӗсен пуҫ шӑмшакӗ килӗшӳлӗ мар, ҫавӑнпа вӗсем айван, ђӑнтан куђтурӑ тавраш нихӑҫан та тума пултараймаҫҫӗ, ҫавӑнпа вырӑссем нимӗҫсене пӑхӑнса пурӑнмалла теђђӗҫ. Ҫанла ӑслӑлӑх нимӗҫ империалисӑм кӑмӑлне курса ҫеҫ суйса тӑрађђӗ. Ҫаплах вырӑс империалисђӗсем те Раҫҫейри вак халӑхсем ҫинђен, хвинпа ђӳркӑрӑвӗнђен йӑхпӑ халӑхсем ҫинђен темӗн те суйса ҫырађђӗҫ: вӗсен сӑмахӗпе ҫав халӑхсем ухмах та,, вӗсен пуҫра мимӗ те сахал, вӗсем вӗренме те пултараймаҫҫӗ, вӗсем пурӑнӑҫа та йӗркелӗ ҫавӑрса пурӑнма пултараймаҫҫӗ пулаҭ. Ҫак вӗрентӳ пӗтӗмпех суйа. Ђӑн ӑслӑлӑх каланипе тӗнђере нимӗн те пӗр вырӑнта тӑмасҭ: йаланах пурте шӑваҭ, йухаҭ, ӳсет, йаланах ҫӗршыв, хуҫалӑх йӗрки улӑшӑнса пыраҭ, вӗсем улӑшӑннипе халӑх та улӑшӑнса пыраҭ. Пирӗн саманара халӑхпа халӑх тан марри, ҫӗршыв, пурлӑх-пуйанлӑх пӗр тан марринђен, пӗр халӑхӑн авалхи пурӑнӑҫӗ, унӑн историйе телейлӗ, тепӗр халахӑн вӗсем телейсӗр пулнинђен ҫеҫ килет. Ҫаванпа халӑхсен ӗмӗр улӑщӑнми натсиле характер пур тени суйа сӑмах, ҫавӑнпа халӗ тӗттӗмре пӑнђӑхса пурӑнакан халӑхсем малашне те ҫутӑ кураймӗҫ тени йурӑхсӑр ултавлӑ сӑмах: вӑл суйине револютси пире тӳрех касса лартса кӑтартрӗ: историсӗр, куђтурсӑр тенӗ, нихӑҫан та хӑйсен ирӗкӗпе, хӑйсен аллинђе патшалӑх йӗркине тытса пурӑнман пӑрахҫӑ вак халӑхсемех халӗ хӑйсен ирӗклӗ ахтономлӑ ҫӗрӗсенђе шавласа пурӑнаҫҫӗ. Унтан пуршуаҫийе халӑхпа халӑха сивӗнтерсе пурӑнма халӑхсен авалран йулнӑ уйрӑм

йӑлисем, уйрӑм пурӑнӑҫ йӗрки пулӑшаҕ. Ҫавӑнпа пуршуаҫи кашни халӑх пур йенҕен те: тум тумланас, ҫурт-йӗр ҫавӑрас, ҫимӗҫ хатӗрлес, ӗҫкӗ-ҫикӗ тавас, праҫниксем иртерес ытти те нумай тӗлешӗпе тӗп авалхи йӗркепе-йӑлапа кӑна пурӑнтӑр тесе тӑрӑшаҕ.

Ҫапла ӗнтӗ пусмӑрлӑ халӑхсен умӗнҕе икӗ ҫул: пӗр ҫул пуҫӗнҕе тӗнҕе пролетариаҕӗ тӑраҕ, тепӗр ҫул пуҫӗнҕе пуршуаҫи тӑраҕ. Пролетариат халӑхсене капиталисӑма тӗпӗ-тымарӗпе хӑртласа пӗтерсе пурӑнӑҫра етеме етем пусмӑрласиййӗн тӗсне те хӑварас мар тесе хӑйпе пӗрле кӗрешме ҕӗнет. Пуршуаҫи пусмӑрлӑ халӑхсене кашни халах хӑй натсилӗ хунӑна витӗнсе пурӑнсан ҫеҫ телейлӗ пулма пултараҕ тесе йӗкӗлтесе ӑна пӗр сиккеленмесӗр ӗмӗрхи пусмӑртах пурӑнма сунаҕ. Пусмӑрлӑ халӑхсем халӗ ҫакна сиссе илҕӗҫ: ҫавӑнпа вӗсем ҕирӗклӗхшӗн кӗрешӳ тапратса пролетариат ҫине ҫеҫ шанҕӑк тытса кӗрешеҫҫӗ.

**4. Натсилӗ пусмӑрпа пролетариат империалисӑмлӑ вӑрҫӑҕҕен йепле кӗрешни.**

Пролетариат мӗн ҫуралса ура ҫине тӑнӑранпах кирек ӑҫта та, кирек хӑҫан та натсилӗ пусмӑрпа кӗрешнӗ. XIX-мӗш ӗмӗр тӑршӗпе тӗнҕере хисепсӗр нумай вӑрҫӑ, питӗ нумай револҕутси пулнӑ, ҫав вӑрҫӑсенҕе, револҕутсилӗ кӗрешӳсенҕе пролетариат йаланах пусмӑрпа асапланакан хутне кӗрсе пусмӑрлакана хирӗҫ кӗрешнӗ. Ку кӗнекере ҫав кӗрешӳ ҫинҕен тӗплӗ калама вырӑн ҫук, ҫавӑнпа ун ҫинҕен пӗр-ик сӑмахпа ҫеҫ асӑнса илӗпӗр. Маркҫисӑма пуҫласа йаракан К. Маркспа Х. Енкелҕс пиртен 60—80 ҫул кайа ӗмӗрӗсене натсилӗ пусмӑрпа хӗрӳлӗ кӗрешсе иртерни. Вӗсем мӗн ҕухлӗ тӗнҕери пролетариата пӗрлештерсе, ӑна интернатсионаллӑ орканисатсисемпе ҕӑмӑртаса хӑватлӑлатма тӑрӑшнӑ, ҫавӑн ҕухлӗ вӗсен натсилӗ пусмӑрпа кӗрешмелле пулнӑ, мӗшӗн тесен ҫав пусмӑр пролетариат пӗрлешес ӗҫе тӑлласа ҕарса тӑнӑ. „Пӗтӗм тӗнҕери пролетарисем, пӗрлешӗр!“ тенӗ ҕӗнӗве тӗрӗслес тесе кӗрешсе пурӑннӑ К. Маркс пӗр халӑх та тепӗр халӑха пусмӑрлама пулҕараймаст тенӗ, пур тӗнҕери халӑхсем те пӗр етемпе тепӗр етем пек тан тенӗ, ҫавӑнпа вӑл йалан ирӗклӗхшӗн кӗрешекен халӑхсен майла пулнӑ. Ҫак тӗлешӗпе епир икӗ пример кӑтартма пултаратпӑр, ҫав примерсем К. Маркс пусмӑрлӑ Ирланҕипе пусмӑрлӑ Полҕша ирӗклӗхшӗн кӗрешнӗ ӗҫ ҫине мӗнле куҫпа пӑхнине витӗр кӑтартаҫҫӗ. Ирланҕи пирӗн вӑхӑтра та акӑлҕ-ҕан империалисӑмӗн пусмӑрӗ айӗнҕе ирӗклӗхшӗн йун тӑкса кӗ-

решсе пуранаҫ. Ҫак пусмарла халах пек асап курна халах тӗнҫере сахал. Маркс саманинҫе Ирланҫийе акаҫҫан улпуҫӗсем пусмарласа пуранна, Ирланҫийӗн мӗн пур ҫӗршывӗ ҫав улпутсен аллинҫе пулна, Ирланҫи хресҫенӗ йурахсар йурла пуранна. Ирланҫийӗн хула халахӗ те, ӗҫ халахӗ те акаҫҫан капиталҫисен пусмарӗнҫе пуранна. Ҫаванпа Ирланҫи акаҫҫансен пусмарӗнҫен пӗтӗмпех хаталас тесе кӗрешнӗ. Ҫак кӗрешӳре К. Маркс мӗн пур ҫунӗпе мӗскӗн ирлантсасен йенҫе пулна. Вал калана: Ирланҫийе пӗтӗмпех ирӗке каларас пулаҫ, вал хай камал тусан ана Анкҫирен тӗтӗмпех уйрам патшалах тума та ирӗк пама кирлӗ тенӗ. Ҫакна вал ҫи малтан, пуринҫен ытла пролетариат ӗҫне малалла йарас шухашпа калана: Ирланҫийе пусмарта тытас йӗрке Анкҫийӗн улпутсен классне вайлалатаҫ, Анкҫипе Ирланҫи пролетариатне пӗр пӗринҫен пистерсе тараҫ, мӗшӗн тесен Ирланҫи ӗҫлекенӗсем пур акаҫҫансем ҫине те сиввӗн пахаҫҫӗ, ҫапла пролетариатпа пролетариат сивӗнсе пурнни пуршуаҫишӗн ҫеҫ усала тенӗ. Ҫанахах та К. Маркс саманинҫе те халӗ те Анкҫи пуршуаҫи хай халахне йалан ирлатсасене хирӗҫ хӗтӗртсе пуранаҫ. Унтан ҫак тӗлешӗпе К. Маркс тата пӗр пысак шухаш каларса каласа хаварна; ҫак шухаш йут халаха пусмарлакан халах хай те ирӗкре пурама путарайmast, тени пулаҫ. Йулашкинҫен ҫак тӗнҫен асла вӗрентекенӗ тата ҫапла каласа хаварна: Ирланҫийе пусмарта тытнине пула акаҫҫан пролетариаҫӗ хай та тӗрӗссине каласан пуршуасланса пыраҫ, ҫапла пӗтӗм тӗнҫене пусмарласа туласа пуранакан халахан пуршуаҫипе пӗрле тен пуршуасла пролетариат та пулма пултараҫ, тенӗ. Ҫапла К. Маркс натсилӗ пусмара пула пролетариат та пасалма пултарнине тахҫан ӗлӗкех сиссе тана.

Поҫша тӗлешӗнҫен те К. Маркс ҫаплах пахна. Тӗнҫене хӗҫпашалпа, ҫар вайӗпе ҫаварса илнӗ Раҫҫей ҫинҫен вал ҫапла калана: Раҫҫей вал хисепсӗр пысак пурлах-пуайнлах туйанна хуҫа, анҫах ҫаз пурлаха вал варласа илнӗ, ҫаванпа унан пурлахне парама тӳлемелли кун ҫитсен кайалла ирӗксӗр туртса илӗҫ тенӗ. Ҫапла варлана пурлах тесе вал Раҫҫей патшисем йут ҫӗршывсемпе йут халахсене ирӗксӗрлесе пахантарса Раҫҫей ҫумне хушнине калана. Х. Енкеҫс Поҫша ҫинҫен ҫапла калана: Раҫҫей—тӗнҫе шантармӗ, Раҫҫей ҫарӗ—Европпан револютсилӗ ӗҫ халахне пусарса таптама ҫеҫ пахса тараҫ, Поҫшаран уйрам патшалах туни вырас патшин вайне ҫакарат, ҫаванпа вал пролеттариатшан

усăлă тенĕ. Унтан вăл каланă: Поҙша Раççейрен уйăрса уйрăм патшалăх туни вырăс халăхне хăне те усăлă, мĕшĕн тесен Раççей Поҙша пусмăрта тытас сăлтавна унта хисепсĕр йышлă çар тытаť, çав патша çарĕ пур çинҫе вырăс халăхĕ ирĕке тухас çук, тенĕ. Енкеҙс тата тĕлĕнмелле тĕрĕс йапала каласа хăварнă: хăçан та хăçан Поҙшă ирĕке тухĕ, çавăн ҫухне Раççейре патшалăх йĕрки месерле çавăрăнса çĕнĕ йĕркене ўкĕ, тенĕ; çапла Енкеҙс сăмахĕпе Поҙшă ирĕклĕхĕпе Раççей револютсийĕ пĕр миталăн икĕ йенĕсем çеç пулмалла пулнă. Çапла пролетариат ҫăнтан аталанма пуçланă кăна вăхăтра та унан малтанхи тĕп вĕрентекенĕсем натсилĕ политиккăн никĕсне пĕр йунăшмасăр хывса хăварнă. Çав никĕс çинҫех натсилĕ ыйту тĕлешĕпе тăвăнакан пролетарлă политиккă халиҫҫенех тăраť. Малалла та маркçистсем К. Маркспа Енкеҙс кăтартнă çулпах пынă. Çав çул пролетариат кирĕк мĕнле пусмăра та хирĕç пынине, халăхпа халăх тавлашнă ҫух вăл вăйсăртараххипе асапланарах пурăнаканнине пулăшнине, пролетариат ĕçне харĕç пымасан кирек мĕнле халăх та хăне уйрăм патшалăх тума пултарнине пĕлтерет. Пролетариат ĕçне хирĕç пымасан тетпĕр, мĕшĕн тесен пролетариат итеолокĕсем пуринҫен мала пролетариат ĕçне çеç хунă. Анҫах историре пусмăрлă халăх ирĕке тухасшăн кĕрешни хăçанта хăçан пролетариат ĕçне хирĕç пыма пултарнă-ши вара? Пултарнă та пултараť та. Çапла Енкеҙс вăхăтĕнҫе Палкан вак халăхĕсем ирĕке тухасшăн кĕрешнĕ, вĕсене çав ĕçре вырăс патшисем пулăшса тăнă, вĕсем хайсем те çав патшасене пулăшу паркаласа тăнă. Енкеҙс вĕсем çинҫен каланă: çав халăхсем тĕнҫе пролетариат ĕçне хирĕç пырсан-манăн вĕсем çинҫен илтес те килмест, тенĕ. Унтан Енкеҙс вăхăтĕнҫех Кермани 1871-мĕш çулта Хрантсирен туртса илнĕ еҙсассем пăлханнă. Çав пăлхав çинҫен Енкеҙс çапла каласа хăварнă: „еҙсассем пусмăрта, анҫах вĕсем ыран-пайан пулас револютси уммĕн Керманипе Хрантси хушшинҫе вăрçă кăларма тăраççĕ пулсан, халăха халăх çине вĕскĕртсе йарса пулас револютсийе каҙҫех кайалла хăвараççĕ пулсан—епĕ калатăп: Ҫарăнăр! Йепле пролетариат нумай тўсĕмлĕ, çаплах есир те тўсĕмлĕ пулăр. Вăл ирĕке тухсан çеç есир те ирĕке тухăр, вăл ирĕке тухайман пулсан епир сире кĕрешекен пролетариат ĕçне пăсма ирĕк памăпăр“ тенĕ. Çапла ĕнтĕ маркçисăм кирек мĕнле халăх та кирек ăçта та хăне патшалăх туса хăйпе хăй пурăнмалла темест, апла вăл калама та пул-

тараймасҫ, мӗшӗн тесен вӑл халӑхсене пӗрлештерме тӑрӑшаҫ. Ҫавӑнпа вӑл пуринҫен ытла патшалӑхсенҫи пусмӑрлӑ йеркене халӑхсене танлӑ килӗшӳлӗ пурӑнма паракан йӗркене ҫавӑрма тӑрӑшаҫ; патшалӑхра кивӗ ҫурма—пуршуаслӑ, ҫурма—хвеоталлӑ йӗрке пулсан, ҫав патшалӑх хӑйӗн усал хӑваҫӗпе тӗнҫе пролетариатне сийенлӗ пулсан—вӑл ҫав патшалӑхран уйӑрӑлас тесе кӗрешекенсене пулӑшаҫ. Ӑҫта та пулин пусмӑрлӑ халӑх хӑне уйрӑм патшалӑх тӑвас тесе кӗрешнӗ ӗҫ пуҫӗнҫе кайа йулнӑ халӑхӑн кивӗ йенне туртакан ҫӳлти сисем ҫес тӑраҫҫӗ пулсан, вӗсем ҫапла хӑйсен халӑхӗсене уйӑрса, тӗнҫе ҫулӗнҫен пӑрса вӗсене йурӑхсӑр кивӗ йӗркепе пурӑнтарасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ пулсан, унтан натсилӗ ирӗклӗхшӗн халӑхсем реаксипе, пролетариат тӑшманӗсемпе пӗрлешсе кӗрешеҫҫӗ пулсан (вырӑс патшипе Палкан халӑхӗсем)—ҫак ӗҫе пролетариат пулӑшмаст те, кирлӗ пулсан хирӗҫ те пыраҫ.

Ҫак шухӑш тӗнҫе ӗҫ халӑхӗн историне кӑтартакан тӗрӗре уйрӑм хӗрлӗ ҫип пек касса витӗр курӑнса тӑраҫ.

Йулашки вӑхӑтра натсилӗ ыйтупа вырӑс пролетариаҫӗпе австри пролетариаҫӗ нумай кӗрмешсе иртерет. Мӗшӗнни паллӑ—ҫак икӗ патшалӑх та ҫи нумай халӑхлӑ патшалӑхсем пулнӑ. Пролетариат йышлӑланса хӑватлӑланнӑҫем, ун ҫумне пусмӑрлӑ халӑхсен пролетариаҫӗ те ҫыпҫӑннӑҫем натсилӗ ыйту ҫивҫӗленнӗҫем ҫивҫӗленсе пыраҫ. Вӑл пролетариат хушшинҫе нумай тав кӑлараҫ, йулашкинҫен пролетарйат хушшинҫе икӗ уйрӑм йухӑм, икӗ сулӑнӑҫ палӑраҫ. Ҫав икӗ йухӑм пыра киле пӗр пӗринҫен уйрӑлнӑҫем уйрӑлса пыраҫ, йулашкинҫен вӗсем пӑҫах тӑшмана ҫавӑрӑнаҫҫӗ. Мӗнле йухӑмсем вӗсем? Пӗрне вӗсенҫен ҫӑнтан пролетарлӑ интернатсиналлӑ йухӑм, тепӗрне ҫуйа пролетарлӑ сотсиал-патриотлӑ йухӑм теме пулаҫ. Пӗри вӗсенҫен пурӑнӑҫра пӗр ҫеҫ утӑм пусса утас пулсан та вӑл пролетариата усӑлӑ-и усӑлӑ мар-и тесе тишкерсе пӑхаҫ, вӑл пуринҫен ытла мала, хӑй „тӑван“ тенӗ халӑхӗнҫен те мала тӗнҫери ӗҫ халӑхне хураҫ, ӑна пӗрлештерес ӗҫе вӑл хӑй халӑхӗн ӗҫне ҫеҫ майласа тӑрассинҫен мала хураҫ, классене вӑл натсисенҫен ытларах асӑрхаса тӑраҫ, натсилӗ кӗрешӗве класлӑ кӗрешевӗ пӑхӑнтарма тӑрӑшаҫ. Ҫак мӗне пӗлтернине епир малта та пайтах каласаттӑмӑр, ҫавӑнпа тӳрех тепӗр йухӑм ҫинҫен сӑмах пуҫлӑпӑр. Тепӗр йухӑм малтанхи йухӑмӑн прокраммине шӑлтах пуҫлӗ-вӗҫлӗ тӑратаҫ, ӑна упӑнерен месерле ҫавӑрса пӑрахаҫ: вӑл тӗнҫери пролерариатран мала хӑй „тӑван“ халӑхне,

хӑйӗн „тӑван“ патшалӑхне хурать, хӑйӗн халӑхӗпе патшалӑхне хӑватлӑлантарассине вӑл тӗнҫери пролетариата пӗрлештерессинҫен мала хурать, ҫапла вӑл классене ҫителеклӗ асӑрхамасӑр куҫне натсисем ҫине ҫеҫ хыват, класслӑ кӗрешеве натсилӗ кӗрешӗве пӑхӑнтарать. Ҫак суйа йухӑм калать: пролетариата упраса аталантаракан сӑпка—тӑван ҫӗршыв, пӗр йунран пулнӑ, пӗр ҫӗлхепе халаҫакан тӑван халӑх, тӑван патшалӑх, вӗсем тирпейлӗ, пуйан, хӑватлӑ пулсан пролетариат та телейлӗрех пурӑнать, хӑвӑртрах та хунаса пырать, тет. Ҫапла шухӑшласа вӑл хӑй ҫӗршывне, хӑй патшалӑхне аслӑлатасшӑн хирек хӑҫан та хӗҫ-пӑшал ҫекleme хатӗр, ытти йут ҫӗршывсемпе халӑхсене пусмӑрласа ҫавӑрса илме хатӗр, ҫак ӗҫре вӑл хӑйӗн улпуҫӗсемпе, хӑйӗн пуршуаҫипе пӗрлешсе алтивӗҫҫӗн ытти халӑхсене хирӗҫ кӗрешме хатӗр Ҫак йенҫен ҫак йухӑм пӗтӗмпех пуршуаҫи майлӑ: вӑл пуршуаҫийӗн йут халӑхсене пусмӑрлакан политиккине тӗреклӗлентерет, ӗҫ халӑхӗн класслӑ тӑнне аташтарса ӑна йунӑш ҫулпа йарать; ҫавӑнпа ӑна суйа пролетарлӑ йухӑм теме пулать, унтан тӗнҫере пуринҫен мала хӑй тӑван тенӗ ҫӗршывне, халӑхне, патшалӑхне хунӑшӑн ӑна сотсиал-патриотлӑ йухӑм теҫҫӗ (патриот тесе тӑван ҫӗршыва ытла йуратакана калаҫҫӗ); унтан ҫак йухӑма хӑй халӑхне ҫеҫ пуринҫен те малта, пысӑк хисепре шутласа тӑнӑшӑн ӑна тата натсионалисӑмлӑ йухӑм теҫҫӗ; ҫав йухӑм хыҫҫӑн кайакансем ҫасах хӑйсен халӑхне йуратнинҫен пуҫне ытти халӑхсене тӳрех курайми те пулаҫҫӗ, хура халӑхпа ӗҫ халӑхне те йут халӑхсенҫен писсе тӑма сунаҫҫӗ, ҫавӑнпа ҫак йухӑма натси ӗҫӗпе ытла та вӗриленсе пурӑннӑшӑн тата шовинисӑмлӑ йухӑм (шовинисӑм тени хрантсус ҫӗлхинҫе тӳрех вӗриленнине пӗлтерет) теҫҫӗ.

Ҫак икӗ йухӑм та Раҫҫӗй ӗҫ халӑхӗ ҫӑнтан ҫӑмӑртанса хӑй ӗҫӗшӗн кӗрешме тапратсанах палӑраҫҫӗ. Ҫи малтан ҫак тӗлешӗпе паллӑ тав 1903-мӗш ҫулта Раҫҫей сотсиал-темократилӗ парҫи пухӑвӗнҫе пулать: ҫав пухура Раҫҫейре сотсиал-темократилӗ парҫи пӗрре ҫеҫ пулмалла-и, пур ӗҫ халӑхӗ те пӗрле ҫеҫ ҫӑмӑртанса тӑмалла-и йе кашни уйрӑм халӑхӑн хӑне уйрӑм парҫи пулмалла-и, ҫав парҫисем хветератсилӗ йӗркепе ҫеҫ ҫыхӑнса тӑмалла-и тесе тав тухса кайать. Ҫав тава еврейсен Пунт йатлӑ сотсиал-темократилӗ парҫи тапратса йарать: ҫак парҫи хӑне Раҫҫей парҫинҫен уйрӑм парҫи вырӑнне, унпа тан парҫи вырӑнне, унпа токоворлӑ йӗркепе ҫӗҫ кӑшт ҫыхӑнкаласа тӑракан парҫи вырӑнне хисепле-

ме тăрăшаŤ. Çакна вăл еврейсен ĕç халăхĕн Раççей ĕç халăхĕнҗен уйрăм ĕçсем, уйрăм интерессем пур тесе сăлтавлаŤ. Пуху кашни халăхăн уйрăм сотсиал-темократилĕ парҗи пулсан Раççей ĕç халăхĕ пĕтĕмпех сапаланса çеç пурăнассине курса Пунт сунавне йышăнмасŤ. Малалла 1906-мĕш çулта Пунт ĕç халăхне тата та ытла уйăрса пайракаласа вăйсăрлатма пултаракан йапалана йышăнаŤ: вăл калаŤ—Раççейре кашни халăхăн хăйĕн куҗтурлă кирлĕхĕсене сапласа пурăнмалли уйрăм ахтономлă вырăнсем пулмалла тет. Çак ĕçе Пунт пыра киле Раççейре улпутлă—пуршуаслă йĕрке җухне те тума пулаŤ тет. Җăнах та Австрири халăхсен пурăнăçне пăхсан вăл пулма та пултарнă-и тен. Анҗах мĕне пĕлтерме пултарнă çав йĕрке? Вăл пур Раççейри еврейсем, тутарсем, паҗексем, калăпăр җăвашсем те уйрăм сослови пек пулса тĕрлĕ тĕлте сапаланса пурăнсан та хăйсен шкул ĕçне, куҗтурă ĕçне уйрăм хăйсем çеç тытса тăма пултарнине пĕлтернĕ. Пĕр йенҗен пăхсан çак ĕç наҗарах та мар пек, анҗах патшалăхра пуршуаслă йĕрке пулсан вăл пăсăк йĕрке; вăл кашни натсийĕн ĕç халăхне уйрăм натсилĕ хупăпа хупăнса, пĕр пĕринпе пĕрлешмесĕр, пĕр пĕринҗен йутшăнса пурăнма çес пулăшаŤ, унтан çав йĕрке кашни натсийĕн ĕç халăхне хăйĕн пуршуаçипе, улпуҗĕсемпе, тĕн тытăмĕпе пĕр картана хупса вĕсемпе килĕшÿлĕ пурăнма çеç хăвараŤ, җăнтан каласан çав йĕрке кашни натсийĕн ĕç халăхне унăн хăйĕн натсилĕ çÿлти сисен аллине çеç кÿртсе пăрахаŤ; каламасăрах паллă—пуршуаслă йĕрке пур çинҗе куҗтурă ĕçĕ пуршуаçи аллинҗе çеç пулма пултараŤ. Çапла натсионаллă сулăнăçа пула Пунт Раççей ĕç халăхне пĕрлештерес ĕçе пĕтĕмпех пăсма тăраŤ. Унтан еврейсен хушшинҗе тепĕр сионисăм йатлă парҗи җăмăртанаŤ: вăл тÿрех тĕнҗери ĕç халăхĕ пĕрлешессине шанмасŤ, еврей ĕç халăхĕн ытти натсисен ĕç халăхĕнҗен уйрăм çул пур тет, йулашкинҗен вăл еврей ĕç халăхĕ халĕ пурăнакан çĕрсене пăрахса кайса, Палестинăна кайса уйрăм еврей патшалăхĕ тумалла тет (çавăнпа вĕсем Палестинăри Сион йатлă ту йатне йышăнаççĕ). Еврей ĕç халăхĕ хушшинҗе пекех аташусем Капкас сотсиал-темокраҗĕсен хушшинҗе пулкаласççĕ. Çакна кура 1913-мĕш çулта Раççей сотсиал-темократсем поҗшевиксем çак ĕçе пур йенҗен те сÿтсе тишкерсе пăхса ун çинҗен çапла татса каласа хураççĕ: 1) пĕрне пĕри туласа пурăнакан капиталисăм саманинҗе халăхсем патшалăхра республикка йе халăх тытăмĕ тĕнĕ йĕрке пулсан çеç килĕшÿлĕ пурăнма пулта-

раççĕ; çав йĕрке пур халăхсене, пур ђĕлхесене танлаштармалла; патшалăхра пĕри аслă, тепри кĕçĕн йе пусмăрлă тенĕ халăх пулмалла мăр, халăхсене килĕшӳлĕ пурăнтарас тесен вĕсене хăйсен çĕршывĕнђе хăйсен ирĕкĕпе, территорилĕ ахтономи йĕркипе пурăнма ирĕк памалла; 2) куђтурлă ахтономи, шкул ĕçне, куђтурă ĕçне çеç кашни халăха хăне пани пролетариатшăн сийенлĕ йапала, 3) ĕç халăхĕн пĕтĕм Раççейре пĕртен пĕр пĕрлĕшӳлĕ орканисатсисем çеç пулмалла, çапла пĕрлешсен çеç интернатсионаллă кĕрешӳ çийеле тухĕ; тĕнђери ĕç халăхĕ çулран çул пĕрлешсе интернатсионаллă куђтурă туса пыраť, улпутсем, пуршуаçи, пупсем çеç ĕç халăхне натсилĕ куђтурăпа йăпатса аташтарма тăрăшаççĕ. Çак ђăнтан тĕрĕс çула тĕнђери пролетариат пуçĕ В. И. Ленин кăтартса панă.

Унтан çак саманара Раççей сотсиал-темокрађĕсен хушшинђе пусмăрлă халăхсем хăйсен патшалăхĕнђен уйăрăлса хăйсен ирĕкĕпе пурăнма пултарайни—пултарайманни çинђен нумай тавлашу пулнă. Çак тавлашу та К. Маркс саманинђи пекех Пођшă тĕлешĕпе тухса кайнă. 1896-мĕш çулта II-мĕш Интернатсионал конкрессĕ халăхсем хăйсен кăмăлĕпе патшалăхран уйрăлса хăйсем патшалăх тăвасси çинђен „кирек йепле пусмăрлă халăх та хăй ирĕкĕпе пурăнма пултараť“ тесе йышăннă. Çак тĕлешĕпе сотсиал-темократи малта асăннă 1913-мĕш çулхи канашлăвĕ те питĕ тĕрĕс, тӳрĕ, витĕр паллă çул кăтартса панă. Çав канашлу каланă: патша патшалăхĕнђе пусмăрта асапланакан кирек мĕнле халăх та уйăрăлса ирĕке тухма пултараť, анђах пусмăрлă халăхсен ĕç халăхĕ ăна хăйĕн „тăван“ вырăнне хисепленекен улпутсем, пуршуаçи, пупсем улталасран питĕ сыхланмалла: вĕсемпе „халăх“ ĕçне пĕрлешсе тăватпăр тесе вĕсемпе кĕрешессине пĕрте ђăрмантармалла мар, çав вăхăтрах йут халăхсене пусмăрлакан натсийĕн ĕç халăхĕ хăйĕн империалисăмлă пуршуаçипе мĕн вăй çитнĕ таран кĕрешнĕ ђух йут халăхсене пусмăрлас йĕркепе те хĕрӳлĕ кĕрешмелле, мĕшĕн тесен çапла майпа çеç пусмăрлă халăхпа пусмăрлакан халăхăн ĕçлекенĕсем ђăнтан пĕрлешрме пултараççĕ, тенĕ.

Çак натсилĕ хирĕçлĕхсене майлассипе нĕртен пĕр тĕрĕс çула вырăс пођшевикĕсем, ђи малтан вĕсен пуçĕнђе тăракан В. И. Ленин çĕç кăтартса тăнă. Ытти парђисем çак йенђен ĕçе питĕ пăтратса

ҫӗҫ тӑнӑ: аслӑ великотерщавлӑ халӑхсен сотсиалисђӗсем: нимӗҫ сотсиал-темокрађӗсем, вырӑс мењшевикӗсем, акӑԓђансен ӗҫ халӑхӗн парђиӗ натсилӗ пусмӑр ҫинђен шухӑшласшӑн та нулман, вӗсем натсилӗ ыйтупа кӗрмешнине интернатсионалисӑма та хирӗҫ пырат̆ тенӗ, ҫапла вӗсем пӗлсе тӑрса та—пӗлмесӗр-сисмесӗр те халӑхсене пусмӑрта тытакан хӑйсен империалисӑмне пулӑшу парса тӑнӑ; ҫав вӑхӑтрах ҫакна кура пусмӑрлӑ халӑхсен сотсиалисђӗсем класслӑ кӗрешӳре хӑйсен халӑхне ҫӗҫ ирӗке кӑларас ӗҫе ытла та мала хунӑ. Вӑхӑђӗпе ҫак вӑхӑтра тӗрлӗ халӑхсен сотсиаллӑ парђисем пӗр пӗринђен пӗтӗмпех те сивӗнсе пурӑннӑ, ҫапла Австри сотсиал-темокрађӗсем йаланах пӗр пӗринђен уйрӑм, пӗр пӗрипе тавлашса-кӗрешсе ҫеҫ пурӑннӑ. Ҫав малта асӑннӑ кашни натсийӗн ӗҫ халӑхӗ уйрӑм парђи тума кирлӗ тени, патшалӑхри халӑхсене уйрӑм „кӑԓтурлӑ ахтономи" парса вӗсенђен хӑне уйрӑм сослови пек ушкӑн тӑвас тени пуринђен ытла Австрире пулса пынӑ.

Ҫапла ӗнтӗ вӑрҫӑ уммӗн нӑтсилӗ ыйту тӗлешӗпе тӗнђе пролетариађӗ хушшинђе икӗ йухӑм кӗрешет: пӗри ђи малтан тӗнђе пролӗтариатне пӗрлештерсе хӑватлӑнтарса пымӑ тӑрӑшат̆, тепри ђи малтан хӑй халӑхне ирекӗ кӑларма ҫӗҫ тӑрӑшат̆. Пӗри ђӑн тӗрӗс ҫул, тепри пӑђах йунӑш ҫул: йулашки ҫул пӗтӗмпех йунӑшшине, вӑл тӗнђе историйӗн сакунне хирӗҫ пыннине малтах ҫителӗклӗ тӗплӗ кӑтартрӑмӑр, вӑл йунӑшне малалла империалисӑмлӑ вӑрҫӑпа ревоԓутси шӑратса хывса кӑтартнӑ пек кӑтартрӗҫ.

**5. Пусмӑрлӑ халӑхсен вӑрҫӑпа ревоԓутси вӑхӑтӗнђи суйа тусӗсем.**

Малта епир пусмӑрлӑ халӑхсен ђӑн тусӗ пролетариат ҫеҫ, ђӑн тӑшманӗ пуршуаҫи ҫеҫ икенне кӑтартрӑмӑр. Йулашкинђен епир пролетариат хушшинђе те пусмӑрлӑ халӑхсен суйа тусӗсем тӗрлӗ сотсиал-патриотсем пулса тӑннине кӑтартрӑмӑр. Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа ҫак суйа туссем тӳрех хайар тӑшмана ҫавӑрӑнса ӳкеҫҫӗ. Империалисӑм хӑй уссишӗн, халӑхсене тӳпелесе пурӑнас йӗркене тӗреклӗлентересшӗн ӗмӗр пулман вӑрҫӑ тапратрӗ: пур тӗнђери халӑхсене: шурӑ, хура, хӗрлӗ ӳтлисене пухса, пур вайпитти ҫынсене пуҫтарса вӗсене нихӑҫан шутласа кӑларма ҫук нумай пӗр пӗрне пӗтертерђӗ. Ҫӗр ђӑмӑрӗ ҫинђе ахӑр самана пулса тӑђӗ: тӗнђене йун йухӑмӗ пусрӗ, хисепсӗр асап, ђир-ђӗр, выҫлӑх, вӗсемпе йухакан куҫ-сулли пусрӗ. Пурӑнӑҫ ӗмӗр йухӑнманнине йухӑнђӗ, пурлӑхпа хуҫалӑх пӗтӗмпех ишӗлђӗҫ. Вӑрҫӑ сӗрӗмӗнђен тӗнђе халӗ те

урăлаймасҫ, нумайҫен малашне те урăлаймĕ. Кама кирлĕ пулнă ҫак вăрҫă? Вăл империалистсене ҫеҫ кирлĕ пулнă. Мĕшĕн вĕсем ҫак ирсĕр ĕҫе тапратнă? Ана вĕсем тĕнҫере хăйсем ҫеҫ хуҫа пуласшăн, пĕтĕм тĕнҫене пусмăрласшăн ҫеҫ тапратнă: акăҫҫансемпе нимĕҫсем ҫăнтанах тĕнҫе хуҫи пуласшăн, хрантсуссем Европпă хуҫи пуласшăн, американсем Европпă халăхĕсене хĕтĕртсе ҫапăҫтарса вĕсепе вăйсăрлатса хăйсем ҫийеле тухасшăн, йапунсем Аҫире хăйсем ҫеҫ хуҫа пулас ĕҫе ҫывăхартарасшăн, вырăссем, италисем, тĕрĕксем, австриаксем ҫав паттăр империалисăмлă патшалăхсен, вĕсен капиталĕ хыҫҫăн кайса, унтан вăрҫă хыҫҫăн тĕнҫене уйăрнă ҫух мĕн те пулин ҫĕпĕтсе йулма пулми тесе ҫав вăрҫа пуҫне ҫикнĕ, ҫапла вырăс империалисҫĕсем тĕрĕксене пусмăрласа вĕсенҫен Кĕстентинпоҫпа Тартанела туртса илес тесе ĕмĕтленнĕ. Тӳрех паллă-ҫак вăрҫă пролетариатпа хресҫене кирлĕ пулман. Анҫах халăхсен суйа тусĕсем тĕрлĕ сотсиал-патриотсем апла шухăшламан: вĕсем кашни халăх хушшинҫе, кашни патшалăхра ĕҫ халăхĕпе хресҫене вăрҫа ҫĕннĕ, хăйсем ирĕкрен вăрҫа кайса ҫапăҫнă, ҫапăҫакан правиҫĕлствăсене пур йенҫен те пулăшса тăнă, ҫав империалисăмлă правиҫĕлствăсен хушшинҫе министрсен вырăнĕсене те йышăннă. Вĕсем аташса-суйса вăрҫăра халăхсем хăйсен ирĕкĕшĕн кĕрешеҫҫе, вăрҫă хыҫҫăн халăха халăх пусмăрлас йĕрке пĕтет тесе хура халăха йăпатнă. Анҫах вăрҫă пире мĕн кăтартрĕ? Вал тĕнҫери 30 патшалăха, ҫĕр ҫинҫи етем-йышĕн виҫĕ пайĕнҫен иккĕшне уртарса ҫапăҫтарҫĕ, хĕрĕх пĕр мĕҫйун салтака хĕҫ-пăшал тыттарса пĕрне пĕри вĕлерме, амантма хушрĕ. Вăрҫă хыҫҫăн епир мĕн куртăмăр? Халăхсен „ирĕкĕшĕн“ кĕрешекен империалистсем ҫĕнтерсен нимĕҫсене, тĕрĕксене пĕтĕмпех пусмăр миххине пăҫăркаса ҫиксе ăна пуса хуҫĕҫ, тĕнҫери пусмăрлă колоҫисене хăйсене илсе ваҫеҫрĕҫ те вĕсене тата хытăрах пусмăрлама мăйкăҫларĕҫ. Европпăра нумай ҫĕнĕ натсилĕ патшалăхсем туса: Поҫшă, Ҫехо-Словаки, Юко-Слави, Хвинҫанҫи, Литва, Латви, Естони патшалăхĕсене ҫĕнĕрен туса унти халăхсене пуршуаҫи аллине ҫеҫ парса вĕсене пĕтĕмпех хăйсене пăхăнса тăракан тарҫăсен вырăнне хăварҫĕҫ. Хура халăхпа еҫ халăхĕн пурăнăҫĕ ҫав патшалăхсенҫе ĕлĕкхинҫен те йывăра йулҫĕ. Унтан ҫав ҫĕнĕ патшалăхсенҫе нумай вак халăхсем пурăнаҫҫĕ: ҫапла, Поҫшăра паҫексем 52%, Румыҫире 70%, Ҫехо-Словакире ҫехсем 44%, Йуко-Славире ҫерпсем 42% ҫеҫ. Ҫапла вăрҫа пула тата нумай халăхлă

çĕнĕ патшалăхсем пулса тăҫĕç, нумай халăхсем пĕр пусмăртан тепĕр пуçмăра кĕрçе çеç ўкрĕç. Пуршуаçи авалран „пĕтĕм тĕнҫери пролетарисем, пĕрлешĕр!“ тенĕ ҫĕнĕве хирĕç „халăхсем, уйрăлăр“ теҫҫĕ. Çак хăй шухăшне вăл вăрçă хыççăн ĕçре кăтартрĕ. Империалисăм хăй çеç тĕнҫе хуçи пуласшăн Европпа авалхи хвеоталисăм çаманине çавăрҫĕ: унта темĕн ҫухлĕ патшалăх туса, халăхсене патшалăх йĕркипе вакласа вĕсене халĕ пурне те пусмăрласа пурăнаŤ: çав патшалăхсемпе халăхсен ирĕклĕхĕн мĕлки те çук: пĕрисем вĕсенҫен акăҫҫан, теприсем храитсус капиталĕсен йурриие йурласа, çав капиталсем çине сывласа çеç пурăнаççĕ. Империалисăм хăйĕн ирсĕр ĕçне тўрех кăтартасшăн мар, ăна вăл ултавлă сăлтав виттипе витсе пытараŤ: вăл çапла çĕнĕ патшалăхсем туса пусмăрлă халăхсене ирĕке кăлартăм тет. Вăрçăра асапланнă хура халăхсен çиллине хăй çинҫен сиресшĕн вăл малалла вăрçă пулмалла мар, пур халăхсен хушшинҫи тавсене Натсисен Лики (Пĕрлешўлĕ Çыххи) тенĕ ушкăн майласа сўретсе тăмалла тет. Анҫах пурте çак суйа сăмах: пур тĕнҫе, пур патшалăхсем те кунĕн-çĕрĕн вăрçа, пĕр пĕрне тулама хатĕрленеççĕ: çарсене йышлăлатаççĕ, вăрçă хатĕрĕсем хатĕрлеççĕ, тĕттĕм хура халăхсене ытти халăхсене хирĕç хĕтĕртсе пурăнаççĕ.

Мĕн тăваççĕ çакна кура пур халăхсен те сотсиал-патриоҫĕсем? Йепле вĕсем вăрçă уммĕн те вăрçă вăхăтĕнҫе те пуршуаçи хыççăн çеç пынă-халĕ те çацлах ун хыççăн çеç пыраççĕ: вĕсем вăрçă тĕрĕс ĕçшĕн пулнă тесе ĕç халăхĕпе хресҫене çуйса пурăнаçĕĕ, вăрçă хыççăн пуршуаçи тунă йĕркене мухтаса пурăнаççĕ, политиккăра пуршуаслă Натсисен Лики хўри хыççăн çеç утма пĕлеççĕ. Сотсиалпатриотсен 2-мĕш Интернатсионал тенĕ пĕрлещĕвĕ пур пуршуаçи тунă йĕркене йышăнса тăраŤ, çавăнпа вăл пирĕн саманара тĕнҫе пролетариаҫĕн суйа тусĕ мар, тўрех пролетариат тăшманĕ вырăнĕнҫе хисепленмелле пулаŤ. Пирĕн саманара тĕнҫе икĕ пайа уйăрăлса тăраŤ: пĕри Канаш Раççейĕ, ытти çĕрсенҫи коммунислă парҫисем, пур revoҫутсилĕ ĕç халăхĕ, тепри капиталисăмлă патшалăхсем, тĕнҫе пуршуаçийĕ, çак икĕ хăват пĕрле пурăнма пултараймасŤ, çавăнпа пĕрне пĕриншĕн çĕçĕ хăйраса çеç пурăнаŤ, сотсиал-патриотсем, вĕсен 2-мĕш Интернатсионалĕ, çак ĕçре канашсене хирĕç пуршуаçипе пĕрле тăраŤ. Пайанхи кун хăш капиталисăмлă патшалахсенҫе влаçа сотсиал-патриотсем тытса тăраççĕ, анҫах вĕсен политикки пуршуаçи политиккинҫен пĕртех уйрăм

мар, çапла Анкȡире халĕ ĕлĕк 2-мĕш Интернатсионал пуçлăхĕ пулнă Мактонаȡт правитĕȡствă пуçлахĕ пулса тăрсан та Анкȡийĕн ĕмĕрхи йурăхсăр империалисăмлă политиккин пĕр пĕрȡи те улăшăнман.

Вăрçă пĕтнĕ çĕре револютсисем тапранȡĕç. Çак револютсисенȡе ĕç халăхĕ влаçа хăй аллине илсе пурăнăçра çĕнĕ йĕрке тăвас тесе кĕрешрĕ. Ĕç халăхĕ влаç пролетариат аллинȡе пултăр, тĕнȡере канаш ирĕкĕ пултăр, тĕнȡере пĕр канашлă респупликкă пултăр тесе кĕрешрĕ. Çакă пулсан çеç класслă та натсилĕ те пусмăр пĕтме пултарайĕ. Анȡах мĕн турĕç-ши çуйа сотсиалистсем çав револютсилĕ кĕрешӳре? Керманире, Венкрире, Австрире, Пăлхарире, ытти пур çĕрсенȡе те вĕсем револютсийе сӳнтерме, ирĕке тухасшăн кĕрешекен ĕç халăхне тăллантарса ȡăрмантарма çеç тăрăшрĕç. Вĕсем ĕç халăхĕ пурăнăçра хăй хуçа пулма пултараймасĕ, вăл хаȡĕ çитĕнсе çитеймен теççĕ, çавăнна вĕсен кăмăлĕпе вăл пуршуаçи айĕнȡех таптанса пурăннипе те сапăр пулмалла пулаĕ. Сотсиал-патриотсем халăхсене ирĕке кăларас ĕç çине мĕнле куçпа пăхнине Раççей револютсийĕ питĕ витĕр кăтартса паȡĕ. Револютси пулсанах вăрçа ȡарса влаçа ĕç халăхĕпе хресȡен аллине парас вырăнне пирĕн меньшевиксемпе сотсиалист-револютсионерсем Раççей йут çĕрсене хапсăнса вăрçмаçт, йут халăхсене пусмăрлас тесе вăрçмаст, çавăнпа вăрçа ȡарма кирлĕ мар тесе тăȡĕç. вăрçа ȡарсан нимĕç империалисăмĕ тĕнȡере çĕнтерме пултарĕ тесе улталаса тăȡĕç. Çапла вĕсем империалисăм ĕçне ĕлĕкхи пекех пулăшу парса тăȡĕç. 1917-мĕш çулта çур çул тăршĕпе çеç правитĕлствă пуçĕнȡе сотсиал-патриот Керенски тăȡĕ. Анȡах çав çур çултан ытла мар кеске вăхăтра та Раççейĕн пусмăрлă халăхĕсем нумай манмалли мар йапала курȡĕç. Рĕволютси пуçлансанах ȡи малтан ĕмĕр ирĕклĕхе тухасшăн кĕрешсе пурăннă Хвинлянȡи Раççейрен уйрăласшăн тапăçа пуçларĕ. Хвинлянȡи пусмăра çĕр çул кайа çеç кĕрсе ӳкнĕ, ăна вырăс патшисем пусмăра ирĕксĕр пăȡăркаса ȡикнĕ. Хвинлянȡи çапла пусмăрта пурăнассипе нихăçан та килĕшме пултарайман, йаланах ирĕке тухасшăн патшасемпе кĕрешсе пурăннă, çавăнпа патшана ӳкерсен хвинлянтсăсем тивĕçлĕрен ирĕклĕх илтĕмĕр тенĕ. Анȡах мĕнле ирĕклĕх кăтартрĕ вĕсене Керенски? Вăл Хвинлянȡири çейма хăвалаçа салатса йаȡĕ, хвинлянтсăсене сире пусмăрласа пурăннă патша влаçĕ епĕ пуç тăракан правитĕȡства аллине кĕрсе ӳкрĕ тесе мăшкăлласа йăпатрĕ. Унтан Керенскийĕн Украи-

нӑпа хытӑ кӗрешмелле пулҫӗ: Украина ахтономи ыйтрӗ, ҫӗр ӗҫне майлама хӑй аллине ҫеҫ пама ыйтрӗ, украинтсӑсенҫен уйрӑм ҫар тума ыйтрӗ. Ҫак тивӗҫлӗрен ыйтнӑ йапалсенҫен Керенски пӗрне те памарӗ. Пуршуаҫи, меҫшевиксем, сотсиалист-револҫутсионерсем пур украинтсӑсене те мӑшкӑлласа, вӗсем самостийниксем, сепаратистсем тесе вӗриленсе курӑймасӑр тӑҫӗҫ. Ҫаплах правитӗлствӑ ытти халӑхсен: латышсен, тутарсен, круҫинсен, кӑркӑссен ыттисен те револҫутси вӑхӗтӗнҫе ҫӑмӑртаннӑ натсилӗ оркanисатсисене ӗҫлеме памарӗ, вӗсене вырӑна хумарӗ. Керенски правитӗлстви ҫапла айкашни пӗр йенҫен усӑлӑ пулҫӗ: Раҫҫейри пур пусмӑрлӑ халӑхсем те пуршуаҫипе сотсиал-патриотсенҫен нихӑҫан та ирӗклӗх илессине кӗтсе тӑма йураманнине хӑйсен куҫӗпе хӑйсемех пӗтӗмпе курҫӗҫ. Ҫапла револҫутси великотершавлӑ халӑхсен сотсиал-патриоҫӗсем вак халӑхсене пусмӑрлас ӗҫрен пӗртех те хӑпса уйӑрӑлайманнине кӑтартрӗ.

Тепӗр йенҫен ҫав револҫутси пусмӑрлӑ халӑхсен хӑйсен сотсиал-патриоҫӗсем ирӗклӗхшӗн йепле ҫӑнтан кӗрешнине те кӑтартрӗ. Канаш ирӗкӗ пулса тӑрсан, краштанлӑ вӑрҫӑ тапрансан—мӗн кӑна тумарӗҫ ҫав суйа сотсиалистсем! Вӗсем пур халӑхсен хушшинҫе те пур тӗлте те контр-револҫутси йенҫе кӗрешрӗҫ, ҫав кӗрешӳре хӑйсен натсилӗ ирӗклӗхне империалисӑма сутса тӑҫӗҫ. Ҫак ӗҫ ҫинҫен тӗплӗ калас пулсан пысӑк уйрӑм кӗнеке ҫырмалла, кунта епир цӗр-иксӑмахпа кӑна ҫи пысӑк ӗҫсене ҫеҫ асӑнӑпӑр. Пурте астӑватпӑр —пуршуаҫипе ӗҫ халӑхӗ хӗҫ—пӑшалпа кӗрешнӗ саманара Хвинҫанҫи, Латви, Литва, Естони, Пелоруҫи, Украина сотсиалисҫӗсем хӑйсен ирӗклӗх илесшӗн тапӑҫакан ӗҫлекенсемпе хресҫенсенҫен хӑраса, вӗсене пусарас кӑмӑнпа нимӗҫ ҫарне, вӗсен йӑнӑралӗсене ирӗклӗрен пӑхӑнҫӗҫ, хӑйсен пуҫӗсене пусмӑра ҫикрӗҫ, хӑйсен ҫӗршывне Виҫкеҫм патша салтакӗсене таптатарҫӗҫ; ҫаплах хӗвелтухӑҫӗнҫи халӑхсен сотсиал-патриоҫӗсем: круҫинсем, ерменсем, Капкас, Крым, Хусан тутарӗсем, пушкӑртсем, ҫӑваш сотсиал-патриоҫӗсем те империалисӑмлӑ акӑҫҫансене, Колҫака, Теникина, ытти империалисӑмлӑ йӑнӑралсене парӑнса канаш влаҫӗпе кӗрешрӗҫ. Ҫапла вак халӑхсен сотсиалисҫӗсем империалистсемпе кӗрешни вӗсем хӑйсен халӑхӗсем ирӗклӗх илессине пӑҫах сутса йаннине пӗлтерет. Унтан краштанлӑ вӑрҫӑра канашсене хирӗҫ урса ҫӳлти сисем, вак халӑхсен улпуҫӗсем, капиталҫисем, ҫинавникӗсем, пу-

пĕсем-муллисем çеç кĕрешрĕç, çав кĕрешӳре пусмăрлă халăхсен сотсиал-патриоҫĕсем хăйсен пуршуаçийĕпе алтивĕççĕн кĕрешрĕç.

Çапла ĕнтĕ аслă, великотершавлă, куҫтурлă халăхсен суйа сотсиалисҫĕсем те, вак, имперке, пусмăрлă, куҫтурсăр халăхсен суйа сотсиалисҫĕсем те вăрçăпа револютси вăхăтĕнҫе вĕсем пусмăрлă халăхсем ирĕке тухас ĕçе хирĕç пыннине, ăна тăлласа, пăтратса ҫăрмантарнине çеç кăтартрĕç.

**6. Пусмăрлă халăхсен ирĕкĕшĕн Р. К. П. мĕн туни.**

Р. К. П. пĕртен пĕр ҫăн пролетарлă парҫи, вăл ҫи малтан капиталисăм йĕркине, мул пусмăрне тĕпĕ-тымарĕпе пĕтерме тăрăшаҫ, унтан вăл çавăнтах пурăнаçри пур ытти пăсăк йапаласене пăҫах пĕтерме тăрăшаҫ, çав класслă пусмăртан пуçне ытти пăсăк йапаласенҫен ҫи ирсĕр пăсăк йапала—халăха халăх пусмăрлани, халăхпа халăх хирĕçленни, халăхпа халăх пурăнаçра тан марри. Р. К. П. йепле пуршуаслă йĕркене пурăнаçран тымарĕпе хăртласа, ăна пĕр пĕрҫĕ, пĕр çӳпĕ таранҫен çумласа кăларса ывăтаҫ, çавăн пекех вăл пурăнаçра халăхсене пусмăрлассин шăршине те хăварасшăн мăр тăрăшаҫ.

Вырăс полҫшевикĕсем пусмăрлă халăхсен ирĕкĕшен вăрçă уммĕн мĕнле кĕрешнине малта каласаттăмăр. Вăрçă тапрансан та вĕсем, ытларах та вĕсен те, пĕтĕм тĕнҫе пролетариаҫĕн те пуçĕнте тăракан В. И. Ленин çав Карл Маркспа Хритрих Енкелҫс кăтартнă тĕрĕс пролетарлă çулпах пынă. Вĕсем Европпăра тар тĕтĕмĕн шăрши туха пуçласанах каланă: тĕнҫе империалисăмĕ хăй çеç хуçа пулас тесе вăрçă кăлараҫ, çав вăрçа вăл çĕнтерсе пăхăнтарнă халăхсене тата та ытларах ҫуралăха хăварасшăн кăлараҫ, ăна вăл хăне хирĕç çурхи пăр-шыв пек хускалма хатĕр пролетариата йун йухтарса вăйсăрлатас сăлтавпа кăлараҫ, тенĕ. Полҫшевиксен вăрçă вăхăтĕнҫе тĕп лосункĕ империалисăмлă вăрçа краштанлă вăрçа çавăрмаллине, вăрçăри салтаксем халăхпа халăх çапăçассине пăрахса хĕç-пăшала пуршуаçийе хирĕç çавăрмаллине пĕлтернĕ. В. И. Ленин каланă: ĕç çыннипе йурлă хресҫенĕн тăпманĕ йут çĕрте мар, вăл килтех, вăл тăван çĕршыврах. Унтан В. И. Ленин каланă: усăл сăлтав-тĕллевпе кăларнă вăрçăра револютсилĕ класс хăйĕн правиҫĕлстви пĕттĕр, çав вăрçăра хăй пуçне хăй çитĕр тесе тăрăшмасăр пултараймаст, патша аллинҫе пурăнакан Раççей—халăхсен тĕрми, вăл пĕтĕм тĕнҫене кивĕ йĕрке йенне туртса тăра-

кан хăваť, çавăнпа вăл вăрçăра çĕнтерейменни лайăхрах тенĕ. Çакна кура пуршуаçипе вырăс сотсиал-патриоţĕсем Ленин та унпа пĕр шухăшра тăракансем те пурте нимĕç империалисăмĕ майлă ĕçлеççĕ тенĕ. Анţах çак сăмаха вĕсем ţăн интернатсионалистсене халăхсен куçĕ умĕнţе хурлас тесе çеç сӳйеçтерсе хайласа кăларнă, çав сăмаха вĕсем хăйсем те шанман, мĕшĕн тесен вĕсем пур ţăн интернатсионалистсем те пур патшалăхсенţе те, пур тĕнţере те империалисăмлă вăрçа пĕтерсе ăна капиталисăма хирĕç тытăнассишĕн, пĕтĕм тĕнţере пĕр çулпа пыракан пролетарлă револютси тăвассишĕн кĕрешнине курса тăнă. Ленин малтанах пĕлсе тăрса вăрçă халăхсене пусмăр сăнţăрĕ çеç туйантарĕ, халăхсем ирĕке револютси ырлăхĕпе çеç тухма пултарĕç тенĕ сăмахсем кайарах тĕп тĕрĕс сăмăхсем пулса ţăţĕç.

Раççейре револютси пулса тăрсан, полшевиксем тĕрĕсрен каланă: „йе вăрçă револютсийе вĕлерет, йе револютси вăрçа вĕлерет“, тенĕ. Ţăнахах та империалисăмлă вăрçа малалла майласа тăмалла пулсан Раççейре ирĕксĕрех пуршуаçи влаçĕ çеç, унăн тиктатурĕ пулмалла пулнă, мулçăсемпе йăнăралсем вĕсен аллинţе нумай мĕлйунлă çар пур çинţе револютсире ĕç халăхĕпе хресţен патшалăх йĕркине хăй аллине илесшĕн тапăçнине тӳссе тăма пултарайман. Çакна пĕлсе тăрса полшевиксем вăрçа пĕтерес, ĕç халăхĕпе хресţенрен пухнă çара киле тавăрса револютсийе тĕреклĕлентерес, ытти çапăçакан патшалăхсен салтакĕсене те империалисăмлă вăрçа пăрахса вăл туйантарнă хĕç-пăшалпа кашни хăй çĕрĕнţе револютси тапратса влаçа хайсен аллине илес ĕçе пулăшас тесе хĕрӳлĕ ĕçленĕ. Çапла ĕçленни сайа каймарĕ, вăл историре пулман пысăк ĕç туса паţĕ: Раççейре влаçа пролетариат хăй аллине илţĕ, Европпăра револютсисем тапранţĕç, пĕтĕм тĕнţешĕн усал ирсĕр вăрçă сӳнсе ларţĕ.

Р. К. П. тăрăшнипе çийеле тухнă йупа револютси пулса çитсен пĕр ернеренех „Раççей Халăхĕсен Тивĕçлĕхĕсене Пĕлтерни“ („Декларация прав народов России“) тенĕ сакун тухрĕ. Çав текларатсийĕн тĕп сунавĕсем çаксем: 1) Раççей халăхĕсем пурте тан, хăйсен çĕршывĕнţе хăйсем пĕртен пĕр хуçа; 2) кашни халăх хăй ирĕкĕпе пурăнма, хăйĕн ирĕклĕ кăмăлĕпе патшалăхран уйăрăлса хăне уйрăм патшалăх тума пултараť; 3) халăхлăхпа тĕн тĕлешĕнţен авалран йулнă пур хĕсĕрлӳсем пĕтеççĕ, паттăр халăхсен ытти халăхсене пусмăрлас ирĕк пăрахçăланаť; 4) Раççейре уйрăм çĕр-

шывсăр сапаланса пурăнакан халăхсемпе халăх татăкĕсем хăйсен ирĕкĕпе пурăнса аталанма пултараççĕ. Унтан 1918-мĕш çулта кăрлаҫан 13-мĕшĕнҫе тепĕр революци тĕп сакун никĕсĕ вырăнĕнҫе хисепленекен текларатси йе пĕлтерӳ тухрĕ, унан йаҫĕ: „Ĕçпе експлоататси (тулу, çарату, ирĕксĕрлӳ) айĕнҫе пурăнакан халăхăн тивĕçлĕхĕсене пĕлтерни („Декларация прав трудящегося и эксплоатируемого народа“). Çав пĕлтерӳре çапла каланă: „Раççей Канашлă Респупликĕ пĕрлешӳлĕ натсисен ирĕклĕ сойусĕн никĕсĕ çинҫе лараҫ, вăл канашлă натсилĕ респупликкăсен хветератсийĕ (пĕрлешӳлĕ ушкăнĕ, сойусĕ) пулаҫ“. Çапла пролетариат хăй ирĕке тухсан, пурăнăçра хăй хуçа пулса тăрсан пур пусмăрта пурăнакансене ҫи малтан ирĕке кăларасшăн тăрăшаҫ.

Çапла Р. К. П. пусмăрлă халăхсен пĕртен пĕр вĕсене пусмăртан ҫăнтан çăлма тăрăшакан вăй пулса тăраҫ. Çакна кура крапатанлă вăрçăра контр-революци йенҫе аташкаласа тăнă пусмăрлă халăхсем ҫасах пролетариат майлă пулса тăраççĕ, йут патшалăхсемпе вырăс империалисҫĕсене хирĕç тăраççĕ, вĕсене сутăннă хăйсен пуршуаçине персе ӳкереççĕ, ĕç халăхне тăллантарса çеç тăракан хăйсен суйа сотсиалисҫĕсене пĕр хĕррине пăрса ывăтаççĕ, канашсене авалхи пусмăрлă Раççейрен пĕр ирĕклĕ, килĕшӳлĕтуслă пурăнакан патшалăх тума пулăшаççĕ.

Çав канашсен мĕнле патшалăх йĕрки пулса тăраҫ? Ҫи малтан çав йĕрке хветератси, сойус, халăхсен пĕрлешӳлĕ ушкăн йĕрки. Çак йĕрке ҫăнтан 1923-мĕш çулта пулса тăҫĕ, унтанпа ĕлĕкхи Раççейе халĕ Канашлă Сотсиалисăмлă Респупликкăсен Сойусĕ тесе ҫĕнеççĕ. Çак йĕркене пирĕн патшалăхăн тĕп сакунĕсемпе, тĕп конститутсипе килĕштерсе тунă, çав конститутсире халăхсен ирĕклĕ тивĕçлĕхĕсем çинҫен малта асăннă текларатсисем каланă сунавсем пурте кĕрсе вырăнаçнă. Ĕлĕкхи Раççейĕн кашни халăхĕ унăн канашĕсем кăмăл тусан пĕтĕмпех уйрăм патшалăх йĕркипе пурăнма пултараҫ, çапла тума ăна никам та ҫармасҫ. Анҫах канашлă йĕркен ирĕклĕхне курса, халĕ пĕр халăх та уйрăмах пурăнасшăн мар, ытти канашлă натсилĕ респупликкăсемпе пĕрлешсе пурăнасшăн. Çапла майпа патша Раççейĕ каҫҫех пĕрле пĕтĕмпе ҫăмăртанҫĕ, анҫах Раççейе çапла пухса пĕрлештерекен вăй хĕç-пăшалпа пусмăр пулмарĕ, çав вăй — ирĕклĕ халăхсен хăйсĕн кăмăлĕ çеç пулҫĕ. Ĕлĕкхи пусмăрлă Раççей халĕ çав çĕрсенҫех пурăнакан ирĕклĕ танлă халăхсен пĕрлешӳне пĕлтерет, халăхсен сойусне

пĕлтерет. Çав пĕрлешӳ мĕнле çыхăсемпе çыхăнса тăрать? Вăл пур çĕрсенче пĕр хуçа, пĕр ĕç халăхĕ çеç хуçа пулнипе, пур çĕрсенче те пĕр канашлă йĕрке пулнипе, пур пусмăрлă халăхсем те ирĕклĕх шанчăкне пролетариат çинче çеç тыгнипе çыхăнса тăрать. Пирĕн Сойусра тĕрлĕрен халăхсем пур: йышлисем те сахаллисем, пурлăхпа паттăрисем те йурлисемте, çителĕклĕ кулютурлисем те кулютурсăррисем те, ĕлĕкхи Раççей кăвапи çумĕнчех выртаканнисем те пиншер çухрăм айакра выртаканнисем те. Çавăнпа тĕрлĕрен халăхсем тĕрлĕрех йĕркепе Сойуспа çыхăнса тăраççĕ: Украинапа Капкас хыçĕнчи республиккăсем пĕтĕмпех уйрăм хăйсен ирĕкĕпе пурăнакан, Сойуспа токоворпа çеç çыхăнса тăракан республиккăсен вырăнĕнче хисепленеççĕ; Туркестанпа Пелоруççи çурма-уйрăм, çурма-пĕрлешӳлĕ республиккăсен вырăнĕнче шутланаççĕ, Кăркăс, Тутар, Пушкăрт, Кортсăсен, Такестан, Йакут, Нимĕç республиккисем Сойус ăшĕнче пурăнакан, ахтономлă тытăм йĕркипе Раççейпе çыхăнса пурăнакан республиккăсен вырăнĕнче шутлăнаççĕ; унтан нумай вакрах халăхсем: чăвашсем, çармăссем, вучексем, сыренсем, карелсем, калмăксем, пуретсем, ойратсем (Алтай хăлăхĕ), Капкасри тĕрлĕ халăхсем хăйсен ирĕкĕпе уйрăм кĕпĕрпесем пек ахтономлă оплăçсенче пурăнаççĕ, вĕсем Хветератсилĕ Раççей ăшĕнче ахтономлă çĕрсен вырăнĕнче хисепленеççĕ. Çапла авалхи халăхсен тĕрми вырăнĕнче хисепленекен Раççей тĕнчере халиччен пулман ирĕклĕ патшалăха çавăрăнчĕ. Çак ĕçе Р. К. П. турĕ, çак çула В. И. Ленин кăтартрĕ, çак çулпа халĕ пур пусмăрлă халăхсем те малалла утса пыраççĕ. Çак йĕрке сасартăках пулса тăмарĕ, анчах питĕ хăвартăн 4—5 çул хушшинче пулса тăчĕ, çапла револютси саманин 4—5 çул хушшинче çакăн пĕк пысăк ĕç тăвăнни пусмăрлă халăхсен малашнехи ĕмĕтне çунатлантарать, ăна пĕр иккĕленмелле мар шанчăклă тăвать. Ленин кăтартса панă çулпа пыракан Р. К. П. халăхсене чăнтанах натсилĕ пусмăртан хăтарас, авалхи пусмăрăн сĕрĕмне сирес, унăн шăршине те хăварас мар тесе пĕр чарăнми тăрăшса ĕçлет. Вăл пусмăрлă халăхсене ирĕке кăларас тесе çырура, çеç кăтартмасть, вăл çав ĕçе пурăнăçра чăнтан вырăн йышăнтарасшăн тăрăшать. Вăл пусмăрлă халăхсене ирĕке кăларас тесе кĕрешме пĕтĕм тĕнче пролатериатне чĕнет. Пуринчен ытла вăл çав пусмăрпа кĕрешме пусмăрлă халăхсене хăйсене чĕнет. Пусмăр сĕрĕмĕ пусмăрлă халăхсен хушшинче халĕ те питĕ вăйлă, çав пусмăр йулашкийĕсем, уп мухмăрĕ хăвăр-

тах пӗтме пултараймасӗ. Пусмӑрлӑ халӑхсен пурлӑх йӗрки йурӑхсӑр, вӗсен хуҫалӑхӗ авалхи кивӗ йӗркепе пырать, вӗсен хапрӑксемпе савӑтсем ҫук, вӗсен вак промӑшлӗнӑҫӑн претприаҫисем те сахал, вӗсен хушшинҫе ӑсталӑхпа ремесла тавраш те сахал, вӗсем йурлӑ, пур йенҫен те йухӑннӑ, пурлӑх наҫаррипе вӗсен хушшинҫе сутӑнакан-илӗнекен тавар питӗ сахал ҫавӑрӑнать, вӗсен хушшинҫе кооператси тавраш шӑтса тӗвӗленме ҫес тапратать; унтан пусмӑрлӑ халӑхсем ытти халӑхсем пек пурлӑха пур йенҫен те тишкерсе асӑрхаса, виҫсе-сӳтсе, мул пулмасан йе ҫитмесен тӗрлӗ йенҫен тупӑшласа тупса, мула пӗрлешсе пуҫтарса пурлӑха маларан малалла йарса пыма хӑнӑхман. Пусмӑрлӑ халӑхсем тӗттӗм, ҫыру сахал пӗлеҫҫӗ, вӗсен хӑйсен куҫтурӑ тавраш ҫук, йут ҫӗлхелӗ куҫтура та вӗсем хӑвӑртӑн йышӑнма пултараймаҫҫӗ. Пусмӑрлӑ халӑхсем кивӗ пурӑнӑҫ сӑнӗпе, авалхи йӑласемне, кирлӗ-кирлӗмӑра ӗненсе пурӑнма ытларах туртӑнса тӑраҫҫӗ. Пусмӑрлӑ халӑхсем ӳтпӳ вӑййӗпе те, сывлӑхпа та, ҫунлӑх хӑваҫӗпе те вӑйсӑрланарах панӑ. Ҫавӑнпа вӗсем авал ирӗклӗрех пурӑннӑ халӑхсемпе ҫӑнтан танлашмалла пулсан — ҫав танлашу вӑрах вӑхӑт тӑршӗпе нумай вӑй хурса тӑрӑшса ӗҫлесен ҫеҫ пулма пултарать. Канаш ирӗкӗ ҫакна пӗлсе тӑрса пусмӑрлӑ халӑхсене пур йенҫен те пулӑшса тӑрать. Вӑл вӗсене есир ирӗке тухрӑр, ҫавӑнпа ӗнтӗ кирек те мӗнле пурӑнӑр темест, хӑвӑран авалран йулнӑ йурӑхсӑр пурӑнӑҫра кирек мӗнле майпа та анҫах хӑвӑр вӑййӑрпа кӑна йусӑр темест, вӑл пусмӑрлӑ халӑхсене пӗрлешӳлӗ вӑйпа ҫӗклемелле, пулӑшу парса тӑрса вӗсене ура ҫине тӑратмалла тет. Ҫавӑнпа канаш ирӗкӗ ахтономлӑ ҫӗрсене ҫӗре, ҫарана, вӑрмана тытса усӑ курас йӗркере тӗрлӗ ҫкотсем парать, хапрӑксене-савӑтсене ҫав ҫӗрсене куҫарма та унта ҫӗнӗрен тума та тӑрӑшать, ҫав хапрӑк-савӑтсенҫе ӗҫ тавраше ҫи малтан пусмӑрлӑ халӑхсен ӗҫлекенӗсене пама тӑрӑшать, ҫав ҫӗрсенҫи вырӑнти пӳтшета ваҫҫи сойус хыснинҫен нумайрах укҫа парса тӑрать, пусмӑрлӑ халӑхсене вӗренме, хасатсем, кӗнекесем кӑларма, куҫтурӑ ӗҫне малалла йама нумайрах пулӑшса тӑрать, ӗлӗк пусмӑрта пулнӑ ҫӗрсенҫе тытӑм йӗркине, сут ӗҫне, пур канашсем те парҫи те ӗҫлекен ӗҫе ҫав пусмӑрлӑ халӑхсен ӗҫлекенӗсемпе йурлӑ хресҫенӗсен аллине ҫеҫ пама тӑрӑшать, ҫав ҫӗрсенҫе патшалӑх йӗркине вырӑнти ҫӗлхепе майласа тӑма хушать, тӗрлӗ майпа пур йенҫен те ӗлӗк йут халӑхсене пусмӑрласа пурӑннӑ натсисен хушшинҫе йулнӑ йурӑхсӑр йӑласемпе:

кĕҫĕн имперке халăхсене мăшкăллас, вĕсене ирĕксĕрлес, тан хисеплес мар йăласемпе питĕ хĕрӳлĕ кĕрешет. Ҫак пĕҫĕкҫĕ кĕнекере канаш ирĕкĕ пусмăрлă халăхсемшĕн мĕн туннине пурне те ҫырма вырăн ҫук, ун ҫинҫен уйрăм пысăк кĕнеке кăларас пулаť. Йулашкинҫен ҫакна кăна калăпăр: канашлă Раҫҫейри пек пусмăрлă халăхсем нихăҫан та ниҫта та ирĕклĕ, килĕшӳлĕ, пĕрлешӳлĕ пурăнман.

Ҫакна питĕ лайăхăн пĕлсе астуса тăрса пусмăрлă халахсен малашне та пролетариат хыҫҫăн, унăн ирĕклĕ ҫулĕпе ҫеҫ утмалла. Пусмăр каҫҫех ҫавăрăнса ан килтĕр тесен, вăл урăх ан пултăр тесен, унăн тымарĕ те ан йултăр тесен—пурăнăҫра капиталисăм пулмалла мар, пуршуаҫи пулмалла мар, пурăнăҫра коммунисăм пулмалла, пурăнăҫ хуҫи ĕҫ халăхĕ пулмалла. Пирĕн саманара тĕнҫере ике вăй-хăват кĕрешет—пĕр вăй тĕнҫе ĕҫ халăхĕ, тĕнҫен пĕрлешнĕ пролетариаҫĕ, тепĕр вай тĕнҫе пуршуаҫийĕ, ĕҫ халăхĕпе кĕрешме пĕрлешнĕ капиталҫисем, пĕр вăй пирĕн канашлă сойуслă патшалăх, тепри пур тĕнҫери капиталисăмлă патшалăхсем, пĕр йенҫе пуршуаҫипе капитал, ҫав йенҫех тĕрлĕ суйа сотсиалисҫĕсен 2-мĕш Интернатсионал тенĕ пĕрлешĕвĕ, тепĕр йенҫе ҫăн ĕҫлесе пурăнакан пролетариатăн пĕрлешĕвĕ Коммунислă III-мĕш Интернатсионал. Ҫапла хире хирĕҫ тăракан икĕ вăй-хăват хушшинҫе пĕтĕм тĕнҫере пĕр ҫарăнми кĕрешӳ пыраť. Ҫав кĕрешӳре пур пусмăрлă халăхсемпе пур колоҥисем [пролетариатпа пĕрле кĕрешеҫҫĕ. Ҫапла пусмăрлă халăхсемпе колоҥисем те империалисăма хирĕҫ ҫĕкленсе хускални питĕ пысăк ĕҫ: епир малтах каларăмăр—капиталисăм мĕн пур хăне кирлĕ ҫĕрĕ хатĕрсене колоҥисенҫен ҫеҫ илсе тăраť, ҫав ҫĕрĕ хатĕрсене илсе тăрасси пĕр вăхăта ҫарăнсассăнах унăн хапрăкĕсем—савăҫĕсем сӳнсе лараҫҫĕ. Капиталисăм пур хăне кирлĕ сĕткене колоҥисене ĕмсе ҫеҫ туйанаť, ҫав колоҥисенҫен ҫеҫ туртса вăй илсе тăраť. Пĕр те пĕр кун тĕнҫери пур колоҥисемпе пур пусмăрлă халăхсем тĕнҫери капиталисăмпа империалисăма хирĕҫ пĕтĕмех тапрансан, хускалсан, хумханса пĕрлешсе хăватлă пăлхав кăларсан—капиталисăм пĕтетех, ун ҫухне ăна тĕнҫен орканисатсиленнĕ пролетариаҫĕ пуса йăвантаратах. Ҫакна питĕ лайăх пролетариатпа унăн ҫăн револҫутсилĕ парҫийĕсем—комунислă парҫисем те лайăх ҫухлаҫҫĕ, ҫакнах пур пусмăрлă колоҥиаллă халăхсем те питĕ аван ҫухласа тăраҫҫĕ, ҫавăнпа вĕсем пĕрне пĕри алă парса хăйсен тĕнҫере пĕртен пĕр тăшманне капитала хирĕҫ кĕрешеҫҫĕ.

Коминтерн ĕç халăхĕн, комунислă парţисен пĕрлешĕвĕ. Унтан пуçне тата хресţен хура халăхĕсене пĕрлештерсе тăракан хăват пур, йăна Хресţен Интернатсионалĕ теççĕ. Тĕнţери Хресţенсене Пĕрлештерекен Канаш теççĕ. Çак пĕрлешӳлĕ вăй пĕтĕм тĕнţере сапаланса пурăнакан хресţенсене, мул пусмăрĕ айĕнţе тапаланса пурăнакан çĕр халăхĕсене, хура халăхсене, ытларах та тата çуклăхпа йухăнса çитнĕ пусмăрлă халăхсен хресţенĕсене пролетариат çулĕпе йертсе пырать, вĕсене ţăнтанран ţăн ирĕклĕх çулĕпе йертсе пырать. Çавăнпа та пур пусмăрлă хура халăхсен ĕмĕţĕпе шанţăкĕ тĕнţе пролетариаţĕ çинţе, унтан çав пролетариат пулăшнипе хăйсен аталаннă ţăмăртаннă перлешӳлĕ вăй—хăваţĕ çинţе çеç пулмалла, вĕсен малалла тилмĕрсе пăхакан куçĕ III-мĕш Интернатсионал çинţе, Хресţенсен Интернатсионаллă Канашĕ çинţе çеç пулмалла, вĕсен ţĕрине хускатса сиктерекен сăмахсем çаксем çеç пулмалла: Пĕтĕм пролетарисем, пĕрлешĕр! Пĕтĕм тĕнţери пролетарисемпе пĕтĕм тĕнţери пусмăрлă пурăнакансем, пĕрлешĕр!

# IV-МӖШ ТАТӐК (ВӖҪӖ).

## Авалхи пусмӑртан йулнӑ сийенсене пӗтерес тӗлешӗпе ҫӑвашсем малашне мӗн тумалли ҫинҫен.

**1. Пусмӑр сӗрӗмӗ хӑвӑрт сирӗлеймӗ.**

Ӗмӗрхи пусмӑр сийенӗ ҫӑваш хура халӑхӗн ӗнси ҫинҫе халӗ те питӗ хӑрушӑн куԥаланса ларать. Ҫав сийен ӑспа ҫавӑрса илме ҫук пысӑк, вӑл хисеплесе кӑларма ҫук тӗрлӗ тӗслӗ. Ҫӑваш пурӑнӑҫне хӑш йенҫен кӑна ан пӑх—пур тӗлте те, кирек хӑҫан та авалхи пусмӑр йӗрӗ касса палӑрса тӑрать. Ҫав пусмӑр сийенне пур тӗлешӗпе те сиресси питӗ пысӑк ӗҫ, вӑрахӑн ҫеҫ пулӑнса тӑмалли ӗҫ, вӗҫне ҫитиҫҫен малашне ҫеҫ пулӑнса тӑмалли ӗҫ. Пӗр йенҫен ҫакна епир малтах тӗрӗслерӗмӗр: ӑна епир натсилӗ пусмӑр класслӑ пусмӑр пӗтсен, капиталисӑм пӗтсен ҫеҫ пӗтме пултарнине кӑтартнипе тӗрӗслерӗмӗр; тепӗр йенҫен капиталисӑм йӗрки пӗтсен те вӑл хӑварнӑ сийенсем пурӑнӑҫран ҫасах ҫухалса пӗтес ҫукки тӳрех паллӑ: ҫуклӑхпа, тӗттӗмлӗхпе, сывлӑхсӑрлӑхпа хавшанса ҫитнӗ пусмӑрлӑ халӑхсем пусмӑр пӗтсен те пайтахҫен ытти ирӗкре пурӑннӑ халӑхсемпе танлашма пултараймӗҫ. Ҫавӑнпа канаш ирӗкӗ пур ҫинҫе, сотсиалисӑмпа комунисӑм самани тапраннӑ вӑхӑтра натсилӗ пусмӑр ҫинҫен шухӑшлама та пӑрахма кирлӗ теме йурамасть, мӗшӗн тесен ҫав пусмӑр пӗтсен те унӑн йулашкиййӗсем, унтан шӑтса пулнӑ сийенсем авал пусмӑрта пурӑннӑ халӑхсене ҫителӗклӗ хытӑ аптӑратса тӑрӗҫ. Нумай ҫӗрсем ҫул тӑршӗпе пусмӑрта пурӑннӑ ҫӑваш халӑхӗ те ҫав пусмӑрӑн сийенлӗ йулашкиййӗсенҫен нумай ӗмӗрсем иртмесӗр хӑтӑлаймӗ. Ак мӗшӗн пусмӑр сийенӗсене пӗтерес ӗҫ ҫӑвашсемшӗн питӗ пысӑк ӗҫ, ак мӗшӗн ӑна пирӗн витӗр пӗлсе тӑрас пулать. Ку кӗнекере ҫав ӗҫ ҫинҫен тӗплӗ калама вырӑн ҫитмерӗ, ҫавӑнпа

епир, ӳлмӗрен ун ҫинҫен уйрӑм кӗнеке тухассине шанса тӑрса, халӗ ҫи кирлӗ йапаласем ҫинҫен ҫеҫ пӗр-ик сӑмах калама шут тӑватпӑр.

**2. Ҫӑвашсене натсилӗ пусмӑр хӑҫан, унтан мӗнле майпа лӑскама тытӑнни ҫинҫен.**

Ҫӑваш историйӗ—пусмӑрлӑ халӑх историйӗ. Ҫӑваш йаҫӗ историре сыру ҫине сырӑнса палариҫҫенех ҫӑваш ӑрӑвӗ-йӑхӗ йут халӑхсен пусмӑрӗпе паллашмалла пулнӑ. Пин ҫул кайа Пӑлхари патшалӑхӗнҫе пурӑнӑҫ хуҫисем: улпутсем, тӳресем, ҫарпуҫлӑхсем, унтан хуласенҫи сутилӳҫӗсем пулнӑ. Ҫӑваш тенӗ ӑрулӑ ушкӑнсен йӑхӗсемпе плӗмисем хура халӑх, ҫӗр ӗҫлекен, хура ӗҫ ӗҫлекен халӑх вырӑнӗнҫе пурӑннӑ. Улпутсемпе тӳресем, унтан сутилӳҫӗсем ҫӑвашсенҫен те унтан ытти тӗрлӗ халӑхсенҫен те пулнӑ-ҫав си ҫӑваш ҫӗлхинҫен уйрӑмрах ҫӗлхепе калаҫнӑ, унӑн арапсенҫен, хасарсенҫен, перссенҫен йышӑннӑ пурӑнӑҫ йӗрки, куҫтурӑ пулнӑ. Ҫав куҫтурӑ ҫумне ҫӗр халӑхӗ, улпутсене парӑнса пурӑнакан хресҫен халӑхӗ сыпҫӑнма пултарайман, мӗшӗн тесен вӑл йе ҫуралӑ, йе пусмӑрлӑ пурӑнӑҫпа пӑнҫӑхса пурӑннӑ. Патшалӑхра влаҫа тытса тӑракан сисем хӑйсем те хура халӑхран уйрӑмрах пулас тесе, хура халӑха уйрӑм, ҫуралӑха ҫеҫ тивӗҫлӗ йӑх вырӑнне картас тесе пур куҫтурӑ ӗҫӗн йӗркине: ҫӗлхене, сырӑва, йӑласене халӑх вӗсенҫен йутшӑнмалла ҫулпа йама йури тӑрӑшнӑ. Ӑслӑлӑх кӑтартнипе, Пӑлхари хулисенҫе хӑшӗ ҫӑвашсемех, хӑшӗ йут халӑхсен сыннисем пурӑннӑ, вӗсем ҫӑваш ҫӗлхи йевӗрлӗ, анҫах ҫӑваш ҫӗлхинҫен уйрӑмрах ҫӗлхепе калаҫнӑ, вӗсен ҫав пӑлхар йе тата арап ҫӗлхипе сыракан сырулӑх пулнӑ, ҫав хула сыннисем, вӗсемпе пӗрле ҫӑвашсен йалсенҫи тӗрлӗ ҫӗр хуҫисем арапсенҫен йышӑннӑ тӗн йӗркипе пурӑннӑ. Пӑлхарири ҫӳлти сисен ҫӑваш хура халӑхӗнҫен, ытти хвин хура халӑхӗсенҫен: ҫармӑссенҫен, вуҫексенҫен, мӑкшӑсенҫен ытти йӑхсенҫен те хӑне уйрӑм ҫӗлхелӗ куҫтурӑ пулни ҫав хура халӑхсене туласа пурӑнма ҫеҫ пулӑшнӑ: ҫав уйрӑмлӑх ҫӳлти сисем уйрӑм ӑслӑ, вӗреннӗ, пур йапалана та пӗлекен, тӗнҫепе паллашса пурӑнакан сослови вырӑнӗнҫе хисепленессине пулӑшса тӑнӑ. Ҫапла ӗнтӗ ҫӑваш пурӑнӑҫӗнҫе натсилӗ пусмӑр шӑрши, йут куҫтурӑн пусмӑрӗн шӑрши тӗп авалранах сисӗнсе тӑрат.

Ҫав пусмӑр ҫӑваш ҫурӑмӗн шӑмми ҫине тутар саманинҫе пӗтӗмпех улӑхса ӳкет. Тутарсем Пӑлхарийе пӗтереҫҫӗ, ун вырӑнне

тутар патшалăхĕ туса хураççĕ. Тутарсем çав саманара пĕр вырăнта çĕр ĕçлесе пурăнма хăнăхайман халăх пулнă, вĕсем кĕтӳсем кĕтсе пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çӳрекен халăх пулнă, унтан вĕсем вăрçă кăларма, ытти халăхсемпе çапăçма йуратарах паракан халăх пулнă. Пăлхарийе вĕсем çапăçса вăйпа пăхăнтарнă, унтан тӳрех пĕтĕм славен йăхĕсене пуринђеп ытла пăхăнтарасшăн кĕрешме тытăннă. Çак вăхăтра ђăваш çĕр халăхĕн пурăнăçĕ питĕ нађара йулнă: унăн çĕршывне канĕçсĕр йӳрĕкçĕсем пуснă, тырă пуссисене выђăх кĕтĕвĕсем таптанă, йалсемпе хуласене çар пур йенђен те пусмăрланă. Ђăваш хура халăхĕ çак пусмăра тӳсеймесĕр темиçе хут хĕç-пăшал çĕклесе пăлхавăр тапратса кĕрешнĕ, пĕр вăхăтра тутарсен тĕп çарĕ Мускав йенне вырăссене хирĕç кайсан вăл пур тутар çар сыннисемпе вĕсен улпуђĕсене, тӳрисене те вĕлерсе пĕтернĕ. Çакна кура тутар ханĕсемпе вĕсен тарçисем тата пушшех хайарланнă: вĕсем пăлхарсен хулисене, ђăвашсен йалĕсене çунтарса çĕмĕрсе пĕтере пуçланă, пăлханакан таврари етемсене ађа-пăђа таранђен вĕлерсе пĕтерме тытăннă. Çав вăхăтрах пур таврари аван çеçенхирсене тутарсем йышăна пуçланă, пур аслăрах йухăм шывсене вĕсем хăйсен аллисене çавăрса илме тытăннă. Çапла ђăвашсем ирĕксĕрех пĕр йышăнса хăнăхнă çĕршыва пăрахса Атăл урлă каçса хĕвеланăçнелле йе сивĕ йенелле ђикĕнмелле пулнă. Хăшĕ ђăвашсем Муромпа Арсамас таврине çитиђђенех те тутар ханĕсен пусмăрĕнђен хăтăлас тесе тара-тара ӳкнĕ. Хусан патшалăхĕн саманинђе ђăваш хура халăхĕн пурăнăçĕ питĕ йурăхсăра йулнă: тутар ханĕсемпе мăрсисем, унтан вĕсене кура ђасах тутарланса кайнă ђăваш улпуђĕсем те питĕ çăткан пулнă, куланай илсе аптăратнă, çынсене çара илсе, унтан йалан вăрçа хăваласа аптăратнă. Ђăваш килти пурăнăçĕ те ĕлĕкхинђен ытларах пусмăрлă пулса тăнă: Хусан патшисемпе вĕсен мăрсисем пĕтĕм хăйсем çапăçса йышăннă çĕршыва хăйсен харпăрлăхĕ вырăнне, хăйсене çеç тивĕçлĕ ырлăх вырăнне хисеплеме тытăннă,пăхăнтарнă халăхсене вĕсен кăмăлне çеç курса пурăнмалла туса хунă. Çакна пула авалхи улпутпа патшалăх пусмăрĕ ик-виç хут ытла йывăрланнă. Ђăваш патшалăхĕнђе тĕп аслă ђĕлхе тутар ђĕлхи пулса тăнă, хуласенђе тутарсем çеç хуçа пулса тăнă, пур çӳлти сисем те йе тутарсем йе тутарланакан ђăваш, çармăс, мăкшă ытти вак халăхсен те улпуђĕсем пулнă, ђăвашсен хура халăхĕ йут халăх, вăрçăра тыткăна лекнĕ халăх

шутӗнҫе хисеплене пуҫланӑ. Пӑлхари саманинҫе ҫӑвашсен хӑйсен патшалӑх пекки пулнӑ, малашне ҫӑвашсем натсилӗ патшалӑх тума пултарнӑ ӗмӗтсем курӑнса тӑнӑ. Ҫак ӗмӗтсене Хусан патшалӑхӗ пӗтӗмпех сӳнтернӗ. Вырӑс патшисен аллине кӗрсе ӳксен те тутар улпуҫӗсемпе мулҫисем револютсиуммӗнҫенех ҫӑваш хура халӑхне пусмӑрта тытма тӑрӑшнӑ, вӗсем ҫӑвашсене хӑйсен хура халӑхӗ, вӗсене пӑхӑнса пурӑнмалла халӑх выранне хисепленӗ, ҫӑваш хура халӑхне хӑйсен ҫине кӑна ӗҫлеттерсе пурӑнас тесе вӗсем ӑна вырӑссенҫен уйӑрса тутар хура халӑхӗпе хутӑштарса пӗтерес тесе тӑрӑшнӑ, ҫапла тума ӗлӗк вӗсем ҫи малтан тӗн урлӑ пултарнӑ, ҫавӑнпа вӗсем ҫӑвашсене вулӑсӗ—вулӑсӗпе тутарлантарнӑ. Йулашки саманара, капиталисӑм саманинҫе тутарсен ҫӳлти сийӗсен уйрӑм империалисӑмлӑ вӗрентӳ пулнӑ, ӑна панисламисӑм йе панҫуркисӑм тӗҫҫӗ: вӑл пур ҫӳрк ӑрӑвӗнҫен йӑхнӑ халӑхсене пӗр тӗне ҫавӑрса, пӗр халӑха ҫӑмӑртаса, вӗсенҫен уйрӑм аслӑ империалисӑмлӑ патшалӑх тума тӑрӑшаӗ.

Ҫи ҫӑнтан хӑрушӑ пусмӑра ҫӑвашсем Мускав патшисене пӑхӑнсан кӗрсе ӳкеҫҫӗ. Хусан патшалӑхӗ пусмӑрпа аптӑратнине тӳсеймен йенне ҫӑвашсем малтан Хайар Иван ҫарне ҫӑкӑр-тӑварпа хирӗҫ тухса илеҫҫӗ, вӑрҫӑра ӑна пулӑшу парса тӑраҫҫӗ, хӑйсем те хан ҫарӗпе хирӗҫ ҫапӑҫаҫҫӗ. Анҫах ҫасах вӗсен ӳкӗнӗҫе йулмалла пулаӗ. Мускав патшисем тата паттӑртарах пулаҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсем пусмӑр мӑйкӑҫне тата хытӑрах пӑрса ҫыхаҫҫӗ. Мускав патшисем пӗтӗм тӗнҫене хӑйсене пӑхӑнтарма тӑрӑшаҫҫӗ, темиҫе ҫӗр ҫул тӑршӗпе ҫавӑнпӑн тӑрӑшса ҫӑнахах та тӗнҫен ултӑмӗш пайне ҫавӑрса илеҫҫӗ, хӗвелтухӑҫнелле Китайпа Йапун ҫикисене ҫитсе перӗниҫҫен пур йут халӑхсене те пӑхӑнтараҫҫӗ. Ҫав пӑхӑнтару вӑрҫса ҫапӑҫмасӑр пулма пултараймасӗ, ҫавӑнпа Мускав патшисен пӗр тӑтӑш вӑрҫӑ кӑларса ҫеҫ пурӑнмалла пулат, ҫавӑнпа вырӑссен патшалӑх йӗрки те хайар, усал, ытти халӑхсене хӗсӗрлекен йӗрке пулаӗ. Унтан вырӑс патшалӑхӗ сарӑлса аслӑланса пыни патшасен кӑмӑлӗнҫен кӑна килмен, пуринҫен ытла вӑл вырӑс йӑхӗ хытӑ ӗрҫесе паттӑрланса пынинҫен, ҫав вӑхӑтрах унӑн ҫӗршывӗ тӑвӑрланса пынинҫен килнӗ. Вырӑс племисене ирӗклӗ ҫӗршыв кирлӗ пулнӑ, ҫав ҫӗршыва вӗсем хӗвелтухӑҫӗнҫе шыраннӑ, мӗшӗн тесен хевеланӑҫӗнҫе Европпӑра халӑх авалах тӑкӑс пурӑннӑ. Анҫах хӗвелтухӑҫӗнҫе те пурӑнма меллӗрех ҫӗрсене унта ӗмӗртен пурӑнакан халӑхсем йышӑннӑ пулнӑ; ҫав халӑхсене хӑ-

валаса куҫармасӑр, пусмӑрласа хӗсмесӗр вӗсем лайӑх ҫӗршыв йышӑнма пултарайман. Ҫакӑнтан колоӈисатсилӗ тенӗ усал политикӑ йӗрки тухса кайнӑ-вӑл пур лайӑх, усӑлӑ ҫӗршыва вырӑс колоӈисаторӗсене ҫеҫ пама тӑрӑшнӑ. Унтан колоӈисатси пуҫӗнҫе ҫасах вырӑс улпуҫӗсем тӑнӑ, вӗсем хӑйсен хресҫенӗсемпе Мускав таврашӗнҫен хӗвелтухӑҫнелле ӑҫта кӑмӑл савнӑ ҫавӑнта куҫса ларнӑ, каламасӑр та паллӑ—вӗсен кӑмӑлӗ ӑҫта усӑ йе тупӑш нумай—ҫавӑнта туртнӑ. Унтан Мускав патшисем хӑйсен патшалӑх йӗрки тӗреклӗрех пултӑр тесе тӑрӑшмалла пулнӑ, йут халӑхсен хушшине пур тӗле те вырӑс колоӈисаторӗсене кӳртсе лартмалла, пур ҫар ҫӳремелли, тавар ҫӳремелли, мул выҫамалли ҫулсемпе вырӑнсене ҫав колонисаторсен аллине ҫеҫ памалла пулнӑ—ҫав ҫулсем авал аслӑ шывсем, ҫав вырӑнсем хуласем пулнӑ. Вырӑс колоӈисатсийӗ малта йут халӑхсем йышлӑн пурӑнман сивӗ ҫӗрсене хӗвелтухӑҫнелле Атӑл урлӑ каҫса Ветка таврине йышӑнаӗ, ҫак колоӈисатсийе хирӗҫ пӑлхарсем вӑрҫӑ кӑларса ҫапӑҫаҫҫӗ. Унтан пыра киле вырӑссем Ока шывӗ тӑрӑх анса вӑл Атӑла йухса тухнӑ таврана йышӑнаҫҫӗ, Ҫулхулана мӑкшӑсенҫен туртса илеҫҫӗ, Ҫулхулана мӑкшӑсен аллинҫен вырӑссене парасмар тесе каҫҫех пӑлхарсем ҫарпа Атӑл тӑрӑх улӑхса вырӑссемпе ҫапӑҫаҫҫӗ. Ҫапла Пӑлхари халӑхӗсем Атӑл таврине славен йӑхӗсем пуса пуҫласан вӗсене кансӗр пуласси͏не ӗлӗкех сиснӗ. Ӑна сисмесӗр тӑма та вӗсем пултарайман—вырӑс кнеҫӗсем тӗп авалтанпа вӗсен ҫӗршывне пыра-пыра ҫапӑҫнӑ, унтан Атӑл тӑрӑх вырӑс хусахӗсен ушкӑнӗсем йаланах кимӗсемпе анса Пӑлхари хулисемпе йалӗсене ҫаратнӑ. Вырӑс колоӈисатсийӗ Ҫулхула таврине урипе ҫӑнтан пуссанах—Атӑл айнелле малалла тӑсӑлса утма тытӑнаӗ. Вырӑссем хӗвелтухӑҫнелле те кӑнтӑралла та куҫса сарӑлнӑ ҫух ҫулран ҫул пӗр ҫарӑнми, анҫах йеррипен, унтан пӗр тӑтӑшӑн, кӳршӗ йалпа кӳршӗ йалсем пӗр пӗрипе ҫыхӑнса тӑрса, пӗр пӗрне куҫран ҫухатмасӑр куҫса пынӑ. Сасартӑк татӑкӑн-татӑкӑн таҫта айакка йут ҫӗрсен ӑшне кӗрсе ларма вӗсем пултарайман—апла шала кӗрсе кайсан вӗсене таврари йут халӑхсем хупӑрласа илсе вӗлерсе пӗтернӗ. Ҫавӑнпа вырӑс колоӈисатсийӗ хӗвелтухӑҫнелле йеррипен шуса пынӑ. Ҫӑваш тӗп ҫӗрӗ патне вырӑссем XVI-мӗш ӗмӗрӗн пуҫламӑшӗнҫе пырса ҫитнӗ. Ҫӑвашсене колоӈисаторсенҫен уйӑрса хӳпӗрлесе тӑракан пӗртен пӗр ҫӗршыв хӑваҫӗ Сӑрӑ шывӗпе Сӑрӑ сӗмвӑрманӗ пулнӑ. Сӑрӑ шывне хӑйсен аллине илмесӗр колоӈисаторсем ҫӑваш ҫӗрӗ

çине пусма пултарайман, Атăл тăрăх та айалалла анма пултарайман-мĕшĕн тесен Сăрăран айалалла Атăлăн икĕ йенђе те тăшмансем ђăвашсемпе çармăссем пурăннă. Çавăнпа колођисаторсем ђи малтан Сăрă шывне çавăрса илнĕ. Истори кăтартнипе, 1523-мĕш çулта Сăрă Атăла йухса тухнă вырăнта вырăссем çармăссемпе унтан ђăвашсемпе питĕ хăрушă çапăçнă, çав çапăçура вырăссем çийеле тухнă та çапăçнă вырăнта Васиђсурск йатлă хула тунă. Çапла ĕнтĕ пирĕн таврана колођисатси йухăмĕ пырса перĕннине пĕлтĕр тăвата çĕр тулђĕ. Сăрă айлăмне хăйсене аллине илсен—колонисаторсем ђăваш çĕрне икĕ йенђен хупăрласа çавăрса илеççĕ: Сăрă тăрăх улăхса Йетĕрне, Кăрмăш, Улатăр таврашĕнђи çĕрсене çавăра—çавăра илеççĕ, çав вăхăтрах вĕсен тепĕр йўпĕ Атăл тăрăх йеррипен анса Атăл хĕррисене йышăнса пырай. Хусана тутарсенђен илиђђенех колођисатси хумĕсем ђăваш тĕп çĕрне пĕтĕмпех таптаса иртсе кайаççĕ: 1553-мĕш çулта Хусана илиђђен ик çул малтан авалхи ђăваш хули вырăнĕнђе колођисаторсем Свийашск хули туса хураççĕ. Çапла ђăвашсем Хусан патшалăхĕ пĕтеђђенех вырăс колођисатси айне йулнă, çавăнпа та вĕсем ирĕксĕрех тутарсемпе вырăссем кĕрешнĕ ђух вырăссен майлă пулмалла пулнă, мĕшĕн тесен хирĕç тăрсан вĕсене колођисаторсем нимĕн мар пĕтерсе пăрахма пултарнă. Хусана илсен вырăс колођисатсийĕ Атăл тăрăх малалла йарăнай, пĕр аллă çул хушшинђе вăл Улатăр, Пăва, Тетĕш, Спас, Ђистай тавринђи ђăвашсене хупăрлай, унтан тата пĕр аллă-çĕр çул хушшинђе колођисатси йухăмĕ Ђĕмпĕр, Самар тавринђи, Пушкăрт çĕрĕнђи ђăвашсен урлă иртсе кайай. Çапла пĕтĕм ђăваш халăхĕ колођисатси айне йулни ĕнтĕ 250—300 çул иртрĕ.

Колођисатси ђи малтан йут çĕре пуссанах ăна пăхăнтарса тĕреклĕленме тăрăшай. Çав тĕреке вăл малтан хĕç-пăшалтан, унтан çартан çеç кĕтсе тăрай. Çавăнпа вăл пур ђăваш хулисенђен ђăвашсене, ытти вак халăхсемпе тутарсене хăваласа çав хуласене вырăс крепăçĕсем тăвай, çапла авал ђăваш хулисем: Шупашкар, Йетĕрне, Çĕрпў, Ђикме, Сĕве ыт. те вырăс хулисене çавăрăнаççĕ. Унтан çав хуласем халăх пăлхавне хирĕç тĕреклĕ тăма пултарђăр тесе хуласен йĕритавра ларакан ђăваш йалĕсене хăваласа унта вырăс хусахĕсене, тĕрлĕ çар çыннисене куçарса вырăс йалĕсене лартай. Унтан пур пысăкрах Çавал пек шывсем тăрăх та вăл ђăвашсене хĕсĕрлесе куçтарса вырăссене йышăнтартарай. Çапла

пăхăнтарнă çĕре колонисатсилеме ӡи малтан патшалăх тăрăшаҥ. Унтан вырăс хресӡенĕсем нумайшĕĕ хăйсен ирĕкĕпе те, пуринӡен ытла улпутсен пусмăрĕнӡен хăтăлас тесе ӡăвашсен хушшине пыра-пыра лараççĕ, вĕсене те патшалăх ӡи лайăх çĕр шывсене йышăнма пулăшаҥ. Йулашкинӡен нумай ӡăваш çĕрĕсене улпутсемпе мăнастырсем йышăнаççĕ те унта пусмăрлă вырăс хресӡенĕсене куçараççĕ. Пыра киле пĕтĕм ӡăваш çĕршывне патшасем хăйсен харпăрлăх шутне картаççĕ, ӡăваш халăхне хăне те патшалăх йе патшасен харпăрлăх вырăнне картаççĕ.

Колоӈисатси пĕр хĕç-пăшал вăйĕпе çеç тĕреклĕ пулаймаст, çавăнпа та вăл аван çĕршывсене пăхăнтарнă халăхсенӡен туртса илсе колоӈисаторсене ӡурлăх йенĕпе тĕреклĕлетме тăрăшаҥ. Çав сăлтавпах шăнăçнă—шăнăçманах колоӈисаторсем пур таврари суту-илĕве хăйсен аллине илме тапăнаççĕ: ӡăвашсене, ытти вак халăхсене те хăйсем тунă таварпа та хуласенӡе йе пасарсенӡе сутса илсе тупăш тумалла мар тийекен саккунсем тухаççĕ, çав саккунсем тăрăх пур таврари суту-илӳ колонисаторсен аллинӡе çеç пулмалла пулнă. Унтан колонисаторсем таврари арман пек тĕрлĕ тупăш паракан меслетсене йе ултавна, йе тĕне кĕменшĕн тесе, йе тӳрех ирĕксĕрлесе ӡăвашсенӡен туртса илсе пĕтереççĕ. Унтан патшалăх ӡăвашсем пĕтĕмпех колоӈисаторсен суту-илӳ мулĕн мăйкăçĕпе пăвăнӡăр тесе вĕсене вырăс хресӡенĕсенӡен икшер хут ытла куланай тӳлеттерсе вăйсăрлатаҥ, вĕсене тĕрлĕ усламçăсен аллине парăма кӳртсе пĕтерет. Йулашкинӡен Петĕр патша вăхăтĕнӡе ӡăвашсем пăлхавăр кăларма хĕç-пăшал ан тăвайӡăр тенĕ сăлтавпа пур ӡăваш йалĕсенӡи тимĕрçĕсен лаçĕсене ипсе пĕтереççĕ, тимĕрçĕсене ирĕксĕр мопилисатсилесе, ытти ăстасене те мопилисатсилесе Питерпе Петеркох хули тума, унтан Тон шывĕсенӡе тĕрĕксемпе вăрçма карапсем тума пуçиле хăваласа кайаççĕ. Çапла ӡăвашсен хушшинӡе пĕтĕмпех ăсталăх сӳнсе лараҥ. Унтан ӡăвашсене нумайĕшне салтака ĕмĕр таврăнми пуçиле илсе кайаççĕ, хысна ĕçне ĕçлеттерсе, Мускава ăлав туртартарса аптăратаççĕ. Хăш-хăш ӡăваш йалĕсене Урал хапрăкĕсемпе савăӡăсен çумне, тавар савăӡĕсен çумне, мăнастырсен çумне ĕмĕрлĕхе пусмăра çырса вĕсемсĕн ĕçлеттерсе пурăнтараççĕ, Самар таврашĕнӡе икĕ пин ӡун ӡăваш улпут хресӡенĕ те пулса пăхаҥ. Унтан çак саманара ӡăвашсем ӡунлăх куӡтурă тĕлешĕпе питĕ усал асапа йулаççĕ: ӡăваш ӡĕлхи, йăлисем, тумĕ, унăн авалхи тĕнĕ—пурте мăшкăлӡăк вырăнĕнӡе

пулаť. Çак йенђен ытла та ирсĕр айкашакансем ђăвашсен хушшинђи миссионерсем, унтан тÿресемпе тĕрлĕ тийексем пулаççĕ: вĕсем сутра, ђиркÿре, çĕр виçнĕ ђух, куланай пухнă ђух, патшалăх ĕçне ĕçлеттернĕ ђух, патшалăх вырăнĕсенђе тĕрлĕ ĕçсене тунă ђух вырăсла пĕлмен, çырăва пĕлмен ђăваш хура халăхне сăпса пек сăхса, сĕлек пек ĕмсе пурăнаççĕ.

**3. Капиталисăм саманинђи пусмăрлăх.**

Çак саманара та пусмăрлăх ђăваш хресђенне ђи малтан пурлăх йенĕпе туласа тăраť. Капиталисăм аталаниђђен ђăваш хресђенĕсем патшалăхпа патшасен çемйи çине ĕçлесе пурăнаççĕ. Раççейри хресђенсене улпутсен пусмăрĕнђен «ирĕке» кăларсан ђăвашсем те çав суйа ирĕке тухнă пек пулаççĕ. Ђăвашсене çав суйа ирĕке çĕр виçепе çеç парса кăлараççĕ, лайăх çĕрсене, çарансене, вăрмансене пурне те тенĕ пекех хыснана касаççĕ, çав хресђене панă çук çĕршĕн хресђен çине ĕмĕр пĕтми парăм хураççĕ. Унтан вак халăхсене ытла та пусмăрлакан империалисăмлă патшалăх куланай тÿлеттерсе хресђене пĕтĕмпех йапăхтараť. Капиталисăм аслăланнăçем мул Мускав таврашĕнђе аслăланса ђăмăртанаť, çав мул пирĕн мĕн пур çĕршыв сĕткенне айакран туртса тăраť, пирĕн çĕршыва колоњийе çавăраť. Авал Шупашкар таврашĕнђе саманине кура. Ђулхула таврашĕнђи пекех промăшлĕнăç пулнă: нумай тир савăђĕ, пысăк армансем, вăрман савăђĕсем, ђан савăђĕсем йышлă пулнă. Паршăсемпе пăрахутсем пăспа çÿреме тытăнсан, ђукуп çулсем хывăнсан—пирĕн таврари пур аталанма тытăннă промăшлĕнăç меслеђĕсем сÿнсе лараççĕ, пур ђăвашсем туса кăларнă тавар йÿн хакпа ђĕррĕн хаљђен айакка леçĕнсе тăмалла пулаť: тырă пĕрђĕ хаљђĕн, тир, çăм, вăрман туса çирĕплетмен хаљђĕн çеç сутăнса тăраť. Ђăваш çĕрĕнђе сутилÿлĕ мул, усламçăсен мулĕ ĕçлет—вăл йут çĕрсене промăшлĕнăç капиталĕ ваљђи ђĕрĕ хатĕрсем çеç леçсе тăраť. Çакна пула ђăваш çĕрĕнђе промăшлĕнаç аталанаймаст, пролетариат аталанаймаст, натсилĕ пуршуаçи те ђăмăртанаймасť, çавăнпа натсилĕ пуршуаçи тăвакан натсилĕ куљтурă та тапранаймаст. Политиккă йенĕпе ђăвашсем ытти вак халăхсемпе хресђен хушшинђе те уйрăмрах сослови вырăнĕнђе пурăнмалла пулаççĕ: вĕсем çĕмствăсене хăйсен аллине илме пултараймаççĕ, унта ĕçлеме те пултараймаççĕ, кооперативсенђен вĕсене пăраççĕ, вулăсри йе йалти ĕçсене те хайсене туса тăма вĕсене ирĕк памаççĕ — вĕсем йутран

килнĕ улпутсен, семски наҫалниксен, приставсемпе уратниксен аллинҫе пулаҫҫĕ. Ҫăваш хресҫенĕсем кăшт та пулин хăйсем пурăнăҫĕпе кăмăлсăртарах пулнине кăтартсанах патша тарҫисем «ҫăвашсем патшалăх тăшманĕсем, вĕсем уйăрăлма ҫеҫ пăхаҫҫĕ», тесе елеклесе политсипе шантармерийе хĕтĕртеҫҫĕ. Куҫтурă тĕлешĕпе те ҫăвашсем хисепсĕр нумай йенҫен пусмăрта пурăнаҫҫĕ: вĕсене тăван ҫĕлхепе шкулсенҫе пирвайхи ҫул вĕренмелĕх, ҫăвашла пуквар ҫеҫ вуламалăх ирĕк параҫҫĕ, хысна та ҫемствăсем те ҫăвашсен хушшинҫе шкул сахалтарах уҫаҫҫĕ, йури ҫăваша ытларах тĕттĕмлĕхре пурăнтарма тăрăшаҫҫĕ, шкулсенҫе вĕрентекенсене, пупсене хулари вак вырăс пуршуаҫирен тухнă етемсене хума тăрăшаҫҫĕ, ҫăвашсен хушшинҫе аслăрах шкулсем уҫмаҫҫĕ, аслăрах шкулсенҫе вĕренсе тухнă ҫăвашсене ҫăваш хушшинҫе ĕҫлеме ирĕк памаҫҫĕ, ҫăвашла хаҫатсем, шурналсем, кĕнекесем кăларма ҫараҫҫĕ. Ҫакна вырăс улпуҫĕсемпе вырас пуршуаҫи йури пĕлсе тăрса тунă, мĕшĕн тесен ҫăваш халăхĕ мĕн ҫухлĕ тĕттĕм, ҫавăн ҫухлĕ унăн тирне сўме меллĕ пулнă. Куҫтурă йенĕпе ҫăвашсене пусмăрлас ĕҫĕн пуҫĕнҫе авалхи пекех пупсемпе миссионерсем пулнă—вĕсем улпутсемпе пулшуаҫийĕн кĕрĕшнĕ тарҫисем пулнă.

## 4. Ҫăвашсем халăх ирĕклĕхĕшен кĕрешни.

Йепле ҫăваш хура халăхĕ йунпа тар тăкса пурăннă, ҫавăн ҫухлех вăл хăй ирĕкĕшĕн тармакланса кĕрешнĕ. Тĕп авал та, кайарахпа та ҫав кĕрешĕвĕн пуҫĕнҫе пусмăрлă хресҫен халăхĕ, ҫăваш хура халăхĕ тăнă. Тĕп авал ҫăвашсем мĕн ҫухлĕ, йепле майпа кĕрешни ҫинҫен пире истори сахал калаҫ, ҫапах историрен паллă: XIII-мĕш ĕмĕртех ҫăвашсене тутарсем пусмăрласанах вĕсем питĕ вăйлă пăлхавăр тапратса пĕр вăхăтра хансен влаҫне ўкерсе пăрахнă, ҫавăншăн тавăрса тутар ҫарĕ ҫăвашсене йалĕ-йалĕпе вĕлерсе пĕтернĕ. Вырăссем Хусана илес тенĕ уммĕн те Ар ҫăвашĕсем хан патне хĕҫ-пăшалпа пырса ăна вырăссемпе килĕшме хушнă. Ҫапла истори пире ҫăвашсен аллинҫе хĕҫ-пăшал выҫанине, вĕсем авал йун тăкса хăйсен ĕҫĕшĕн тăма пултарнине пĕлтерет. Ҫавнах ҫăвашсем нумай хут вырăс ҫарĕпе тытăнсах вăрҫса кĕрешни те пĕлтерет. Ҫак вăхăтра ҫăвашсем пуринҫен ытла ҫĕршывшăн, унтан ҫĕр ĕҫлеме канлĕх илесшĕн кĕрешнĕ. Ҫак саманара ҫăваш ҫурисемпе, пусмăрлă хресҫенсемпе пĕрлешерех ҫăваш улпуҫĕсем, тĕрлĕ ҫĕр хуҫисем те кĕрешнĕ, анҫах тўрех паллă — вĕсем халăх ирĕкĕшĕн мар, хăйсене

тăван халăха хăйсем çеç туласа пурăнма ирĕк пултăр тесе кĕрешнĕ. Унтан çак саманара ђăваш улпутсен сийĕ те хресђен те ђăваш йăхĕ йут халăх пусмарĕ айĕнђе ан пултăр тесе, ђăваш халăхĕ хăй ирĕкĕпе пурăнмалла пултăр тесе кĕрешнĕ, тата çак саманара ђăвашсем Пăлхари саманине асăнса ирĕклĕ ђăваш патшалăхĕ çинђен те сĕмленсе кĕрешнĕ пулас. Кайарахпа Мускав патшисен аллине кĕрсе ӳксен те ђăвашсем хисепсĕр нумай кĕрешеççĕ. Нумай йунлă хăватлă кĕрешӳсем колоњисатси халăха туласа çаратса вăйсăрлантариђђен XVII-мĕшне XVIII-мĕш ĕмĕрсенђе пулнă, ытла та çав кĕрешӳ Раçинпа Пукатшов пăлхавĕсен вăхăтĕнђе пулнă. Çав пăлхавсенђе ђăваш хура халăхĕ тинĕс пек хумханса тăнă: вăл хăй пăшалсем, тупăсем тунă, пур тӳресене вĕлерсе пĕтернĕ, пупсене ђиркӳсен тăрринђен ывăтнă, Мускав йенђен пыракан çар ушкăнĕсемпе хирехирĕç тăрса çапăçнă, йут çĕрсене пăлхавăр йенне сулăнăр тесе йевђĕсем çӳретнĕ. Çак кĕрешӳре ђăваш хресђенĕсем вырăс хусахĕсемпе, пусмăрлă вырăс хресђенĕсемпе пĕрлешсе алтивĕççĕн тăрса кĕрешнĕ. Хура халăхпа, хресђенпе пĕрле çак саманара ђăваш улпуђĕсен тутарланса йе вырăсланса пĕтеймен ушкăнĕсем те кĕрешкеленĕ. Çав пăлхавсенђе нумай пин матур ђăваш пуçĕ çухалнă. Мĕшĕн пулнă-ши çав кĕрешӳ? Вăл хура халăх пусмăрлăхран хăтăлас тенĕ сăлтавпа пулнă. Çав кĕрешӳсенђи хура халăхăн прокрамми çыру çине тĕплĕрен çырăнса йулнă, çав çырăва вуласан епир ăнтан кайатпăр, ăна револђутси ыран пулас ђух çырнă пекех туйăнаŀ. Çав пăлхавăрсене пула патшалăх йĕрки кисренсе тăннине кура, Кĕтерине патша çĕнĕ саккунсем кăларас тесе пуху пухнă, çав пухăва Питĕре ђăвашсем те, тĕне кĕннисем те вырăс тĕнне йышăнманнисем те, кайнă. Çав ђăвашсем пĕрлешсе хăйсен кăмăлĕ суннине хут çине çырса панă, çав хут çинђе ђăвашсем ирĕксĕр туртса илнĕ çĕршывсене кайалла ыйтаççĕ, кирек мĕнле йапала та туса кăларса сутма-илме ирĕк ыйтаççĕ, сутра ђăвашла калаçма ирĕк ыйтаççĕ, ђăвашсемшĕн шкулсем ыйтаççĕ, ђăвашсен хушшинђи ултавçă тӳресен вырăнне халăх хăй суйласа хунă çынсене лартма ыйтаççĕ, хресђенсемшĕн сахал прођăнлă кивçен мул паракан панкăсем уçма ыйтаççĕ, усламçăсемшĕн сахал прођăн илмелле йĕрке кăларма ыйђаççĕ, ватăсемпе тăлăхсем вађђи хысна шуђĕпе вулăссенђе уйрăм çуртсем тума ыйтаççĕ. Çав икçĕр çула йахăн кайа ыйтнă йапаласене нумайĕшне епир халĕ тин тума тытăнатпăр. Çакă хура халăх тĕттĕм авалта та хăне мĕн

кирлине витĕр пĕлсе тăннине кăтартаҭ, анҕах хăй пĕлнине туса пыма унăн вăй ҫитменнине, унтан мел ҫитменнине кăтартаҭ.

Капиталисăм саманинҕе, ытларах та XIX-мĕш ĕмĕрĕн вĕҫĕнҕе, унтан XX-мĕш ĕмĕрĕн пуҫĕнҕе те ҕăвашсем натсилĕ пусмăрпа пĕр ҕарăнми кĕрешеҫҫĕ. Ҫак саманари кĕрешĕве епир лайăхрах пĕлетпĕр—ун ҫинҕен сыру витĕр кăтартса тăраҭ, унтан ҫав кĕрешĕвĕн нумай ĕҫĕсем епир астăвасса та пулнă. Унтан йулашки ĕмĕрте ҕăваш халăхне те капиталисăмлă пурăнăҫ йĕркийĕн сăнĕ ҫапа пуҫланипе, ҕăвашсем тĕрлĕ класслă сисене уйăрăлса пыма тытăннипе ҫăв кĕрешĕвĕн уйрăм йенĕсем, тĕсĕсем, сăлтавĕсем пĕр пĕринҕен касăларах палăрса тăраҫҫĕ.

Ҕăвашсен хушшинҕе вырăс парҕийĕсем ĕҫлеме тытăнаҫҫĕ, ҕăваш политтиккă парҕийĕсем те сиксе тухаҫҫĕ, 1905-мĕшпе 1917-мĕш ҫулхи револ̧утсисем хумханса кайсан ҕăвашсем те ҫав револ̧утсисене пĕтĕмпех ҕăмаҫҫĕ, хăйсем мĕн ыйтнине тӳрех палăртаҫҫĕ. Натсилĕ пусмăрпа, халăх ирĕклĕхшĕн кĕрешес тĕлешĕпе ҕăвашсен хушшинҕе нумай тĕрлĕ йухăм, нумай тĕрлĕ сулăнăҫ пулнă, ҫав йухăмсенпе сулăнăҫсен тĕп йăранĕсем ҫаксем палăрса тăнă (сылтăмран сулахайа): 1) ҕăваша авалхи тĕттĕмлĕхпе ҕуралăхрах пурăнма сунакан йухăм, ҫак хура йухăм патшасен ҫине кĕлтуса, унăн ирсĕр тарҫисен куҫĕнҕен ҫеҫ пăхса пурăнма суннă: ҫак йухăмпа йалти ытларах пăсăк кулаксем, нумайĕшĕ миссионерсемпе пупсем, вĕсен аллинҕе тăракан ҕиркӳ шкулĕсенҕе вĕрентекенсем, ҕăваш тавринҕи хуласенҕе вырăнта тăракан ҕăвашсем, ҕăвашсен вак сутилӳҫисем пынă, пумайĕшĕ вĕсем вырăссен Михаил Арханкел йе Вырăс Халăхĕн Сойусĕ тенĕ парҕийĕсенҕе тăнă йе вĕсене пулăшса тăнă; ҫак йухăм пусмăр сăнҕăрне пăрахасшăн мар—ăна авалхинҕен те хытăрах тĕреклĕлентересшĕн кĕрешнĕ: вăл хăй ҕăвашлăхран та туннă, вырăс руссихвикаторĕсене ҕăвашсене тулама пулăшса тăнă, нумайĕшĕ ҫавăн пек ҕăвашсем ҕăваш ҕĕлхи йурăхсăр, ҕăвашла ҫырулăх кирлĕ мар, шкул та кирлĕ мар тесе те вырас шурналĕсемпе хаҫаҕĕсенҕе ҫыраҕҕĕҫ, вĕсем Иван Йакăлҕă ҫинҕен те вăл ҕăваш халăхне пăсат, ăна вырăссенҕен уйрăм ҫулпа йараҭ, вăл хăҫан та хăҫан уйрăм ҕăваш патшалăхĕ те тăвасшăн пулĕ тесе елеклеҕҕĕҫ; ҫапла ҫак йухăм хура йунлă улпутсемпе политси тарҫи ҫеҫ пулни тӳрех паллă; 2) патшасен икĕ пуҫлă ăмăрткайăк ҫунаҕĕ айĕнҕех те ҕăвашсене ҫутăлантарма, асаплă пурăнăҫран лайăх пурăнăҫ ҫулĕ ҫине илсе тухма пулаҭ тенĕ йухăм; ҫак йухăм

пуҫӗнҫе Иван Йакӑлҫӑ тӑнӑ, ун хыҫҫӑн пуртех тенӗ пек ҫӑваш пупӗсем, нумайӗшӗ шкулсенҫе вӗрентекенсем, нумайӗшӗ хресҫенсем те пынӑ: ҫак йухӑмӑн тӗп шухӑшӗ—патшасен, унӑн аслӑрах тарҫисен кӑмӑлӗсене тупса ҫӑвашсен хушшинҫе нумайрах шкул уҫассинҫе, ҫӑвашсене аслӑрах шкулсене йарса ҫӑваш интелликентсине аслӑлатассинҫе, ҫӑваш ҫӗлхипе ҫырулӑхне хӑватлӑлатассинҫе тӑнӑ; Иван Йакӑлҫӑ ҫӑпахах та виҫӗ йулашки патшасемпе те: икӗ Елексантӑрсемпе те унтан 2-мӗш Микулайпа та курӑнӑҫса вӗсене йӑлӑнса, нумай вӗсен министӑрӗсене хӑй йенне ҫавӑрса хӑй ӗҫне нумай йенӗпе ҫийелле кӑларса пынӑ; ҫак йухӑм ҫӑваш ӗҫӗшӗн куҫтурӑ йенӗпе ирӗке тухасшӑн кӗрешес ӗҫре вӑл тӳрех патша тарҫисемпе пынӑ, ҫавӑнпа XX-мӗш ӗмӗрӗн пусламӑшӗнҫен пуҫласа хура халӑх/ҫак йухӑмран писе пуҫланӑ; ҫак йухӑм патшасен „ырӑ кӑмӑлӗ ҫине“ шанни йунӑш пулнине хӑй те курҫӗ: револютси ҫывӑхарнӑҫем патшалӑх ҫӑваш ҫутӑлануне ҫарса пыҫӗ, Иван Йакӑлҫа хӑне те пур ҫӑваш шкулӗсене те пӑхса тӑмалли вырӑнтан кӑларҫӗ, патша тарҫисене-ҫӑваш пупӗсене вӗсем ҫирӗм-вӑтӑр ҫул тӑршӗпе ҫӑвашран пӗрре те пулин ерхерей тума йӑлӑнса ыйтсан та ӑна тума та ирӗк памарӗ; ҫак йухӑм авал нумай усӑ та тунӑ: вӑл ҫӑвашсем вӗренес ӗҫӗн, ҫырулӑх тӑвас ӗҫӗн никӗсне хунӑ, анҫах унӑн сийенӗ те нумай пулнӑ, халиҫҫенех те йулнӑ: вӑл хӑйӗн куҫтурӑ сарас ӗҫе ҫиркӳ ӗҫӗпе пӑтратса уйрӑлми ҫыхса пынӑ, ӑслӑлӑх ҫуттине тӗн тӗтӗмӗ - сӗрӗмӗпе хупласа тӑнӑ; ҫак йухӑм патша хӑй пуҫне хӑй ҫисен, монархи пӗтсе ларсан ҫӑваш пурӑнӑҫӗнҫен пӑрахҫа тухса ӳкрӗ, ҫак йухӑм хыҫҫӑн халӗ те пыракан ҫӑвашсем ҫине ӗҫ халӑхӗ йумӑҫӑ-вӗрӳҫӗсем ҫине пӑхнӑ пекех пӑхать; 3) пуршуаслӑ йухӑм — ҫак йухӑм хыҫҫӑн аслӑ шкулсенҫе вӗреннӗ ҫӑвашсем, хуласенҫе те йалсенҫе те пысӑк мул пухнӑ ҫӑваш капиталҫисем, хуласемпе сутилӳлесе ҫутӑланса ҫивҫӗленнӗ йал кулакӗсем, семствӑсенҫе, кооперативсенҫе ӗҫлекен ҫӑвашсем пынӑ, вӗсенҫен хӑшӗ вырӑс катеҫӗсен парҫинҫе тӑнӑ, вӗсем ҫӑваш пек пусмӑрлӑ халӑхсем влаҫа патша аллинҫен пуршуаҫийе парсан ҫеҫ ирӗклӗрех сывлӗҫ тенӗ; ҫӑваш пуршуаҫийӗ ҫӑмӑртанса ҫитейменнипе ҫак йухӑм ҫинҫе, имшерке пулнӑ, пуршуаҫи хупланисан вӑл та хупланса ларҫӗ, ҫапах та ҫав йухӑм та пирӗн историре хӑйӗн йӗрне хӑварнӑ—ҫӑвашла „Хыпар“ хаҫатне кӑларма малтан вӑл тытӑннӑ; 4) вак пуршуаслӑ йухӑмсем: ҫаксем ҫӑваш хушшинҫе йышлӑ пулнӑ, 1905-мӗшпе 1917-мӗш револютси вӑхӑ-

тĕнҫе вĕсем пĕр вăхăтлăха ҫăвашсен хушшинҫи револитсилĕ хумха нăвăн ҫийел йенҫе палăрса тăнă, вĕсен хыҫҫăн пĕтĕм вăтам ҫăваш хресҫенĕ, йурлă хресҫенсем те, нумайĕшĕ йалсенҫи вĕрентекенсемпе унтан аслăрах шкулсенҫе вĕренекенсем пынă; ҫав йухăмсенҫен малта кăтартнă револутсисен вăхăтĕнҫе ҫăмăртанса ҫитнĕ орканисатсисем: Раҫҫейри сотсиалист-револутсионерсен парҫийĕн уйрăм натсилĕ ҫăваш орканисатсийĕ, пĕтĕм ҫăваш вĕрентекенĕсемпе ҫăваш халăхне ҫутăлантарасшăн тăрăшакансен сойусĕ, Пăвапа Йетĕрне уйесĕсенҫи вĕрентекенсен ушкăнĕсем, пĕтĕм Раҫҫейри хресҫенсен сойусĕн ҫăваш ушкăнĕсем; унтан 1917-мĕш ҫулта ҫăваш сулахай сотсиалист-револутсионерĕсен ушканĕ ҫителĕклĕ паллă пулнă, ҫак револутсире пĕр вăхăтлăха хăне уйрăм ҫăваш натсилĕ—сотсиалислă парҫи те орканисатсиленме тапăннă; унтан ҫăвашсен хушшинҫе ытти тĕрлĕ парҫисен ҫулĕпе уйрăм ĕҫлекенсем палăрнă: халăх сотсиалисҫĕсем, сотсиал-темократсем меньшевиксем, анархистсем, толстовтсăсем ыт. те; пĕри та ҫак йухăмсенҫен капиталисăм йĕркине пĕтересшĕн тăрăшман, апла пулсан ҫăваш халăхне пусмăртан хăтăлтарасшăн та ҫăнтан кĕрешме вĕсем пултарайман; ҫăвашсемпĕн вĕсем мĕн пурĕ кутурлă ахтономи ҫеҫ ыйтнă, анҫах капиталисăмпа империалисăм нихăҫан та ҫав ахтономийе парас ҫуккине, парсан та нимĕн усси те пулмассине вĕсем сисеймен; 5) комунислă йухăм—ҫак йухăм ҫăвашсен хушшинҫе 1918-мĕш ҫулта ҫăмăртанса орканисатсиленет, ҫăваш комунисҫĕсем Раҫҫейри Коммунислă Парҫи прокраммипе ĕҫлесе ҫăвашсен ĕҫлекен массисем натсилĕ пусмăртан хăтăлас сăлтавпа кĕрешессине пĕтĕм тĕнҫери пролетариат капиталисăм йĕркине пĕтересшĕн кĕрешнипе ҫыхăнтарса хураҫҫĕ, ҫав кĕрешӳре ҫăваш ĕҫ халăхĕн умĕнҫе утса пырса халиҫҫен сисĕнеймен ҫĕнĕ ҫул ҫине пырса тухаҫҫĕ: ҫăваш халăхне территорилĕ, оплăҫлă ахтономи туйантараҫҫĕ, ҫакă ҫăвашсем нумай ĕмĕрсем тăршĕпе сĕмленмен те ĕҫ пысăк историлĕ ĕҫ, ҫав ĕҫ йупа револутсийĕн ырлăхĕпе ҫеҫ пулса тăҫĕ.

**5. Ĕлĕкхи пусмăр сĕрĕмне пĕтĕмпех сĕвĕрĕлтерсе пĕтерес тесен пирĕн малашне тумалли паллă ĕҫсем. Пурлăх тĕлешĕпе.**

Хăш та хăш халăх ĕлĕкрен капиталисăм хуранĕнҫе пиҫсе тухайман—вăл патси йатне те тивĕҫлĕ йышăнайман. Капитала ҫĕнтерсен, капиталҫăсене пăрса пăрахсан—пролетариат капиталисăмăн пур пурлăх хăватне йышăнать: унăн промăшлĕнăҫне, техниккине, ăсталăхне. Колонисемпе кайа йулнă ĕлĕкхи пусмăрлă ҫĕр-

сем ҫӑнтан танлӑ пурӑнӑҫа промӑшленӑҫпа техниккӑ йенӗпе авал малта пынӑ ҫӗрсемпе танлашсан ҫеҫ курӗҫ. Ҫакна пӗлсе тӑракан ҫӑваш ӗҫ халӑхӗн пӗтӗм ӗмӗтленнӗ ӗмӗҫӗ интустрире пулмалла. Ҫӑваш ҫӗршывне интустрилеме ҫак капиталисӑм комунисӑма куҫас вӑхӑтлӑх саманинҫе ӗҫ халӑхӗпе хӑй ӗҫӗпе пурӑнакан хресҫен пӗрлешӳлӗ вӑйпа ҫеҫ тума пултарӑ. Пӗрлешӳлӗ мул пухасси, сотсиалислӑ капитал пуҫтарасси, ҫав мулпа—капиталпа хапрӑк-савӑтсем тӑвасси пирӗн пурлӑх йӗркийӗн никӗсӗ пулмалла. Ҫав ӗҫе патшалӑхӑн сутилӳлӗ вырӑнӗсемпе тӗрлӗ хуҫалӑх вырӑнӗсем унтан кооператсисем ҫеҫ тума пултараҫҫӗ, вӗсем пур мула, пур ҫӑваш ҫӗрӗнҫе выҫакан капитала ҫавӑрса илсе тӑрсан, ӑна уйрӑм мулҫӑсене памасӑр тӑрсан ҫеҫ тума пултараҫҫӗ. Ҫак ӗҫе тума тата патшалӑх капиталне ҫӑваш ҫӗршывӗ таврашне ӗҫлеме ҫӗнмелле: капиталисӑм йут ҫӗрсене пусмӑрласа ҫаратасшӑн колонисатсиленӗ, пролетариат вӗсене ҫӗклесе ура ҫине тӑратасшӑн, унта промӑшлӗнӑҫа аталантарасшӑн вӗсене колонисатсилеме пултарӑ. Малашнехи ӗмӗтсене шанҫаклӑ тӑвас тесен сывӑх ҫулсенҫех Сӗнтӗрвӑррин ҫи йывӑҫ каскалан инструкторсене хатӗрлекен шкула Ҫӑваш Промӑшлӗнӑҫ Техникумӗ тумалла, Ҫӗмпӗрти Йалхуҫалӑх Техникумӗ ҫумӗнҫе йалхуҫалӑхӗ тӑвакан ҫӗрӗ хатӗрсене йусакан промӑшлӗнӑҫӑн, унтан аласталӑхлӑ промӑшлӗнӑҫ пайӗ уҫмалла; пур ҫӑваш ҫӗршывӗнҫе хупӑнса тӑракан промӑшлӗнӑҫ меслеҫӗсене хута йамалла, ҫӑваш тавринҫи хапрӑк-савӑтсенҫе ӗҫлеме ҫӑвашсене хӑйсене вӗрентсе хӑнӑхтармалла, кашни вулӑсра пӗрре те пулин ӑсталӑх шкулӗ уҫмалла, йалсенҫи, вулӑссенҫи, уйессенҫи, оплӑҫри кооперативлӑ ушкӑнсем ҫи малтан мӗнле те пулса промӑшлӗнӑҫ меслеҫӗ тума тӑрӑшмалла, ҫӗр ӗҫне пӑрахас, ҫӗртен хӑпас тийекен ҫӑвашсене ытти ҫӗрсенҫи хапрӑксемпе савӑтсене шӑнӑҫтарма тӑрӑшмалла, вӗсене пӗрлешсе ҫӑмӑртанса пурӑнма, тӑван ҫӗршывпа ҫыхӑнса тӑма, ӗҫе вӗренсе ҫитсен киле таврӑнса пирӗн хушӑмӑрта ҫав ӗҫе тапратма пулӑшмалла.

Ҫӗр ӗҫӗ ҫӑваш халӑхӗн тӗп ӗҫӗ, анҫах вӑл пӗтӗмпех наҫар. Ҫак йенҫен ҫи пӑсӑкки—ҫӗр ҫитменни, ҫӗр тӑвӑрлӑхӗ. Ӑна пӗтерес тесен Атӑл тавринҫи ирӗк ҫӗрсене ҫӑваш хресҫенӗсене куҫма пама ыйтмалла, куҫма меллӗ ирӗклӗ ҫӗрсене пӗрлешсе Ҫипирте, Туркестанра шыранмалла, куҫакансене патшалӑх та халӑх хӑй те пулӑшу памалла. Атӑлпа Сӑрӑ таврашӗнҫи ҫӗмвӑрман уҫланкисене уҫса ҫӑваш хресҫенӗсене куҫармалла. Анҫах куҫасси йывӑр ӗҫ,

вăрахăн пулакан ĕç. Çĕр ирĕклĕрех пултăр тесен хресђен ытти йенђен тупăшлама хастарланмалла, пĕр çĕр ĕçĕ çине çеç тирĕнсе пурăнас йăлана пăрахма тăрăшмалла. Çапла хресђенрен çурри ытла çĕр ĕçĕнђен хăпса урăх ĕçпе пурăнма тытăнсан çеç ĕçлекенсемшĕн çителĕклĕ çĕр пулĕ. Опшинă йĕркине пĕтĕмпех салатмалла, ун вырăнне пĕрлешӳлĕ коллективлă хуçалăхсем тума тăрăшмалла, уйрăм хресђенсем хăйсен уйрăм ђăнтан хуçалăх тăвассине ђармалла мар. Тата та пин тĕслĕ йенђен йалхуçалăхне çирĕплетесси çинђен калама пулаĭ, анђах ун çинђен калама кунта вырăн çук. Кунта епир çакна çеç калатпăр: ђăваш халăхĕ пусмăрта пурăннипе вăл йурла йернĕ, çавăнпа хуçалăхне малалла йама пултарайман, çав пусмăра пулах тĕнђерен йутшăнса пурăннă — унăн хуçалăхĕ хăне тутă тытма, хăйĕн çине витме кирлĕ йапаласене çеç туса кăларма тăрăшнă. Çак пăрахçă йĕркене пăрахасах пулаĭ. Хресђен хуçалăхне хресђен хăй çеç çине тăрса ĕçлесен йусаса çирĕплетме пултараĭ, епир ăна çав ĕçе тума пулăшу кăна пама пултаратпăр. Çапла ђăнахах пулăшас тесен пирĕн çак йапаласене тумалла пулаĭ: Ђĕмпĕрти Йалхуçалăх Техникумне тĕп ђăваш техникумĕ, ђăнтан акрономсем кăларакан техникум тумалла, пыра киле вăл аслă шкула çавăрăнмалла, унтан Вăрнарти пек кĕçĕнрех техникумсем ђăвашсемшĕн ытти çĕрсенђе те уçмалла, йалхуçалăх кооператсине, йалхуçалăх панкисене, кивçенпаран йулташлăхсене ђăвашсен хушшинђе тĕреклĕлентерме тăрăшмалла. Çывăх çулсенђех ђăвашсемшĕн пĕрре те пулин уйрăм йалхуçалăх шурналĕ кăларса тăмалла тумалла. Пирĕн ђăваш хушшинђе халĕ çĕр ĕçĕн йурăхсăр виçпуслă йĕрке, çĕр ђăнтан пĕлĕнсе ĕçленмест, вăл имçампа çирĕпленмест, машина таврашпе ĕçленмест, йалхуçалăхĕн ђĕрĕ хатĕрĕсене йусакан промăшлĕнăç çуç—кĕскен каласан хуçалăх пирĕн пăђах нимĕне те йурăхсăр. Ђăнтан халăхсен шутне кĕрес тесен çав авалхи пусмăр ыйхинђен вăранса, çанăсене тавăрса епир хуçалăха ăслăлăх çулĕпе йама тăрăшмалла. Çав ĕçе тума хамăрăн вăй çитмесен патшалăхран пулăшу ыйтмалла, вăл пире пулăшатах, мĕшĕн тесен унăн влаçĕ ĕç халăхĕн аллинђе тăраĭ. Çакăнта мĕн суннине епир хăвăртах, ăна сасартăках тума пултараймăпăр, ăна вăрахăн та нумай асаппа та тăвăпăр, çавăнпа ăна пурне те хађех тума тапратас пулаĭ.

Пурлăх тĕлешĕнђен тата хисепсĕр нумай тăвас ĕçсем курăнса тăраççĕ, хăшĕ вĕсенђен питĕ пысăк ĕçсем, çапла Канаша Ђĕмпĕр-

пе, çав Канаша Шупашкарпах ҫукун çулпа çыхас ĕç пур, анҫах çав ĕçсем вуншар çул иртмесĕр пулаймĕç, çавăнпа вĕсен çинҫен халĕ каламасан та йурĕ.

**Политикка тĕлешĕпе.**

Çĕнĕ ҫаплă ҫăваш историйĕ ҫăвашсен ирĕклĕ тĕп çĕрĕнҫе пулса пыраҫ, унăн тымарĕ çав çĕршывра шăтса ӳссе тĕреклĕленет. Çавăнпа ахтономийе мĕн вăй çитнĕ таран упрама, ăна тĕреклĕлентерме кирлĕ. Вăл йе кирлĕ йе кирлĕ мар тенĕ сăмаха пăрахма вăхăт çитрĕ. Ахтономи пулни 4 çул кăна пулса иртрĕ—çапах та вăл хисепсĕр нумай ырлăх паҫĕ. Ахтономи айакра сапаланса пурăнакан ҫăвашсемшĕн те питĕ усăлă йапала—вăл ҫăваш хура халăхĕ те хăне хăй хуçа пулма пултарнине, хăй ирĕкĕпе хăй пурăнма пултарнине кăтартаҫ, çав ахтономийех Ҫĕмпĕрти ҫăваш шкулĕсене пулăшса упраса тăраҫ, пур тĕлте те сапаланса пурăнакан ҫăвашсен хутне кĕрсе пурăнаҫ. Оплăçра халĕ ҫăваш халăхĕн сурри çеç пурăнаҫ, çапах та вăл пур ҫăваш халăхĕшĕн те питĕ усăлă. Оплăçа аслăлатас пулаҫ, ун çумне ҫăвашсем пурăнкалакан Ҫĕмпĕрпе Самар кĕпĕрнисен уйесĕсене, унтан Тутар респупликкин хăш вулăсĕсене хушас та ăнă ҫăваш респупликкине çавăрас пулаҫ, çав респупликкăн пуçхули вырăнне Ҫĕмпĕре илес пулаҫ. Вара тин ҫăваш ахтономийĕ пурлăхпа тĕрĕстĕкел пурăнакан пулĕ, ҫăваш çĕрĕн варринҫе вырăн йышăнса тăрса вăл пĕтĕм ҫăваш халăхне те пулăшу парса тăрĕ. Унтан тĕрлĕ тĕлте сапаланса пурăнакан ҫăвашсене пĕрле пустарма майĕ пулсан уйрăм ҫăваш вулăсĕсем, уйесĕсем тăвас пулаҫ, çав уйрăм ҫăваш вулăсĕсем, районĕсем, уйесĕсем пĕрлешсе хăйсен ĕçĕсене хăйсем туса пурăнма тăрăшмалла, ытларах та кулҭурă ĕçне вĕсем хăйсем çеç ҫăнтан тĕрĕсрен тума пултараççĕ. Канаш ирĕкĕ тĕреклĕлентĕр тесен, хура халăх ăна ҫунпа парăнтăр тесен—патшалăх вырăнĕсенҫе ҫăваш хушшинҫе ҫăвашсемех йе ҫăвашла таса пĕлекен çынсем çеç пулмалла; çав вырăнсенҫе ҫăвашла калаçмалла, оплăçра çырма та ҫăвашла çырмалла, унта ҫăваш ҫĕлхи вырăс ҫĕлхипе тан хисепленмелле, вăл патшалăх ҫĕлхи вырăнĕнҫе пулмалла. Малашне тĕнҫе етемйышне пролетариат çавăтса пыраҫ, çав пролетариат пирĕн çитĕнсе çитеймен, çавăнпа канаш ирĕкĕ пирĕн çĕрте хăватлă пултăр тесен ҫăваш хапрăк-савăт пролетариатне пур йенҫен те ӳстерме тăрăшас пулаҫ, ҫăваш хушшинҫи пайтах йышлă çурма—пролетарисене: тара кĕрĕшсе ĕçлекенсене, патраксене,

йут çӗрсене ӗçе çӳрекенсене пӗрлешсе ђӑмӑртанма пулӑшас пулаӗ; çаплах йалсенђи йурлӑ хресђенсене пӗрлештерсе вӑйлӑлатас пулаӗ, вӑтам хресђенсемпе килӗшӳлӗ пурӑнса вӗсене пур йенђен те пулӑшу парса тӑрас пулаӗ. Вара тин ђӑвашсен хӑйсен çӗрӗнђе хӑйсен ирӗкӗпе пурӑнмалли йӗрке тӗреклӗ те шанђӑклӑ та пулӗ.

**Куђтурӑ тӗлешӗпе.** В. И. Ленин каласа хӑварнӑ: „натсилӗ куђтурӑ вӑл улпутсен, пупсен, пуршуаçийӗн куђтурӗ" тенӗ. Апла пулсан пирӗн саманара куђтурӑ çинђен калаçни килӗшӳлех-ши вара? Вӑл килӗшӳлӗ те питех те кирлӗ те. Йул. Ленин çапла пуршуаслӑ куђтурӑ çинђен каланӑ. Çав куђтурӑ пӑсӑк сийенлӗ çулпа пынине малта çителӗклӗ нумай каласаттӑмӑр—çав куђтурӑн пӑсӑкӗ—кашни халӑха уйрӑм хупӑпа хупласа тӑма тӑрӑшни, пӗр халӑхран тепӗр халӑха сивӗнтерсе пурӑнтарма тӑрӑшни, кашни халӑхшӑн уйрӑм натсилӗ патшалӑх туса ытти имшеркерех халӑхсене пусмӑрласа пурӑнма тӑрӑшни, ӗмӗрсем тӑршӗпе мӗн етем астӑвасса халӑха халӑхпа вӑрçтарса-çапӑçтарса çӗр çине шӑнӑçми йун тӑкни. Çапла кашни халӑхшӑн уйрӑм натсилӗ куђтурӑ туса пуршуаçи ӗç халӑхне, хресђене илӗртсе улталаса пурӑннӑ, унӑн тӑнпуçне пӑтратса аташтарса пурӑннӑ. Çапла натсилӗ куђтурӑ капиталисӑма пулӑшу парса, ӑна тӗреклӗлентерсе тӑнӑ. Тӳрех паллӑ-ун пек куђтурӑ кирлӗ мар пире. Пире ӗç халӑхӗшӗн усӑлӑ, пролетариат çулӗпе пыракан куђтурӑ кирлӗ. Çав çул ӗç халӑхӗн интернатсионаллӑ пӗрлешӗвӗн çулӗ. Çавӑнпа пур тӗнђери халӑхсен те пӗр куђтурлӑ сулӑнӑç, пӗр туртӑм пулмалла—вӑл малашне ђӗнђере пӗр куђтурӑлӑ пӗр етемйыш пулас вӑхӑтӑ çывӑхартарасшӑн тӑрӑшмалла. Анђах апла пулсан—пирӗн саманарах уйрӑм халӑхсем хӑйсен авалран йулнӑ куђтурне пӑрахса пӗр цӗринђен йут куђтурӑсене йышӑнма çеç тӑрӑшмалла мар-ши? Ђӑвашсен тӗлешӗпе каласан—вӗсем хӑйсен ђӗлхине пӑрахçа кӑларса, сӑмахне, йуррине, такмакне, вӑйисене пӑрахçа кӑларса тӳрех вырӑсланма тӑрӑшмалла мар-ши? Çапла ыйтни вырӑнӑçлӑ сӑмах, вӑл пирӗн хушшӑмӑрта ђасах илтӗнекен сӑмах. Анђах çав сӑмах йунӑш сӑмах, çав шухӑш йунӑш шухӑш. Ђи малтан пролетариат куђтурӑ тесе мӗн çинђен калаӗ? Вӑл ђӗлхе куђтурӗ çинђен кӑна, ђӗлхепе çыхӑнса тӑракан шкул ӗçӗ çинђен, ӑслӑлӑх çинђен, çырулӑх çинђен, илемӗш çинђен калаӗ. Çав куђтура вӑхӑтлӑх саманинђе кашни пролетариат пуринђен ытла хӑй пуршуаçинђен йышӑнса йулаӗ, ӑна

пăсăк сулăнăçсемпе йурăхсăр йухăмсенҫен тасатса хăй çулĕпе йарса малалла аталантарма тăрăшаҫ, çавăнпа вырăс пролетариаҫĕ халĕ вырăс пролетарлă куҫтурă тăвассищĕн, нимĕç пролетариаҫĕ нимĕç пролетарлă куҫтурă тăвасшăн кĕрешет. Халĕ ҫăнтан интернатсионаллă ҫĕлхе те çук, хăш ҫĕлхе çĕр ҫăмăрĕ çинҫе пĕртен пĕр ҫĕлхе вырăнне йышăнассине те пĕлместпĕр. Çавăнпа тĕнҫери халăхсен ҫи хăватлă, ҫи ҫаплă пролетариаҫĕсен хушшинҫе тăван ҫĕлхелĕ куҫтурăран тунасси çинҫен пĕр сăмах та илтĕнмест. Анҫах апла пулсан епир мĕншĕн йаланах çак сăмаха хамăр хушшăмăрта илтетпĕр-ши? Епир ăна хамăр наҫарлăхпа, хамăр ĕçсемпе пурăнăç йурăхсăрипе калатпăр, çак тĕлешĕнҫен „аптăрана кăвакал кутăн ҫăмнă" тене авалхи симах питĕ тĕрĕс. Ҫăваш халăхне тĕнҫе çулĕ çине кăларас тесен ҫăваш ҫĕлхи, çырăвĕ, ăслăлăхĕ, искуств урлă çеç кăларма пулаҫ. Мĕҫйунçурăлă халăха сасартăк вырăслантарма тĕнҫере халĕ нимĕнле вăй-хăват, нимĕнле мĕл те çук. Ĕмĕртен тĕттĕмре пăнҫăхса кăвакарса пурăннă ҫăваш хура халăхне малтан çырăва вĕрентес пулаҫ, ăна кĕнеке, хаçат, шурнал вулама хăнăхтарас пулаҫ, ăслăлăхран пĕлӳ шыранма илештерес пулаҫ, тĕнҫе илемĕшпе ҫуна йăпатса пурăнма вĕрентес пулаҫ, вара тин малашне хăçан та хăçан çутăланса çитсен вăл малалла мĕн тумаллине хăйех лайăх курĕ—тĕнҫери етемйыш çумне йе малтан вырăс куҫтурне йышăнса йе тӳрех урăх майпа çыпçăнĕ. Ҫăвашсем пурĕпĕр пĕтеççĕ тенĕ сăмах çăмăл калана сăмах: епир малтах каларăмăр—халăхсене интустрипе техникка çеç пĕрлештерсе пĕр халăха çаварăҫ, хресҫен халăхĕ историре нихăçан та çĕр çине пусăрăнса ларнăранпа хăй халăхлăхне çухатма пултарайман, хресҫен вăл кивĕ йенне, авал йенне туртăнса тăракан калама çук пысăк хăват, ăна интустрипе техниккăран пуçне нимĕнле çутçанталăк хăваҫĕ те кисрентерейместь. Хăçан ҫăваш çĕршывĕ хапрăк тĕтĕмĕпе витĕнсе тăрĕ, електрă вăйĕпе çуталса тăрĕ, ҫукунпа сывлăщ çулĕсемпе урлă-пирлĕ касăлса тăрĕ—çавăн ҫухне ҫăвашсем ҫăвашлăха çухатса пыннине курăпăр. Анҫах вăл хăçан пулĕ? Вăл вăхăтăн вĕçĕ паллах та мар, çавăнпа ун çинҫен сăмахламалла та мар. Унтан хăшĕ аптăрана йенне тĕплĕ шухăшламасăр ҫăвашсем вырăслансанах телейлĕ пурăнăçа кĕрсе ӳкĕç теççĕ. Анҫах пурăнăç ҫĕлхерен килмест, ҫĕлхе улăштарнипе, тум улăштарнипе пурăнăç лайăхланма пултараймаст. Вырăслансан та ҫăвашсем сасартăк Ҫулхула вырăсĕсем пек сатур,

ăслă, ĕсђен, таса халăх пулаймаççĕ, вĕсем пурĕпĕр трахомăпа, ђирђĕрпе йапăхнă вырăсланнă ђăвашсемех пулаççĕ. Вак халăхсем халех хăйсен ђĕлхине манмалла тени вăл малашне те вĕсене натсилĕ пусмăр айĕнђе тытассине пĕлтерет, ак мĕшĕн канаш ирĕкĕ пур ђуралă, колоњиаллă, пусмăрлă халăхсене мĕн вăй çитнĕ таран тăван ђĕлхе куђтурне аталантарма хушаť, ăна аслăлатма пулăшаť. Анђах кађђех хăшĕ калаççĕ—вак халăхсем хăйсен ђĕлхине çителĕклĕ çивђĕлетме пултараймĕç, ђăнтан литературă тума пултараймĕç теççĕ. Çак суйа пуршуаслă вĕрентў—ăна вак имперке халăхсене ĕмĕрне пусмăрта тытас хайлапа çеç кăларнă. Ђăваш хура халăхĕ хăй вăйĕпе калама çук хăватлă сăмах туйаннă, хăй ђĕлхине 700—800 çулхи пусмăрта та çухатман, халĕ ирĕке тухсан мĕнле йĕркепе вăл ђĕлхесĕр њимуй халăх пулса тăтăр?

Куђтура тĕлешĕпе çывăх çулсенђе пирĕн умра çапла тăвас ĕçсем куранса тăраççĕ: шкул ĕçĕпе: 1) кашни ђăваш йалĕнђе пĕрре те пулин пĕр сыпăклă шкул пулмалла, шкул ĕçĕпе епир таврари вырăссенђен кайра пыратпăр, çав йĕркерен хăтăлмалла; пирĕн ĕмĕрте ђăваш хушшинђе çыру пĕлмен çын йулмалла мар; 2) ђăваш тавринђи аслăрах шкулсенђе тивĕçлĕпе ђи малтан ђăвашсене вĕрентме тăрăшмалла; 3) Раççейри аслă шкулсенђе ђăвашсем йалан хăйсене тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăрса çителĕклĕ йышлăн вĕренмелле, 4) Ђĕмпĕр шкулне канаш ирĕкĕ ђăваш хура халăхне ĕмĕрлĕхе пиллесе панă — ăна ђăваш аслă шкулне çавăрма мĕн вăй çитнĕ таран тăрăшмалла; ђĕлхе тĕлешепе; 1) пĕр сыпăклă шкулсенђе, сутра, патшалăх вырăнĕсенђе ђăвашла калаçса çырса ĕçлемелли йăлана йышăнмалла; 2) ђăваш хаçађĕпе ђăваш шурналне ђăнахах хура халăх вуласа илешсе çеç сутăланма пултарнине пĕлсе мĕн вăй çитнĕ таран аслăлатма кирлĕ, çывăх çулсенђе пире пĕр хаçатпа пĕр шурнал та çителĕклĕ; 3) ђăвашла кĕнеке çапас ĕçе пĕрле ђăмăртаса мĕн вăй çитнĕ таран аслăлатмалла—пирĕн умра хисепсĕр нумай шкулра вĕренмелли кĕнекесем, хуçалăх кĕнекисем, политикă кĕнекисем, халăх йуррисене, халлапĕсене, такмакĕсене пуçтарса çапнă кĕнекесем, пур вырăссен те ытти тĕнђери те классиксемпе тĕп ăслăлăхçăсен кĕнекисене куçарса çапса кăлармалли ĕçсем курăнса тăраççĕ; çак ĕçпех ăслăлăх ĕçĕ çыхăнса тăраť: ђăваш шкулне, ђăваш ђĕлхине аталантарма ђăваш халăхĕ çинђен тĕплесе пĕлекен ăслăлăх çеç пултараť, çак йенђен çывăх çулсенђе мĕн тăрсан та ђи малтан: 1) Ђĕмпĕр шкулне

ҫăваш аслă шкулне ҫавăрса унта ҫăвашсенҫен куҫтурă ăслăлăхҫисене: ҫĕлхеҫĕсене, тăван ҫĕршыва пĕлекен историҫĕсене, естествоветсене (ҫутҫанталăкҫăсене), муҫейҫĕсене, илемĕшҫĕсене (ҫăваш искусствине пĕлекенсене), ҫăвашла аслăрах шкулсенҫе вĕренме хатĕрленекен вĕрентÿҫĕсене хатĕрлес пулаĭ, 2) ҫăваш Ăслăлăх Ушкăнне пулăшу парса тăрса унăн пайĕсене пур уйессемпе вулăссенҫе те уҫас пулаĭ, 3) ҫак ҫулсенҫех Н. И. Ашмарин ҫăвашла, вырăсла, латинла ҫырнă сăмахпуххине пиҫетлес пулаĭ, 4) пур вырăс йе ытти йут халăхсен ҫĕлхипе ҫăваш ҫинҫен ҫырнă кĕнекесене тĕплесе пĕлсе ҫăвашла куҫарса йе кĕскетсе те пулин каласа пиҫетлес пулаĭ, 5) ҫăваш ăслăлăхҫисене вырăс аслă шкулĕсене, унтан ытти патшалăхсенҫи шкулсене вĕренсе ҫивҫĕленме кайма пулăшас пулаĭ; и л е м ĕ ш т ĕ л е ш ĕ п е ҫи малтан: 1) Шупашкар театăрне пĕтĕм ҫăваш халăхĕн тĕп театăрĕ вырăнне хурас пулаĭ, ăна пур ҫăваш тĕнҫи тăрăх вăйă кăтартса йалан пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куҫса ҫÿремелли театр тăвас пулаĭ, 2) пур вулăссенҫе те йалан театăр вăйи выҫакан ушкăнсем пулмалла, 3) Шупашкарта кĕсле, купăс, ытти мусăкă инструменҫĕсем тăвакан шкул—мастерскуй уҫас пулаĭ, 4) йалсенҫе, вулăссенҫе, уйессенҫе ҫăваш хорĕсем пулмалла, 5) Шупашкарти мусăк шкулне пĕтĕм ҫăваш халăхĕшĕн ҫăваш шкулĕ тумалла—вăл халĕ вырăс шкулĕ; 6) ҫăваш оплăҫĕнҫе кĕҫĕн те пулин пĕр сăрлакан-тĕрлекен шкул-мастерскуй уҫмалла; 7) авалхи илемсене пуҫтарса сыхлама Ҫĕмпĕрпе Шупашкарти тĕп муҫейсене мула шеллемесĕр ҫăнтан муҫейсем тумалла; 8) ҫăваш хĕрарамĕсем илемлĕ тĕрĕсем тăвас йăлана тата ÿстерсе тĕреклĕлентерсе тĕрĕсене йут ҫĕрсене сутса тупăш илес мелсене шыранмалла, 9) ҫăваш алăстисене рынокра аван хакпа йÿнеҫекен илемлĕ йапаласем тума хăнăхтармалла; п у р ă н ă ç с ă н ĕ п е й ă л а с е н е улăштарас тĕлешĕпе те пирĕн пите хĕрÿлĕ ĕҫлемелли ĕҫсем курăнса тăраҫҫĕ: пире хамăрă хамăрăн авалран йулнă йăласемех ирĕклĕренех йалан пусмăрлăх айне сĕтĕрсе тăраҫҫĕ, ҫавăнпа ҫав йăласенҫен халăхă йепле те пулин пистерме тăрăшас пулаĭ: пирĕн хушшăмăрта хĕрарăма пусмăрласа пурăнас йĕркесем: вăрласа авланас, арăма хулăн парса илес, арăмсене сурпанпа хупласа килҫуртра уйрăм пусмăрта тытас йĕркесем халиҫҫенех паллă; унтан пирĕн хушшăмăрта йумҫă—вĕрÿҫĕсен ултавĕ, пупсен ултавĕ халĕ те хăватлă, ҫав ултав мĕн сăлтавпа пулнине, мĕшĕн вăл халиҫҫенех халăх ҫунне парăнтарса пурăннине пĕлес

тесен халӑх йӑлисене, ӗненӗвӗсене тӗплесе пӗлсе вӗсен йунӑшне кӑтартас пулат̆; пирӗн пурӑнӑҫри йурӑхсӑрлӑхсене пурне те каласа та пӗтерме ҫук: т̧ӑвашсем таса мар пурӑнаҫҫӗ, пур хатӗртен те техӗмлӗ ҫимӗҫ хатӗрлеме те пӗлеймеҫҫӗ, пӗлменлӗхпе т̧ирт̧ӗрпе аптӑраҫҫӗ (ҫывӑх ҫулсент̧ех оплӑҫра т̧ӑваш хвершӑлӗсемпе акушеркӑсене хатӗрлекен шкул уҫмалла, уйрӑм пӗрре те пулин куҫ пуԓнитси уҫмалла), йурӑхсӑр ӗҫкӗ-ҫикӗ туса тӑкакланаҫҫӗ, килте ерех-сӑра туса ытлашши ӗҫеҫҫӗ—нумай ытти те сийенлӗ йапала тӑваҫҫӗ; ҫав сийенлӗ йӑласене т̧акарас пулат̆, пӗтерме тӑрӑшас пулат̆, вӗсен вырӑнне халӑх хушшинт̧е ӳтпӳшӗн те т̧унשӑн та усӑлӑ йӑласемпе вӑйӑсем: спектакԓсем, контсертсем, акатуйсем, кӗрешӳсем, ытти тӗрлӗ спорт вӑййисем, хорсем тума тӑрӑшас пулат̆.

Пролетариатӑн хӑйӗн револԓутсилӗ кӗрешӳ йуррит̧е ҫапла тӗрӗс сӑмахсем пур:

> Пире никам та ҫӑлас ҫук,
> Хӑтӑлас тесен хӑтӑлӑпӑр
> Хамӑр алӑпа ант̧ах.

Ҫак сӑмахсене пролетариатпа пӗрле пур пусмӑрлӑ халӑхсем те т̧ипер ӑнласа ӑша илмелле. Пусмӑрлӑ халӑхсен пусмӑртан хӑтӑласси мӗн т̧ухлӗ тӗнт̧ен пӗрлешӳлӗ пролетариатӗнт̧ен килет, ҫавӑн т̧ухлех пусмӑр сийенӗсент̧ен пӗтӗмпех хӑтӑласси вӗсент̧ен хӑйсент̧ен те килет. Ҫакна пӗлсе тӑрса епир, т̧ӑвашсем те, пусмӑр мухмӑрӗнт̧ен хамӑрах урӑлма, пусмӑр сӗрӗмне-сийенне хамӑр вӑйпах сирме тӑрӑшар.

2288

# ТУПМАЛЛИ.

## I-мӗш тапӑк.

Уйрӑм халӑхсем йе натсисем йепле пулса кайнӑ.


стр.

1. Класслӑ пусмӑр . . . . . . . . . . . . . . . . 3—5
2. Натсилӗ пусмӑр . . . . . . . . . . . . . . . . 5—6
3. Халӑх йе натси тени мӗне пӗлтерни . . . . . . . . 6—11
4. Халӑхсем мӗнле пулса кайни ҫинҫен: . . . . . . . 11—24
   а) кӗтӳлӗ пурӑнӑҫ самани . . . . . . . . . . 11—12
   н) ӑрулӑ пурӑнӑҫ йӗрки . . . . . . . . . . . 12—14
   у) етемсем племесемпе, территорилӗ—сословилӗ йӗркепе пурӑннӑ самана . . . . . . . . . . 14—18
   ш) капиталисӑм, натсисем, натсилӗ патшалӑхсем . . 18—24


## II-мӗш тапӑк.

Пӗр халӑха тепӗр халӑх пусмӑрлас йӗрке мӗнле тухса кайнӑ.


1. Нумай халӑхсене тытса тӑракан патшалӑхсем . . . 25—27
2. Нумай халӑхлӑ патшалӑхсенҫи натсисемпе классем . 27—28
3. Капиталисӑм халӑхпа халӑха пӑтратса пыни . . . . 28—29
4. Нумай халӑхпа патшалӑхсенҫе капиталисӑм халӑхпа халӑх хушшинҫе хирӗҫлӗхсем кӑларни . . . . . . . 29—30
5. Нумай халӑхлӑ, улпутлӑ-пуршуаслӑ патшалӑхсенҫе натсилӗ хирӗҫлӗхсем пӗтейменни . . . . . . . . . 30—31
6. Империалисӑм натсилӗ пусмӑрӑн тӗп аслӑ,—ҫи хӑрушӑ сийенлӗ тымарӗ . . . . . . . . . . . . . . . 31—34

7. Тĕнҫене пусмăрлă колоњисене уйăрни . . . . . . . 34—35
8. Капиталисăм кайа йулнă ҫĕрсене хăй хыҫҫăн мĕнле мелпе сĕтĕрсе пыни . . . . . . . . . . . . . . . . 35—38
9. Колоњисенҫи пурлăхпа тытăм йĕрки . . . . . . . . 38—43
10. Колоњисенҫи пусмăрлă халăхсем ĕмĕрхи ыйхăран йеррипен вăранса пыни . . . . . . . . . . . . . . 43—49

## III-мĕш татăк.

Пусмăрлă халăхсене пусмăртан ҫăнтан ирĕке пролетариат ҫеҫ кăларма пултарайĕ.

1. «Пĕтĕм тĕнҫери пролетарисем, пĕрлешĕр» . . . . . . 50—51
2. Истори хăйех халăхсене пĕрлештерсе пыни . . . . . 52—53
3. Халăхпа халăха йе пĕрлештерекен йе тата ытларах пĕр пĕринҫен йутшăнтаракан йĕрке . . . . . . . 53—58
4. Натсилĕ пусмăрпа пролетариат империалисăмлă вăрҫăҫҫен йепле кĕрешнĕ . . . . . . . . . . . . . 58—65
5. Пусмăрлă халăхсен вăрҫăпа револуутси вăхăтĕнҫи суйа тусĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 65—70
6. Пусмăрлă халăхсемшĕн Р. К. П. мĕн туни ҫинҫен . . 70—76

## IV-мĕш татăк (вĕҫĕ).

Авалхи пусмăртан йулнă сийенсене пĕтерес тесен ҫăвашсен малашне мĕн тумалла.

1. Пусмăр сĕрĕмĕ хăвăрт сирĕлеймĕ . . . . . . . . . 77—78
2. Ҫăвашсене натсилĕ пусмăр хăҫан, унтан мĕнле майпа лăскама тытăннă . . . . . . . . . . . . . . . . 78—84
3. Капиталисăм саманинҫи пусмăрлăх . . . . . . . . 84—85
4. Ҫăвашсем халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешни . . . . . . 85—89
5. Ĕлĕкхи пусмăр сĕрĕмне пĕтĕмпех сĕвĕрĕлтерсе пĕтерес тесен пирĕн малашне тумалли паллă ĕҫсем . . . . 89—97
а) пурлăх тĕлешĕпе . . . . . . . . . . . . . . . 89—92
н) политиккă телешĕпе . . . . . . . . . . . . . 92—93
у) куҫтурă тĕлешĕпе . . . . . . . . . . . . . . . 93—97

ХАКӖ 50 ПУС.

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ С.С.С.Р.